5086 52-69

Н. ЦВЕТКОВ

# КĂТАШ ЯЛ СОВЕЧĔН ĔҪРИ ОПЫЧĔ

*ЧĂВАШГОСИЗДАТ*
*Шупашкар — 1952*

*Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!*

Н. ЦВЕТКОВ

# КĂТАШ ЯЛ СОВЕЧӖН ӖҪРИ ОПЫЧӖ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
... Чувашской АССР

*ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ*

*ШУПАШКАР — 1952*

Обязательный экз.-пляр
доставлен
Чувашской Книжной Палате
19 мая 1952 г.
№ 114

*Çак кĕнекене Етĕрне районĕнчи Кăташ ял Совечĕн председателĕ Николай Дмитриевич Цветков юлташ çырнă. Кĕнекере вăл хăй ĕçлекен ял Совечĕн, ял Совет депутачĕсен тата ялти активăн ĕçĕсем çинчен каласа парать.*

---

Советсем вӗсем — хулари тата ялти мӗнпур ӗҫҫыннисен массӑллӑ организацийӗ пулса тӑраҫҫӗ. Советсем ӗҫҫыннисен анлӑ массисене коммунизмлӑ общество тума мобилизацилеҫҫӗ, вӗсене хамӑрӑн юратнӑ коммунистсен партипе ҫыхӑнтарса тӑраҫҫӗ.

Совет влаҫӗ туса хунӑ хыҫҫӑн темиҫе кун иртсен В. И. Ленин пирӗн тӑван ҫӗршыври рабочисене ҫапла чӗнсе каланӑ: «Юлташсем — ӗҫҫыннисем! Асра тытӑр, халӗ эсир государствӑна хӑвӑр тытса тӑратӑр... Сирӗн Советсем — паянтан вара государство влаҫӗн органӗсем, полномочиллӗ, ӗҫе татса паракан органсем пулса тӑраҫҫӗ»[1].

Пирӗн пур ҫӗрте те — кашни хулара, ялта, районта, облаҫра, крайра, республикӑра — ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсем пур. Вырӑнти Советсене облаҫри, районти, ялти пӗтӗм хуҫалӑхлӑ тата культурӑллӑ пурнӑҫа ертсе пырас тӗлӗшпе анлӑ правӑсем панӑ.

Ял Совечӗсен ӗҫне лайӑх йӗркелени, вӗсем тавра ялти актива пӗтӗҫтерни, Советсем умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлама май парать.

Ку брошюрӑра Етӗрне районӗнчи Ҫӑташ ял Совечӗн ӗҫри опычӗ ҫинчен ҫырса панӑ.

Ҫак ял Совечӗн территорине Ҫӑташ, Пушнар, Алексеевка ялӗсем тата Пролетари поселокӗпе Сучково вӑрман поселокӗ кӗреҫҫӗ. Вӗсенче 1500 ҫынна яхӑн халӑх пурӑнать. Территори вӑрманлӑ, ҫырма-ҫатраллӑ. Ҫолхозсен уй-хирӗсемпе улӑх-ҫаранӗсем вӑрмансем хӗррипе вырнаҫса тухнӑ. Мичурин ячӗпе тӑракан колхозӑн уй-

[1] В. И. Ленин, Сочиненисем, 26 том, 216 стр.

хирне, çаранĕсене пур енчен те вĕтĕ вăрмансем хупăрласа илнĕ. «Большевик» колхозăн пысăк улăхĕ Сăр шывĕ тăрăх темиçе километра яхăн тăсăлса выртать. Улăхăн çурçĕрпе хĕвелтухăç енне çӳлĕ ту айккипе çитĕннĕ вăрман хупласа тăрать.

Ял Совечĕн территорийĕ 2583 гектар çĕр йышăнать. Çырма-çатрасем 468 гектар çĕр лаптăкĕ йышăнса выртаççĕ. Ялсене пĕр-пĕринчен пысăк çырмасем уйăрса тăраççĕ. Ялсем те çырма-çатраллă çĕре вырнаçнă. Территори çырма-çатраллине пула ялсем пĕрисем питĕ çӳлĕ вырăна, теприсем айлăма вырнаçнă. Пушнар ялĕ районти чи çӳлĕ вырăнта, унпа юнашар ларакан Кăташ ялĕ чи аял вырăнта ларать.

Çырмасем нумаййине пула уй-хирсем те тикĕс мар. Тӳрем уйсем питех те сахал.

Революцичченхи хресченсем кунти кĕллĕ çĕрсем çинче сухапуçĕсемпе тăрмакласа ĕçленĕ пирки тухăçлă тырпул туса илесси çинчен шутлама та пултарайман. Лайăхрах çĕрсем ялсенчи пуянсен аллинче пулнă. Тăм хысисемпе чуллă анасем çинчен чухăн çынсем пĕрер пĕрчĕн пухса илнĕ тырă-пулă хĕле кĕме те çитеймен, сĕтел çинче çăкăр-тăвар çителĕклине курман вĕсем. Ялăн пĕр хĕрринчен пуçласа тепĕр хĕррине çитиччен пĕчĕк, хура пӳртсем ларса тухнă. Хĕллехи шартлама сивĕре пӳрт кĕтессисенчен уласа çил вĕрнĕ. Вăйлă çил-тăвăлсенче пӳрт тăррисене çил шăлса вĕçтернĕ. Çумăрлă çанталăкра шăтăк-çурăксенчен шăпăртаттарса çумăр шывĕ аннă. Нумайăшĕн кил-çурчĕсем те пулман.

Культура саракан учрежденисем ялсенче пулман. Хресченсем каçсерен ялсенчи хурал пӳрчĕсене пухăнса хăйсен нушаллă пурнăçĕ çинчен юмахласа ларнă. Хута пĕтĕм ялĕпе те 5—6 çын çеç пĕлнĕ. Вĕсем те кулаксемпе пуп тавраш̆ĕсем кăна пулнă.

Октябрьти Аслă социализмлă революци чухăнлăх сăнчăрне татса ывăтрĕ, ĕçхалăхне ирĕклĕх пачĕ. Октябрьти

Аслă социализмлă революци пулнă хыççăн ялсен сăнсăпачĕ палламалла мар улшăнчĕ. Паянхи ялсем — çĕнĕ, колхозлă ялсем. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнаççĕ, уй-хирсенче сухапуççемпе çурласем вырăнне тракторсем, хăй тĕллĕн çӳрекен комбайнсем ĕçлеççĕ. Кашни ялтах клуб пур. Пĕтĕм колхозниксем савăнăçлă та тухăçлă ĕç хыççăн клуба пухăнса канаççĕ, савăнаççĕ, драмкружок лартакан спектакльсене кураççĕ, концертсем итлеççĕ, кинокартинăсем пăхаççĕ. Кунтах тĕрлĕ кружоксем ĕçлеççĕ, колхозниксем агротехникăна вĕренеççĕ, докладсемпе лекцисем итлеççĕ.

Ялсенче куллен çĕнĕрен çĕнĕ çуртсем ӳссе лараççĕ, яла илемлетеççĕ. Пушнар ялĕн пĕр кĕтессинче клуб, депо—унпа юнашар колхозăн пĕр çĕре пухса лартнă икĕ хутлă амбарĕсем. Унтах колхозăн çăнăх авăртса пысăк тупăш паракан, пăспа ĕçлекен двигатель, тырă типĕтмелли сушилка. Кăçал колхоз стандартлă сысна вити, радиоузел лартать.

Кăташра та çĕнĕ стройкăсем нумай. Ялăн виçĕ çырми пĕрлешнĕ çĕрте колхозăн аслă клубĕ. Унта ял Совечĕ, колхоз правленийĕ, библиотека вырнаçнă, 300 çын вырнаçмалăх зал пур. Çырмасем хĕррипе выльăх-чĕрлĕх фермисем вырнаçса тухнă. 12 гектар çинче колхозăн сачĕ ешерет. Унта тĕрлĕ йышши улмуççисем, сливăсемпе вишнисем ӳсеççĕ. Кăçал колхоз стандартлă депо тума тытăнчĕ.

Ял Совет территоринче икĕ пуçламăш шкул тата çичĕ çул вĕренмелли шкул пур. Вĕсенче 230 ача вĕренет. Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчи тĕрлĕ шкулсемпе техникумсенче, аслă шкулсенче 60 çын ытла вĕренет. Совет влаçĕ пулнăранпа ял Советне кĕрекен ялсенче 120 çынна яхăн вăтам тата аслă шкулсем пĕтерсе тухнă, 100 çынна яхăн учительсем, инженерсемпе техниксем, медицина работникĕсем, Совет Çарĕн офицерĕсем пулса ĕçлеççĕ. Ял Советĕнчи 250 çын хăйсен пархатарлă ĕçĕпе Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Ял ĕçченĕ-

сен пĕтĕмĕшле культури вăйлă аталанса пычĕ. Вĕсем çĕрĕç культурине ӳстерсе пырса тухăçлă тырпул ăстисем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсем пулса тăчĕç.

Колхозсем вăйланса пынă май колхозниксен пурнăçĕ те лайăхланса, культурăланса пырать. Ĕлĕкхи йăтăнса анас пек ларакан хура пӳртсем вырăнне халĕ çĕнĕ те çутă пӳртсем туса лартрĕç, урамсенче йĕркипе лартса тухнă йывăçсем çитĕнеççĕ. Çак юлашки виçĕ çул хушшинче кăна 34 колхозник çĕнĕ пӳртсем лартнă, 15 колхозник лампăллă, 67 колхозник детекторлă радиоприемниксем туяннă. Ялсенчи колхозниксен килĕсенче халĕ 71 сăмавар, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем 98, велосипедсем 42, мотоциклсем 4, пĕр çăмăл автомашина, хут купăссем 25, патефонсем 22 тата ытти те пур. Нумай колхозниксен килĕсенче хăйсен библиотекисем пур. Ĕлĕкхи ял хресченĕсене тĕрлĕ чир-чĕрсем, уйрăммăнах трахома чирĕ асаплантарнă. Халĕ, ялта медицина пунктне уçнăранпа, трахома чирĕпе кĕрешес ĕç ăнăçлăн пулса пырать.

Кĕрсе тухма май çук çырмасене чул сарса лайăх çулсем тунă.

Колхозсене вăйланма пулăшас, ĕççыннисен пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пырас, вĕсен культурине ӳстерес ĕçре ял Совечĕпе унăн депутачĕсем пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Малалла эпир ял Совечĕпе унăн депутачĕсем мĕнле ĕçлени, ял Советĕнчи ĕçе мĕнле йĕркелесе туса пыни çинчен çырса парăпăр.

## ЯЛ СОВЕЧĔН ДЕПУТАЧĔСЕМ

Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче, 1937 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче, пирĕн аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ депутатсем—халăх тарçисем—епле пулмалли çинчен питĕ лайăх кăтартса пачĕ.

«Суйлавçăсен, халăхăн хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмалла: депутатсем хăйсен задачисен çӳлĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăллă обывательсен картне анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăллă деятельсен вырăнĕнче тăччăр, вĕсем, Ленин пекех, яр уçă та паллă деятельсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех, кĕрешӳре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр, вĕсем ĕç йывăрланма пуçласан, кирек мĕнле хăраса ӳкесрен те, кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те Ленин пекех, ирĕклĕ пулччăр, пысăк ыйтусене татса панă чухне, пур енлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур енчен те учета илмелле çĕрте, вĕсем, Ленин пекех, ăслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр, вĕсем, Ленин пекех, тĕрĕс те тӳрĕ кăмăллă пулччăр, вĕсем хăйсен халăхне, ăна Ленин юратнă пекех, юратчăр»[1]—терĕ Сталин юлташ.

Сталин юлташăн çак ăслă сăмахĕсене пирĕн ял Совечĕн депутачĕсем яланах чĕрере тытаççĕ, хамăр Тăван çĕршывшăн, хамăр халăхшăн тăрăшса ĕçлеме пулаççĕ.

Иртнĕ суйлавра ял Советне 14 депутат суйланă. Суйлавçăсем ял Совечĕн депутачĕсем пулма пултаруллă та ĕçре пиçĕхнĕ, шанчăклă çынсене суйларĕç. Вĕсем тĕрлĕ профессиллĕ, тĕрлĕ çулсенчи çынсем—партипе совет работникĕсем, колхоз председателĕсемпе ĕçре палăрнă колхозниксем, учительсем, культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче, ялти медицина пунктĕнче ĕçлекен çынсем.

---

[1] И. Сталин, Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче каланă сăмахсем, 10 стр. Чăваш АССР государство издательстви, 1950.

56 çулхи ватă колхознике, Иван Дмитриевич Дмитриев юлташа, ял Советне виççĕмĕш хут депутата суйларĕç. Вăл вырăнти Советсен 1947 çулхи суйлавĕнчен ку тарана çитичченех ял Совечĕн ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ пулса ĕçлет. Ватăлăха пăхса тăни çук унăн. Ăна яланах хирте, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте курма пулать. Ĕçре яланах малти ретре тăрса вăл ытти колхозниксене те хăй пек лайăх ĕçлеме мобилизацилет, хавхалантарса пырать. Хăй ĕçлекен колхозра анчах мар, ялхуçалăх комисси председателĕ пулнă май вăл ял Советĕнчи «Большевик» колхоз хирĕсенче те час-часах пулать: çитменлĕхсене кăтартать, вĕсене мĕнле пĕтермелли майсене тупса парать. Çавăнпа ăна суйлавçăсем хисеплеççĕ, мухтаççĕ.

Я. З. Захаров та ял Советне виççĕмĕш хут суйланчĕ. Вăл та халăх хушшинче, халăх ĕçĕнче писĕхнĕ çын. Вырăнти Советсен иккĕмĕш созывĕнчи суйлавран варах ял Совечĕн финанспа бюджет комиссийĕн председателĕ пулса ĕçлет. Вăл ял Советне укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас, ял бюджетне пурнăçлас ĕçре пысăк пулăшу парать. Кашни уйăхрах укçа-тенкĕ пухмалли план, ял бюджечĕ мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăрать.

Матрена Федоровна 55 çулта ĕнтĕ. 30 çул хушши вăл учительница пулса ĕçлет. 1933 çултанпа ял Советне кĕрекен Пушнар ялĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕрентет. Шкулта тăрăшса ĕçленисĕр пуçне вăл обществăллă ĕçре те, колхозра та пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. 1941 çултанпа вăл ял Совечĕн заем уполномоченнăйĕ, ял Совечĕн иккĕмĕш созывĕнчен варах культурăпа çутĕç комиссийĕн председателĕ. Пур ĕçре те вăл хăй ĕçлеме пултарнине палăртать, пушă вăхăтсенче колхоз ĕçне хутшăнать. Вăрçă çулĕсенче лайăх ĕçленĕшĕн правительство ăна «Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хастарлă ĕçленĕшĕн» медаль, шкулта нумай вăхăт хушши ĕçленĕшĕн «Хисеп палли» орден парса наградăланă.

П. Т. Корольков юлташ вăрçăччен хи çулсенче вăрманта юман каснă. Çав хушăрах хăйĕн вăрман ĕçĕнчи пĕлӳлĕхне те пĕрмаях ӳстерсе пынă, вăрман ĕçĕн мастерĕ пулса тăнă. Çак ĕçрен вăл Тăван çĕршыва тăшманран сыхлама кайнă. Аманса таврăннă хыççăн вăл каллех вăрман мастерĕ пулса ĕçленĕ. Вăл вăрман пункчĕн мастерĕсенчен чи палли пулса тăнă. Унăн участокĕнче ĕçлекен рабочисем ăна яланах хисеплесе мухтанă, мĕншĕн тесен

Паисий Тимофеевич Корольков вăрманта ĕçлекенсене вĕрентсе, пулăшса пынă. Вăл мастер пулса ĕçлекен участок яланах малта пынă. Халĕ вăл Приволжски вăрманпромхозĕнчи Етĕрне вăрман пункчĕн начальникĕ пулса ĕçлет. Ку вăрман пункчĕ — Приволжски вăрманпромхозĕнчи лайăх ĕçлекен вăрман пункчĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăрман пунктĕнчи рабочисем малтан та ял Совечĕн депутачĕ пулнă П. Т. Корольков юлташа каллех пĕр саслăн депутата суйларĕç.

Н. И. Иванов юлташ чылай çулсем хушши ВКП(б) райкомĕнче ĕçленĕ. «Пионер» тата «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозсем пĕрлешсе «Большевик» колхоз тунă хыççăн, ăна колхоз председателĕ пулса ĕçлеме суйланă. Вăл колхозăн обществăллă хуçалăхне тĕреклетсе вăйлатассишĕн тăрăшнине колхозниксем часах курчĕç. 1950 çулта, çанталăк условийĕсем начар пулчĕç пулин те, колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ, государство умĕнчи мĕнпур парăмсене срокчен парса татрĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарчĕ. Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май колхоз вăрман хатĕрлевĕнче, çуракине хатĕрленес енĕпе пысăк ĕçсем тунă. Суйлавçăсем пултаруллă руководителе ял Совечĕн депутачĕ пулма пĕр саслăн суйларĕç.

Колхоз хĕрĕсем К. Иванова тата Л. Савельева ĕçре яланах малта пыраççĕ. Вĕсене колхозри тĕрлĕ ĕçре курма пулать. Суха-сӳре тăваççĕ-и вĕсем, тырă вырса авăн çапнă çĕрте, государствăна тырă панă çĕрте ĕçлеççĕ-и— пур чухне те лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, çулсеренех 250—300-шер ĕçкунĕ тăваççĕ. 15—16 çулта чухнех çак çамрăк та паттăр хĕрсем «Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хастарлă ĕçленĕшĕн» медале илме тивĕçлĕ пулнă. Хăйсен колхозри пархатарлă ĕçĕпе вĕсем иртнĕ суйлавра ял Совечĕн депутачĕ пулма тивĕç илчĕç.

Ял Советне çĕнĕрен суйланнă депутатсем хушшинче Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. Токарев, çак колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Романов, медицина пунктĕнчи акушерка А. Андреева юлташсем пур. Депутатсем пурте ĕçре пиçнĕ, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсем. Вĕсем халăхпа тачă çыхăнса тăрса, халăхшăн пĕтĕм вăй-халне парса, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн ырми-канми ĕçлесе депутат ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Çак чыслă та хисеплĕ ята вĕсем ял Совечĕн нумай енлĕ ĕçне татса панă çĕре активлă хутшăннипе, пур ĕçре те

государствăн мĕнпур ответлăхне туйса ĕçленипе тӳрре кăлараççĕ.

Ял Совечĕн депутачĕсенчен иккĕшĕ район Совечĕн депутачĕсем.

Ял Совечĕн депутачĕсем ĕçре кăна мар, вĕренӳре те хăйсем пултарнине кăтартса параççĕ. Акă, ял Совечĕн секретарĕ В. Васильев юлташ бухгалтерсен курсĕнчен заочно вĕренсе тухрĕ, М. Иванов юлташ библиотека техникумĕнче заочно вĕренет. Депутатсем пурте хăйсен политикăллă пĕлӳлĕхне хăпартма политшкулсемпе кружоксенче вĕренеççĕ. Çакă вĕсене депутат обязанноçне чыслăн пурнăçлама пулăшать.

## ЯЛ СОВЕЧĔН ĔÇ ПЛАНĔ

Ял Совечĕ умĕнче тăракан пĕтĕм ĕçсене планпа туса пырсан, вĕсене вăхăтра пурнăçлама пулать, çав ĕçсем пĕр тикĕс пулса пыраççĕ. Тĕплĕ шухăшласа тунă план ял Совечĕпе унăн исполкомне малашне мĕнле ĕçсем тумаллине яр уççăн кăтартса парать. Çакна шута илсе пирĕн ял Совечĕ кашни квартал валлиех ĕç планĕ туса хатĕрлет.

План тунă чухне, чи малтанах, ĕçе планлама пăхнă тапхăрăн тĕп тĕллевĕсене палăртатпăр. Большевиксен партийĕпе Совет правительстви кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама халăх вăйне ăçта ытларах мобилизацилемеллине, çӳлте тăракан организацисен кăтартăвĕсемпе решенийĕсене, суйлавçăсен наказĕсене, ял пурнăçĕ кăларса тăракан ыйтусене шута илетпĕр.

Ял Совечĕсем умĕнче тăракан тĕп задача вăл — колхозсене тухăçлă тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе вĕсен продуктивнăçне ӳстерме пулăшса пырасси пулать. Большевиксен партийĕ колхоз хресченĕсен пĕтĕм вăйне çак ĕçсене татса панă çĕре мобилизацилеме хушать. Кăçалхи иккĕмĕш квартал планне (апрель—июнь) тунă чухне ял Совечĕ колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине, çураки ĕçĕсем мĕнле пынине, акнă тырăсене пăхса çитĕнтерес, уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçсем мĕнле тăнине тĕтăшах тĕрĕслесе тăрса, ял Совет исполкомĕнче е сессисенче сӳтсе явма пăхнă. Çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтусене те тăтăшах пăхса тухма палăртнă. Квартал хушшинчи сессисенче, ял Совет исполкомĕн ларăвĕсенче ялхуçалăх ыйтăвĕсене 11 хут сӳтсе

явма, кунсăр пуçне ялхуçалăх ыйтăвĕсемпех 5 хутчен канашлу туса ирттерме палăртнă.

Планра хуçалăхпа культура строительстви, благоустройство тĕлĕшпе татса памалли ыйтусене те палăртнă, шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçĕ çинчен, вĕсем çуркуннехи экзаменсене, çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнине, халăх сывлăхне сыхлас, культурăна ӳстерес, пушартан сыхланас, çулсем юсас, кĕперсем, пĕвесем, çуллахи спорт площадкисем тăвас, укçа-тенкĕ пухас, ял бюджетне пурнăçлас ĕçсем мĕнле тăнине ял Совечĕн исполкомĕнче сӳтсе явма палăртнă. Çавăн пекех ялсене радио кĕртес, колхозсенче тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем тата курăк акмалли пусă çаврăнăшĕсем, çĕнĕ стройкăсем, хушма хуçалăхсем тăвас ĕçсем çинчен те планра тĕплĕн кăтартса панă.

Решенисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслесси ял Совечĕн ĕçĕнче тĕп вырăнта тăрать. Çапла тăвас шутпа сӳтсе явнă ыйтусенех тепĕр хут пăхса тухма палăртнă. Тĕслĕхрен, январь уйăхĕнче пулнă сессире колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле тăни çинчен сӳтсе явнă. Çав решени мĕнле пурнăçланса пыни çинчен апрель уйăхĕнче каллех ял Совечĕн исполкомĕнче сӳтсе явма палăртрăмăр. Апрель уйăхĕнче государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас ĕç мĕнле тăни çинчен сӳтсе явнă. Йышăннă решени мĕнле пурнăçланса пыни çинчен июнь уйăхĕнче каллех ыйту лартса сӳтсе явма палăртнă.

Советсен ĕçĕнче организациллĕ-массăллă ĕç пысăк вырăн йышăнать. Çав ĕçсене плана кĕртетпĕр. Кашни уйăхрах ял Совечĕн сессийĕсем пулаççĕ. Кашни сессинчех 1—2 ыйту пăхса тухма палăртнă. Апрель уйăхĕнче ял Совечĕн социализмла ăмăртăвĕ, май уйăхĕнче çураки итогĕсем тата тырпулсене пăхса çитĕнтерес, июнь уйăхĕнче уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ыйтусене пăхса тухма палăртнă. Сессисенчи иккĕмĕш ыйтупа яланхи комиссисен ĕçĕсем çинчен отчет итлетпĕр. Акă, апрель уйăхĕнче ялхуçалăх, май уйăхĕнче культурăпа çутĕç, июньре финанспа бюджет комиссийĕсен ĕçĕсене пăхса тухма планларăмăр. Çакă ĕнтĕ яланхи комиссисен ĕçне лайăхлатса пыма май парать. Кашни уйăх вĕçĕнче ял Совет исполкомĕ яланхи комиссисен членĕсемпе канашлу туса ирттерет. Июнь уйăхĕнче ял Совет депутачĕсен канашлăвне туса ирттермелле. Унта «Депутат—халăх тарçи» темăпа доклад пулмалла. Çаксене пĕтĕмпех плана кĕртнĕ.

Пĕччен-иккĕн тунă план пĕр енлĕ кăна пулма пултарать. Çавăнпа ĕç планне туса хатĕрленĕ çĕре депутатсене, яланхи комиссисен председателĕсене, активистсене, суйлавçăсене анлăн хутшăнтарни кирлĕ. Иккĕмĕш квартал планне март уйăхĕн пуçламăшĕнчех тума тытăнтăмăр. Плана васкамасăр туни, ăна тăвас ĕçе депутатсемпе анлă актива, суйлавçăсене хутшăнтарни плана пур енлĕ тума, çак тапхăрта тумалли мĕнпур ĕçсене плана кĕртме май пачĕ. Плана туса хатĕрленĕ чухне вĕсем нумай сĕнӳсем пачĕç. Ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ И. Дмитриев юлташ апрель уйăхĕн малтанхи кунĕсенче колхозсенче сăнавлă туху туса ирттерессине, çуракин малтанхи кунĕсенче ака-суха ĕçне лайăх организациленĕ бригадăра, çав бригадăн ĕçри опытне ытти бригадăсене сарас майпа, ял Советне кĕрекен колхозсенчи пĕтĕм бригадирсен канашлăвне туса ирттерессине плана кĕртме сĕнӳ пачĕ. Ф. Игнатьев, С. Токарев депутатсем ялсенчи лавккасен ĕçĕсем, ял Советĕнчи учрежденисемпе организацисенче ĕççыннисен жалобисене пăхса тухас ĕç мĕнле тăни çинчен, депутат А. Андреева юлташ ялсене санитарипе гигиена тĕлĕшĕнчен тасалăхра тытасси, учрежденисемпе организацисен культури çинчен исполкомра ыйту лартса сӳтсе явма сĕнӳ пачĕç. П. Михайлов суйлавçă колхозсенчи пулăшу кассисен ĕçĕсем çинчен пăхса тухма сĕнчĕ, М. Константинов суйлавçă типĕ варта пĕве тума май пуррине исполкома каласа пачĕ тата ыт. те. Çак сĕнӳсене ял Совечĕпе исполкомра сӳтсе явма пурне те плана кĕртрĕмĕр.

Туса хатĕрленĕ плана яланах ял Совечĕн сессийĕнче пăхса тухса çирĕплететпĕр. Çакă кашни депутата квартал хушшинче хăй мĕнле ĕçсем тумаллине лайăх пĕлсе тăма, плана тĕплĕн сӳтсе явма, тӳрлетме, хушусем кĕртме май парать. Çак кварталта сӳтсе явма палăртнă пĕтĕм ыйтусене депутатсем тĕплĕн пăхса тухрĕç, ыйтусене хăш вăхăтсенче пăхса тухсан вырăнлăрах пулассине каласа пачĕç.

План тунă чухне çакна та асра тытатпăр. Эрнен тунтикунĕнче райсовет исполкомĕн ларăвĕ, шăматкун ВКП(б) райкомĕн бюро ларăвĕсем пулаççĕ. Çак кунсенче сессисем, ларусемпе канашлусем ирттерме палăртмастпăр, мĕншĕн тесен депутатсем колхоз председателĕсем, пуçламăш парторганизаци секретарĕсем пулса ĕçлеççĕ. Ял Совет работникĕсене, колхоз председателĕ-

семпе пуçламăш парторганизаци секретарĕсене çак кунсенче час-часах района чĕнме пултараççĕ.

Планра ĕççыннисен çырăвĕсемпе жалобисене пăхса тухассине палăртни курăнмасть. Вĕсем ял Советне куллене пыма пултараççĕ. Çавăнпа хăçан мĕнле жалоба тата заявлени пăхса тухмаллине палăртма хĕнтерех. Вĕсене планпа палăртнă кунсенче пулакан ларусенче ыйту лартса пăхса тухатпăр.

Ял Совечĕн планне çак йĕркепе тăватпăр. Малтанхи графара мĕн тумаллине тата хăçан туса ирттермеллине палăртатпăр. Иккĕмĕш графара кун йĕркипе кам доклад, содоклад тумаллине кăтартатпăр. Юлашки графара сӳтсе явма палăртнă ыйтăва камсем хатĕрленине, сӳтсе явма пăхнă кунччен мĕнле ĕçсем туса ирттермеллине палăртатпăр. Тĕслĕхрен, Ял Совечĕн июнь уйăхĕнчи планне илсе кăтартар-ха.

| Мĕн туса ирттермелле тата хăçан | Кун йĕрки тата кам доклад тăвать | Организацилле мероприятисем |
|---|---|---|
| Çул-йĕр бригадин бригадирĕсен канашлăвĕ. Июнĕн 5-мĕшĕ. | Ялсенче кĕперсем тăвас ĕç мĕнле тăни çинчен. Ял Совет исполкомĕ ирттерет. | Кĕперсем тăвас ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслемелле. Тĕрĕслеве Ф. Игнатьев, М. Иванов депутатсем, Г. Афанасьев, Г. Скворцов активистсем туса ирттереççĕ. Вĕсемех çак ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртаççĕ. |
| Депутатсен канашлăвĕ. Июнĕн 7-мĕшĕ. | Доклад: «Депутат — халăх тарçи». Доклада ял Совет председателĕ тăвать. | |
| Ял Совет исполкомĕн ларăвĕ. Июнĕн 8-мĕшĕ. | 1. Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленни çинчен. Пушнарти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ К. Карейкин юлташ каласа парать. | Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелле. Тĕрĕслеве ял Совет исполкомĕн членĕ М. Иванов тата культурăпа çутĕç комиссийĕн членĕсем туса ирттереççĕ. Вĕсемех материала пĕтĕçтереççĕ, решени проектне çырса хатĕрлеççĕ. Материала ял Совет исполкомне июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне тăратмалла. |
| | — | |

| Мĕн туса ирттермелле тата хăçан | Кун йĕрки тата кам доклад тăвать | Организациллĕ мероприятисем |
|---|---|---|
| | 2. Колхозсенче уй-хире çумкурăксенчен тасатас ĕç мĕнле тăни тата çак тапхăрта ялта культурăллă-массăллă ĕçе туса пырасси çинчен. | Колхозсенче уй-хире çумкурăксенчен тасатас ĕç мĕнле тănине тĕрĕслемелле. Тĕрĕслеве ялхуçалăх комиссийĕ туса ирттерет. |
| | «Большевик» колхоз председателĕ Н. Иванов тата ялти клуб заведующийĕ Г. Павлов юлташсем каласа параççĕ. | Культурăпа çутĕç комиссийĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне тĕрĕслет. Тĕрĕслеве комиссин тата клубсен активне явăçтарать. Вĕсемех клубсемпе ялти библиотекăсен ĕçĕсене лайăхлатмалли мероприятисене туса хатĕрлеççĕ. Решени проектне ялхуçалăх, культурăпа çутĕç комиссийĕсем пĕрле çыраççĕ. Материала ял Совет исполкомне июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне тăратмалла. |
| | 3. Ял Советĕнчи учрежденисен культури тата ялсен тасалăхĕ çинчен А. Андреева депутат каласа парать. | Ял Советĕнчи учрежденисен культурине тата ялсен тасалăхне тĕрĕслемелле. Çак ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртмалла. Материала А. Андреева депутат, Г. Крылова, А. Краснов активистсем хатĕрлеççĕ. |
| | 4. Колхозсемпе уйрăм сдатчиксем ял Совет исполкомĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана тултарас тĕлĕшпе йышăннă решение мĕнле пурнăçлани çинчен уполминзаг агенчĕ П. Яндышев каласа парать. | Колхозсемпе уйрăм сдатчиксем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тухмалла. Юлса пыракан участоксене палăртмалла. Материала уполминзаг агенчĕ, ялхуçалăх комиссийĕн членĕсем хатĕрлеççĕ. |
| Колхозсенчи пулăшу касси председателĕсен та- | Вăрçă инваличĕсене, çар çыннисен çемйисене, тăлăх ачасене | Пулăшу кассисен ĕçĕсене лайăхлатмалли мероприятисене туса хатĕрлемелле. Ма- |

| Мĕн туса ирттермелле тата хăçан | Кун йĕрки тата кам доклад тăвать | Организациллĕ мероприятисем |
|---|---|---|
| та активĕн канашлăвĕ. Июнĕн 15-мĕшĕ. | тата ватă çынсене пулăшас ĕç мĕнле тăни çинчен. Колхозсенчи пулăшу касси председателĕсем Л. Малиновский тата М. Никитин юлташсем каласа параççĕ. | териала ял Совечĕн депутачĕ А. Романов тата Е. Тимофеев, Н. Мидюков активистсем хатĕрлеççĕ. |
| Ял Совет исполкомĕн ларăвĕ. Июнĕн 18-мĕшĕ. | 1. Иккĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле тăни çинчен. Финагент Г. Алексеев каласа парать. | Налогсем, заем укçи пухас ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслемелле. Тĕрĕслеве финанспа бюджет комиссийĕ тата ял Совечĕн секретарĕ В. Васильев юлташ туса ирттереççĕ. Вĕсемех лару решенин проектне хатĕрлеççĕ. |
| | 2. Ял Совет исполкомĕ колхозсенче уй-хирсене çумкурăксенчен тасатасси çинчен йышăннă решени мĕнле пурнăçланни çинчен. Колхоз председателĕсем Н. Иванов тата С. Токарев юлташсем каласа параççĕ. | Колхозсенче уй-хирсене çумкурăксенчен тасатас ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслемелле. Тĕрĕслеве ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ И. Дмитриев юлташпа комисси членĕсем ирттереççĕ. Вĕсемех лару решенин проектне çырса хатĕрлеççĕ. |
| | 3. Ял Советĕнчи учреждениcенче ĕççыннисен çырăвĕсемпе тата жалобисемпе ĕçлесси мĕнле тăни çинчен. Ял Совет председателĕн заместителĕ Ф. Игнатьев юлташ каласа парать. | Ял Советĕнчи, колхозсенчи, учреждениcемпе предприятисенче ĕççыннисен çырăвĕсемпе тата жалобисемпе ĕçлесси мĕнле тăнине тĕрĕслемелле. Тĕрĕслеве исполком членĕсем Ф. Игнатьев, П. Корольков тата Е. Тимофеевпа П. Шаранов активистсем туса ирттереççĕ. Вĕсемех материала пĕтĕçтерсе решени проектне хатĕрлеççĕ. |
| | 4. Пушартан сыхланас ĕç мĕнле тăни çинчен. | Пушартан сыхланас ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслемелле тата ĕçе лайăхлатмалли меро- |

| Мĕн туса ирттермелле тата хăçан | Кун йĕрки тата кам доклад тăвать | Организациллĕ мероприятисем |
|---|---|---|
| | Ирĕклĕ пушар дружинисен начальникĕсем каласа парăççĕ. | приятисене палăртмалла. Материала ял Совечĕн депутачĕ А. Романов юлташ хатĕрлет. |
| Ял Совечĕн 7-мĕш сессийĕ. Июнĕн 29-мĕшĕ. | 1. Уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленесси çинчен. Доклада ял Совечĕн председателĕ тăвать. Содоклад тăваканĕ ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ И. Дмитриев юлташ. | Колхозсенче тата бригадăсенче уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслемелле. Тĕрĕслеве исполком членĕсем М. Ивановпа Ф. Игнатьев юлташсем организацилеççĕ, материала пĕрлештерсе сесси решенин проектне хатĕрлеççĕ. Культурăпа çутĕç комиссийĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсен уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнĕ тапхăрти ĕçĕсене лайăхлатмалли мероприятисене туса хатĕрлет. |
| | 2. Финанспа бюджет комиссийĕн ĕçĕсем çинчен. Комиссин председателĕ Я. Захаров юлташ отчет тăвать. | Комиссин ку таранччен тунă ĕçĕсене пăхса тухмалла. Материала ял Совет исполкомĕ хатĕрлет. |
| | 3. Ял Совечĕн виççĕмĕш кварталти ĕçĕсен планне çирĕплетесси. Ял Совечĕн секретарĕ В. Васильев юлташ доклад тăвать. | Ял Совечĕн иккĕмĕш кварталĕнчи планĕ мĕнле пурнăçланнине шута илмелле. Çитменлĕхсене палăртмалла. Материала ял Совет исполкомĕ хатĕрлет. |

Ял Совет кашни квартал валлиех çакăн пек план туса çирĕплетет.

Йышăннă плана пурнăçласси—ăна мĕнле туса хатĕрленинчен, вăл реальнăй пулнинчен, плана пурнăçлама—пĕтĕм депутатсене явăçтарнинчен килет. Ял Совечĕн планĕнчен çакна курма пулать: пур депутат та, яланхи комиссисем те ĕç планне туса хатĕрленĕ чухнехи пекех, плана пурнăçланă çĕре те хутшăнаççĕ. Çакна планăн виççĕмĕш графинче курма пулать. Çакă ял Совечĕн де-

путачĕсен государствăна ертсе пырас ĕçри опытне анлăлатать, вĕсене тата та активлăрах ĕçлеме пулăшать.

Планпа ĕçлесе иккĕмĕш квартал хушшинче 3 хутчен ял Совечĕн сессийĕсене, 6 хутчен исполком ларăвĕсене, тĕрлĕрен канашлусем 7 хут туса ирттернĕ. Çак ĕçсене пĕтĕмпех планпа кăтартнă кунсенче туса ирттернĕ. Сӳтсе явнă ыйтусене хатĕрленĕ çĕрте депутатсемпе активистсем анлăн хутшăнчĕç.

Кашни квартал планне туса çирĕплетнĕ хыççăнах, çав плана кашни депутата çырса паратпăр. Çакă депутатсене вĕсем хатĕрлемелли ыйтусене малтанах пĕлсе тăма, тумалли ĕçе пĕр кунта мар, чылай малтан хатĕрлесе пыма май парать. Нумай чухне депутатсене, активистсене ял Советне чĕнсе калаçатпăр, планра палăртнă ĕçсене тума уйрăм ĕçсем паратпăр, хушнă ĕçе мĕнрен тытăнмаллине, мĕнле тумаллине вĕрентетпĕр.

Сессисенче, исполком ларăвĕсенче е канашлусенче пăхса тухма палăртнă пĕтĕм ыйтусене депутатсемпе, активистсемпе, суйлавçăсемпе пĕрле хатĕрлетпĕр. Вĕсемех ял Совечĕ йышăннă решенисене ĕççыннисене каласа ăнлантараççĕ, вĕсене тума палăртнă ĕçсене пурнăçлама мобилизацилеççĕ. Çакăнта — чĕрĕ çынсемпе таччăн çыхăнса ĕçленинче пулать те ĕнтĕ тунă плана пурнăçласси.

## ЯЛ СОВЕТ ИСПОЛКОМĔ

Ял Совечĕн пĕрремĕш сессийĕнче ял Совечĕн исполнительнăй комитетне 5 çынтан суйласа хăварнă: председатель, унăн заместителĕ, секретарь тата икĕ член. Вĕсем пурте 1947 çулхи вырăнти Советсен суйлавĕсенчен варах исполком составĕнче тăраççĕ.

Исполнительнăй комитет — ял Совечĕн территорийĕнче государство влаçĕн ĕç тăвакан органĕ пулса тăрать. Вăл ялсенче революцилле законлăха сыхлать, обществăллă социализмлă харпăрлăхăн хуралне йĕркелет, партин тĕп çулне нимĕн пăркаланмасăр тытса пырать, хăйĕн территорине кĕрекен советлă, хуçалăхлă, кооперативлă тата ытти организацисен ĕçĕсенче, çавăн пекех ялсенчи работниксен ĕçĕнче Совет законĕсене тĕрĕс тытса пыма пулăшать. Ял Совечĕ Совет влаçĕн тĕп органĕсен тата вырăнти органĕсен мĕнпур постановленийĕсемпе распоряженийĕсене вырăнсенче ĕçлекен çынсем, ĕççыннисем мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăрать. Вăл колхозсем

тата ялти ĕççыннисем хăйсен парăмĕсене государствăна пĕтĕмпех тата вăхăтра парса татмалла тăвать. Ял Совечĕн исполкомĕ çак нумай енлĕ, пысăк ĕçе пĕлсе организацилесен çеç тĕрĕс туса пыма пултарать. Çапла тăвас майпа исполкомăн кашни членне уйрăм ĕçсем парса тухнă. Ял Совет председателĕ ялхуçалăхĕ, государство умĕнчи парăмсене парса татас, шкулсем тĕлĕшпе йышăннă решенисене тĕрĕслет. Ял Совет председателĕн заместителĕ Ф. Игнатьев юлташ ялсенче çул-йĕрсем тăвас тата благоустройство ĕçĕсемшĕн ответлă пулать. Ял Совечĕн секретарĕ В. Васильев юлташ укçа-тенкĕпе бюджет ĕçне, военнообязаннăйсен учетне, ЗАГС ĕçне йĕркелет, ĕççыннисен çырăвĕсемпе тата жалобисемпе ĕçлет, ĕç хучĕсене йĕркелет. Ял Совет исполкомĕн членĕ М. Иванов юлташ ял Советĕнчи культурăпа çутĕç тата сывлăх учрежденийĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрать, П. Корольков юлташ вăрман хатĕрлев планне тултарас, промышленноçа ĕç вăйĕ парса тăрас енĕпе ответлă пулать. Исполкомăн кашни членне уйрăм ĕçсем тăрăх çакăн пек вырнаçтарса тухни вĕсен ĕçри ответлăхне ÿстерет, пур ĕçе те пур вăхăтра та лайăх пĕлсе тăма май парать. Тĕслĕхрен, Ф. Игнатьев юлташа илер-ха. Вăл çуркуннех, юр кайса пĕтме пуçласанах, ял Советĕнчи ялсенче, çырмасенче тата уй-хирсенче ăçта çулсене юсамаллине, ăçта хапхасемпе уй картисене юсаса çĕнĕрен тумаллине тĕрĕслесе шута илсе тухрĕ. Çав ĕçсене тума кашни ялта мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ, мĕн чухлĕ строительство материалĕ кирлине тата çак ĕçсене хăш вăхăт тĕлне туса çитерме май пуррине палăртрĕ. Çакă ыйтăва ял Совет исполкомĕнче тĕплĕн те пĕлсе пăхса тухма, тĕрĕс решени йышăнма май пачĕ. Ял Совечĕн территорийĕ питĕ çырма-çатраллă пирки кĕперсем нумай. Çуркуннехи вăхăтра вĕсене шывсем çĕмĕрсе юхтарасран сыхлассине те Ф. Игнатьев юлташах организацилерĕ. Çул-йĕрсем юсамалли уйăхлăх вăхăтĕнче вăл кашни кулленех ĕçе миçе çын тухнине, ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕрĕслерĕ. Кăçал пĕр çырмара типовăй кĕпер турăмăр. Кĕпер тунă çĕрте вăл кашни кунах пулчĕ, ĕçри çитменлĕхсене палăртса вĕсене пĕтермелли майсене тупса пачĕ.

Татах тепĕр тĕслĕх илĕпĕр. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли сезон пуçлансанах вăрманта ĕçлекен колхозниксем кулленхи задание тултарса пыман. П. Корольков юлташ çак ĕçе хăй тĕрĕслерĕ. Задание

тултарса пыманнин сăлтавĕ — ĕçе тĕрĕс организацилеменнинче пулнă. Вăрман хатĕрлекенсен бригадисенчи ĕçе тĕрĕс организацилеме вăл хăйех пулăшрĕ.

Ял Совечĕн исполком членĕсем тунă ĕçсем çинчен нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Вĕсене ĕçĕн уйрăм участкисем тăрăх вырнаçтарса тухман пулсан, ял Совечĕн председателĕ мĕнпур ĕçсене хăй курса тĕрĕслеме пултарнă-и? Паллах, çук.

Ял Совечĕн исполкомĕ коллегиллĕ орган пулса тăрать. Исполком татса памалли ыйтусене яланах пур членсемпе пĕрле пăхса тухатпăр. Исполком ларăвĕсене планпа палăртнă кунсенче уйăхра 2—3 хутчен пухатпăр. Қашни ларурах 4—5 ыйту сӳтсе яватпăр.

Қăçалхи икĕ квартал хушшинче исполком ларăвĕсене 13 хут туса ирттерсе 53 ыйту сӳтсе явнă. Вĕсенче колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем мĕнле пулса пыни, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, государство умĕнчи парăмсене тултарас, укçатенкĕ пухас, ял бюджетне пурнăçлас, шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас, культурăпа çутĕç, медицина учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен т. ыт. ыйтусене те пăхса тухнă.

Исполком ларăвĕсем активлă иртесси, вĕсенче сӳтсе явма палăртнă ыйтусене çителĕклĕ чухлĕ пĕлсе пăхса тухасси тата лайăх, пур енлĕ решени йышăнасси ăна иртерме хатĕрленнинчен нумай килет. Çавăнпа ларусене иртерме тĕплĕн хатĕрленетпĕр, пăхса тухмалли ыйтусене хатĕрленĕ çĕре яланхи комиссисемпе депутатсене, активистсене анлăн хутшăнтаратпăр. Пĕр-икĕ тĕслĕх илсе кăтартар.

Июнь уйăхĕнче пулса иртнĕ пĕр ларура шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленни, колхозсенче уйри тырпулсене пăхса çитĕнтерес ĕç мĕнле тăни, ялсене таса тытса усрасси, ял Совет исполкомĕ колхозсемпе уйрăм сдатчиксем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси пирки йышăннă решени мĕнле пурнăçланса пыни çинчен пăхса тухрăмăр. Çак ыйтусене хатĕрленĕ çĕре исполком членĕсем, яланхи комиссисемпе депутатсем, активистсем анлăн хутшăнчĕç. Культурăпа çутĕç комиссийĕпе унăн активĕ шкулсенче çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç мĕнле пулса пынине тĕрĕслесе тухрĕ, çитменлĕхсене палăртрĕ. Алексеевкăри пуçламăш шкулта шкул тата учительсен хваттерĕ валли вутă хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе пуçарса яман. Пушнарти çичĕ çул вĕренмелли шкулта

вĕренӳ çулне вĕçлемен тесе шкулти юсав ĕçĕсене тытăнмасăр тăнă. Шкулсенче вĕренекенсем хушшинче учебниксем сутса илес тата улăштарас ĕç сӳрĕккĕн пулса пырать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче вĕренĕве явăçтармалли ачасене учительсем шута илсе тухнă. Анчах вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе шкулсем нимĕнле ĕç те тумаççĕ. Вĕсене пухса калаçмаççĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулне хăйсен ачисене мĕнле хатĕрлемелли, мĕнле учебниксем илсе памалли çинчен каласа ăнлантарман. Çак çитменлĕхсене палăртса культурăпа çутĕç комиссийĕ вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине те палăртрĕ. Колхозсенче çак вăхăтра уйрăм пысăк ĕçсемех çук. Колхозниксен чылай пайне шкул вутти хатĕрленĕ çĕре явăçтарма пулать. Çапла тăвас майпа кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсене туса ирттермелле, кашни шкул валлиех июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне шкул вутти кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме майсем пур. Хатĕрленĕ вутă ялсенчен 10—12 çухрăмра кăна. Колхозсем шкул вутти турттарассине каçхи вăхăтра организацилеме пултараççĕ. Çапла туни колхозра тумалли ĕçсене те чăрмантармасть. Хатĕрленĕ вутта çуррине августăн 1-мĕшĕ тĕлне кӳрсе килме пулать.

Шкулсене юсас ĕçе те вĕренӳ çулĕ вĕçленичченех тытăнма майсем пур. Пуçламăш классенче вĕренӳ ĕçĕсем вĕçленнĕ. Çак шкулсен çурчĕсене, партăсемпе доскасене, тата ытти инвентарьсемпе оборудованисене юсама тытăнмалла, ремонт ĕçĕсен графикне туса çирĕплетмелле. Кашни шкултах вĕренекенсем хушшинче учебниксем сутса илес, улăштарас ĕçе июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне туса çитермелле. Çак ĕçе тума класс руководителĕсене хушмалла. Кăçал пĕрремĕш класра çĕнĕрен вĕренме илмелли ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ĕçе лайăхлатмалла. Вĕсене пĕр çĕре пухса та, уйрăммăн та калаçусем туса ирттермелле. Кĕркуннехи экзаменсене юлнă ачасемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлессине тĕрĕс туса пымалла. Çавăн пек ачасен ашшĕ-амăшĕсене хăйсен ачисене экзаменсене хатĕрленме кирлĕ условисем туса парасси çинчен каласа ăнлантармалла, ачасене кĕркуннехи экзаменсен расписанийĕпе малтанах паллаштармалла. Çакăн пек ĕçсем туса ирттерме май пуррине палăртрĕ культурăпа çутĕç комиссийĕ, лару решенин проектне туса хатĕрлесе ял Совет исполкомне лару пулас кунччен виçĕ кун малтан пачĕ. Ларура исполком членĕсем те, культурăпа çутĕç комиссийĕн членĕсем те çĕнĕ

вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене хытă тишкерчĕç. Культурăпа çутĕç комиссийĕ хатĕрленĕ решени проекчĕ çумне тата çĕнĕ пунктсем хушрĕç. Йышăннă решени мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесе тăма исполком членĕсене хушса хăвартăмăр.

Колхозсенче акнă тырпула пăхса çитĕнтерес ĕçе мĕнле организациленине ялхуçалăх комиссийĕпе активистсем тĕрĕслесе тухрĕç. Ку вăхăт тĕлне колхозсенче тырпула çумкурăкĕсенчен тасатас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен пулнă. Уйрăм вырăнсенче çĕр çийĕ хытса ларнине пула çĕрулми шăтса тухайман. Хăшпĕр бригадăсенче çум çумлакан колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ те, ĕçĕн пахалăхĕ те начар пулнă. Колхоз правленийĕсем çакна куллен сăнаса тăман. Культурăпа çутĕç комиссийĕ уйри тырпулсене пăхса çитĕнтернĕ вăхăтра культурăпа çутĕç учрежденийĕсен мĕнле ĕçсем тумаллине палăртрĕ. Çак икĕ комисси пĕрле исполком ларăвĕн решени проектне çырса хатĕрлерĕç. Ял Совет исполкомĕ ыйтăва ларура пăхса тухрĕ, пĕтĕм çитменлĕхсене палăртса çакăн пек решени йышăнчĕ:

«1. Уйри тырпулсене пăхса çитĕнтерес ĕçе тĕпренех лайăхлатас майпа колхоз правленийĕсене çапла тума хушас:

а) акнă пĕтĕм тырăсене пĕрремĕш хут çумлассине июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле, уйрăм тата вăрлăх участкисенче тырпулсене икĕ хут çумлассине организацилемелле;

б) çĕрулмине пур участоксенче те çумласа купаламалла; çакна улăхри ĕçсем тата уйри тырпулсене пухса кĕртес ĕçсем пуçланиччен туса çитермелле;

в) кашни бригадăна кунсерен миçе гектар çумламаллине кăтартса график туса памалла;

г) пĕтĕм ĕçе уйрăм сдельщина йĕркипе туса пымалла, бригадăпа бригада тата уйрăм колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла, кашни колхозник ĕç нормине ирттерсе тултартăр;

д) колхозниксен кулленхи ĕçне бригадирсем, бригадирсенчен кашни виçĕ кунта колхоз председателĕ йышăнассине йĕркелемелле, япăх çумланă е купаланă лаптăксене тепĕр хут çумласа купалаттармалла;

е) çумăр çунипе хытса ларнă çĕрулми лаптăкĕсене халех сӳремелле;

з) кашни колхозрах кăтарту хăмисем пулмалла.

2. Ялти клуб заведующийĕ Г. Павлов, библиотека

заведующийĕ М. Иванов тата колхоз клубĕсен заведующийĕсене уйри тырпулсене пăхса çитĕнтернĕ вăхăтра культурăллă-массăллă ĕçе лайăхлатма хушас.

3. Çак решени мĕнле пурнăçланса пынине кулленех тĕрĕслесе тăрассине организацилеме исполком членне М. Иванов юлташа хушса хăварас».

Ял Совет исполкомĕн ларăвĕсенче сÿтсе явмалли кашни ыйтăва çак йĕркепе хатĕрлесе пăхса тухатпăр, решенисем йышăнатпăр. Решенисем йышăннă чухне çакна шута илетпĕр: вăл реальнă, пурнăçа кĕмелле пултăр, тумалли ĕçсен срокне тĕрĕс палăртмалла, ăна йышăниччен пур енлĕ виçсе пăхмалла.

Решенисем йышăнасси — вăл ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Йышăннă решенисене вăхăтра та тĕрĕс пурнăçламалла. Çакна йышăннă решени мĕнле пурнăçланса пынине куллен, тăтăшах тĕрĕслесе тăрсан çеç тума пулать.

«Шанчăклăнах калама пулать,—тет Сталин юлташ,— пирĕн ĕçри çитменлĕхсемпе прорывсен вунă пайĕнчен тăхăр пайĕ ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслессине тĕрĕс организацилени пулманнинчен килет. Нимĕн иккĕленмелли те çук, ĕçе мĕнле тунине кирлĕ таран тĕрĕслесе пыни пулнă пулсан, çак çитменлĕхсемпе прорывсем пулассине эпир малтанах сиссе, вĕсене сирсе пынă пулăттăмăр»[1].

Ял Совечĕн исполкомĕ йышăннă решенисене çийĕнчех пурнăçлакансем патне çитерет, вăл мĕнле пурнăçланса пынине куллен тĕрĕслесе тăрать. Çак ĕçе каллех исполком членĕсене, яланхи комиссисемпе депутатсене, активистсене хутшăнтаратпăр. Ял Совет исполкомĕ шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлес, уйри тырпулсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăнинех илсе кăтартар-ха. Исполком ларăвĕ пулнă хыççăнхи кунсенче ял Совет исполкомĕн членĕсемпе депутачĕсем колхоз правленисемпе пĕрле колхозниксен пухăвĕсене туса ирттерчĕç. Вĕсем колхозниксене ял Совечĕн исполкомĕ йышăннă решенисемпе паллаштарчĕç. Колхозниксем ял Совечĕн исполкомĕ тĕрĕс решени йышăннине палăртрĕç. Вĕсем хăйсен пухăвĕсенче шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлес, уйри тырпулсене пăхса çитĕнтерес, ялсене тасалăхра тытас, государство умĕнчи парăмсене парса татас тĕлĕшпе обязательствăсем илчĕç. Культурăпа çутĕç комиссийĕ хăйĕн членĕсене, активисчĕ-

[1] И. Сталин, Ленинизм ыйтăвĕсем, 11-мĕш, чăвашла изд. 463 стр.

сене шкулсем тăрăх, ялхуçалăх комиссийĕ колхозсемпе бригадăсем тăрăх вырнаçтарса тухрĕç. Вĕсем шкулсенче, колхозсенче исполком решенийĕ мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăчĕç, ĕççыннисене çав решенисене пурнăçлама мобилизацилерĕç. Акă, культурăпа çутĕç комиссийĕн членĕ А. Краснов юлташа илер-ха. Ăна комисси пĕр участокра колхозниксене шкул вутти хатĕрлеме ярассине организацилеме хушнă. Вăл шкулсенче вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем патĕнче пулнă, вутă хатĕрлеме каясси çинчен пĕлтернĕ. Тепĕр ирхине вăл каллех вĕсем патĕнче пулса вăрмана вутă хатĕрлеме кайнине тĕрĕсленĕ. Ытти депутатсемпе активистсем те çапла ĕçлерĕç. Колхозниксене вăрмана хăйсем ертсе кайса унта шкул вутти хатĕрлес ĕçе организацилерĕç. Июлĕн пĕрремĕшĕ тĕлне пур шкулсем те хăйсене валли кирлĕ чухлĕ вутă хатĕрлерĕç, августăн пĕрремĕшĕ тĕлне хатĕрленĕ вутта çуррине ытла шкулсене турттарса килнĕ.

Шкулсенче юсав ĕçĕсем те йĕркеллĕ пулса пычĕç. Юсав ĕçĕсен графикне тунă. Шкул директорĕсемпе заведующийĕсем çуллахи вăхăтра вĕренекенсемпе, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлемелли мероприятисене туса хатĕрлесе çав плана пурнăçлама пĕтĕм вăя хучĕç.

Ялхуçалăх комиссийĕпе активистсем колхозсенче уйри тырпулсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе йышăннă решени мĕнле пурнăçланнине тăтăшах тĕрĕслесе тăчĕç. Çав решение пурнăçласа колхоз правленисем тырпулсене çумкурăксенчен тасатассине тивĕçлипе йĕркелерĕç. Кашни бригадăна кашни кун мĕн чухлĕ çум çумламалли, çĕрулми купаламалли графиксем туса панă. Бригадăсенче ĕçе уйрăм сдельщина йĕркипе туса пырассине, колхозниксен ĕçне бригадирсем, бригадирсенчен колхоз председателĕ йышăнассине организациленĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем те ял Совет исполкомĕн решенийĕ тăрăх ĕçлесе уйри тырпулсене пăхса çитĕнтернĕ вăхăтра массăллă-ăнлантарулла ĕçе лайăхлатрĕç. Çак вăхăтра кăна вĕсем колхозсемпе бригадăсенче 8 номер стена хаçачĕ, 40 номер ытла боевой листоксем кăларнă, хирте ĕçлекенсем хушшинче 30 ытла калаçу ирттернĕ, кашни кулленех хаçатсем вуласа парассине йĕркеленĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне кулленех культурăпа çутĕç комиссийĕ тĕрĕслесе тăчĕ.

Йышăннă решени мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăрассине тĕрлĕ организациллĕ формăсемпе туса пыма

пулать. Пĕрремĕшĕ вăл колхозсен, шкулсен тата ытти учрежденисен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăни. Иккĕмĕшĕ— решение пурнăçлакансенчен отчетсем ыйтасси. Çак ыйтусенех илер-ха. Шкулсенче çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнине куллен тĕрĕслесе тăракансем пулин те, шкул директорĕсемпе заведующийĕсенчен кашни 10 кун хушшинчех хут çине çырса панă отчетсем ыйтатпăр. Йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслес майпа вăхăтран вăхăта колхоз тата учреждени руководителĕсен, уйрăм работниксен отчечĕсене ял Совет исполкомĕнче итлетпĕр. Акă, июнĕн малтанхи кунĕсенче пулнă ларура уйри тырпулсене пăхса çитĕнтерес ыйтăва сӳтсе явнă. Исполкомăн çитес ларăвĕнче малтанхи ларура йышăннă решение мĕнле пурнăçласа пыни çинчен колхоз председателĕсен отчетне итлерĕмĕр.

Йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе тунă ĕçсене шута илсе пыни те пысăк вырăн йышăнать. Çакна куллен туса пыратпăр. Пĕр-пĕр решени йышăннă хыççăн çав решение пурнăçлас майпа депутатсене, активистсене уйрăм ĕçсем тума хушатпăр. Хушнă ĕçе ятарласа тунă тетрадь çине çыратпăр. Унта пĕр-пĕр ĕç тума кама, хăçан хушнине, хăçан пурнăçламаллине тата хăçан пурнăçланине паллă тăватпăр. Çапла туни ĕç тума хушнă работникĕн ответлăхне ӳстерет. Çакăн пек формăсемпе тĕрĕслетпĕр ĕнтĕ йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине.

Ял Совечĕн решенийĕсене тата государствăллă задачăсене пурнăçлама ялти халăхăн анлă массине явăçтарас ĕçре ялти халăх пухăвĕсем пулăшаççĕ. Ялти халăх пухăвĕсене тăтăшах туса ирттерни — суйлавçăсене ял Совечĕ тата унăн депутачĕсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетет, Советсен пĕтĕм ĕçне лайăхлатма пулăшать.

Ялти халăх пухăвĕсене ирттерме тĕплĕн хатĕрленсен çеç, вĕсем ăнăçлă иртме пултараççĕ. Ял Совет исполкомĕ халăх пухăвĕсене ирттерме тĕплĕн хатĕрленет. Ялта халăх пухăвĕ пуласси çинчен темиçе кун малтан урамсене хут çине çырнă пĕлтерӳсем çыпăçтаратпăр. Ялти исполнительсем пуху пуласси çинчен хăйсен участокĕсенчи суйлавçăсене пĕлтереççĕ. Пуху пулмалли çурта лайăх хатĕрлетпĕр. Ăна плакатсемпе тата лозунгсемпе илемлететпĕр, кирлĕ чухлĕ сĕтел-пукансем хатĕрлетпĕр. Пĕр-пĕр ыйтупа пуху ирттерес умĕн суйлавçăсене ял Совет исполкомне чĕнсе калаçатпăр.

Апрель уйăхĕнче ялсенче благоустройство ыйтăвĕсемпе халăх пухăвĕсене туса ирттернĕ. Пуху пулас кунччен чылай суйлавçăсене ял Советне чĕнсе калаçрăмăр. Вĕсем ялсенчи кĕперсене юсасси, пĕвесемпе çăлсем ытларах тăвасси, уй картисене çирĕплетесси, клуб йĕри-тавра йывăççем лартса çĕнĕ карта тăвасси тата ыттисем çинчен те каласа пачĕç. Мичурин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Пушнар ялне радио кĕртесси, урамсене чул сарасси çинчен каларĕç.

Ялти пухусем пуличчен чылай малтан ялсен благоустройство планне туса хатĕрлерĕмĕр. Плана тунă чухне суйлавçăсем панă сĕнÿсене шута илтĕмĕр. Палăртнă ĕçсене тума мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кирлине, строительство материалĕсене ăçтан тупмаллине, мĕнле ĕçе халăх вăйĕпе тумаллине кăтартрăмăр. Çак ыйтупа халăх пухăвĕсенче доклад тума Кăташра ял Совет исполкомĕн членĕ Ф. Игнатьев, Пушнарта колхоз председателĕ депутат С. Токарев юлташсене хушрăмăр. Вĕсем доклад тума тĕплĕн хатĕрленчĕç.

Ялти халăх пухăвĕсем активлă иртрĕç. Вĕсем ял Совечĕ благоустройство тĕлĕшпе туса хатĕрленĕ плана ырларĕç. Кăташри халăх пухăвĕнче 11 çын тухса каларĕç. Вĕсем ял Совечĕ тунă благоустройство планне ырланипе пĕрлех тата нумай паха сĕнÿсем пачĕç.

Пухура тухса калакансем панă сĕнÿсене благоустройство тĕлĕшпе йышăннă постановление кĕртнĕ. Пуху хыççăн ял Совечĕ йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе практикăллă ĕçсем тума тытăнчĕ, ялти халăх çав ĕçсене тунă çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлет.

Кăçал ялти халăх пухăвĕсене ял Совечĕ 12 хут туса ирттерчĕ. Вĕсенче хуçалăхпа культура строительствинчи тĕрлĕ ыйтусене: 1951 çулта самообложени ирттересси, государствăна выльăх-чĕрлĕх тата ытти продуктсем памалли плансене вăхăтра тултарасси, ялсене таса тытасси, заем сарса унăн укçине пухасси, укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарасси, шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлесси т. ыт. те пăхса тухнă. Çав пухусенчех партипе правительство йышăннă постановленисем, ял Совечĕпе унăн исполкомĕ йышăннă решенисем çинчен те ĕççыннисене каласа ăнлантарнă, райсовет исполкомĕ йышăннă обязательнăй постановленисемпе паллаштарнă.

Лайăх хатĕрленсе ирттернĕ халăх пухăвĕсем вырăнти Советсем умĕнче тăракан пĕтĕм задачăсене ăнăçлă татса пама пулăшаççĕ.

Ял Совечĕпе унăн исполкомне халăхпа çыхăнтарас, вĕсен умĕнче тăракан задачăсене суйлавçăсене каласа парас ĕçре суйлав округĕсенче депутатсем ирттерекен пухусем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çавăнпа ял Совет исполкомĕ суйлав округĕсенче суйлавçăсен пухăвĕсене вăхăтра ирттерессине те организацилет. Кăçал суйлав округĕсенче 23 пуху туса ирттернĕ. Вĕсенче депутатсем ял Совечĕн тата хăйсен пĕр-пĕр тапхăрти ĕçĕсем çинчен, социализмла ăмăрту, ял Совечĕпе унăн исполкомĕ йышăннă решенисем çинчен каласа параççĕ, суйлавçăсене ял Совечĕн ĕç планĕпе паллаштараççĕ, суйлавçăсем мĕн ыйтнине палăртаççĕ. Çакăн пек пухусем ял Совечĕпе унăн исполкомĕн, депутатсен, ялти учрежденисен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене палăртса вăхăтра пĕтерме те пулăшаççĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш квартал итогĕсемпе чылай суйлав округĕсенче суйлавçăсен пухăвĕсене туса ирттернĕ. Суйлавçăсем пухусенче колхоз правленисен, культурăпа çутĕç, медицина учрежденийĕсен, шкулсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене кăтартса пачĕç. Суйлавçăсен пухăвĕсем хыççăн депутатсем суйлавçăсем палăртнă çитменлĕхсем çинчен ял Совет исполкомне пĕлтерчĕç. Ял Совет исполкомĕ çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çийĕнчех тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттерчĕ. Шкулсен, культурăпа çутĕç, медицина учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен исполкомра ыйту лартса пăхса тухнă, вĕсен руководителĕсене хăйсен ĕçĕсем çинчен халăх хушшинче отчетсем тума хушса хăварнă. Калас пулать, çакăн хыççăн вĕсем хăйсен ĕçĕсене татах лайăхлатрĕç, хăйсен ĕçĕсем çинчен колхозниксен пухăвĕсенче отчетсем туса пачĕç.

Чылай суйлав округĕсенчи пухусенче суйлавçăсем колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснă фактсем пурри çинчен каланă. Çак фактсене тĕрĕслеме депутатсенчен комисси тунă. Комисси колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснă фактсем чăннипех те пуррине палăртрĕ. Хăшпĕр уйрăм бригадăсенче колхозниксене ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине çырса парассине вăраха янă. Колхозсенче арпа-улăмсене тĕрĕс мар валеçни, ĕçкунĕсене тĕрĕс мар расходланисем пулнă. Колхоз правленисем колхозниксем вырăнлă асăрхаттарса каланисене, вĕсен хаклă сĕнĕвĕсене шута илсе пурнăçа кĕртме

тăрăшман. Колхозсенчи ревизи комиссийĕсем вара çак фактсемпе килĕшсе пурăннă. Колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтерессипе çинчен ял Совет исполкомĕнче ыйту лартса сӳтсе явнă. Çакăн хыççăн суйлавçăсем кăтартса панă çитменлĕхсем пĕтсе пычĕç.

Суйлав округĕсенче ирттерекен пухусенче суйлавçăсем нумай çитменлĕхсене кăтартса параççĕ. Вĕсене пĕтерме çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнатпăр. Çакăнтан çакă паллă: суйлав округĕсенче ирттерекен пухусем ял Совечĕн, колхозсен, ял Советĕнчи тĕрлĕрен учреждени-сен, уйрăм работниксен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене çийĕнчех палăртса пĕтерме пулăшаççĕ. Çавăнпа вĕсене час-часах туса ирттеретпĕр.

Суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухăвĕсем лайăх иртесси — ăна ирттерме тĕплĕн хатĕрленнинчен килет. Суйлав округĕсенчи суйлавçăсен пухăвĕсене ял Совечĕн депутачĕсем ирттереççĕ. Ял Совет исполкомĕ депутатсене çакăн пек пухусене ирттерме яланах пулăшать, вĕрентсе пырать. Вĕсене пухусенче докладсем тума хатĕрленме пулăшатпăр. Вĕсем çырса хатĕрленĕ доклад конспекчĕсене пăхса тухса тӳрлетӳсемпе хушусем тăватпăр, пухура мĕн çинчен ытларах чарăнса тăмалли çинчен каласа паратпăр, депутатсене хăйсен ĕçĕсем çинчен отчетсем хатĕрлеме пулăшатпăр. Пухусем ирттернĕ çĕре, хăшпĕр депутатсене пулăшма исполком членĕсене яратпăр.

Ял Совечĕсен ĕç хучĕсемпе ĕçлессине тĕрĕс йĕркелемелле. Çакăн çинчен «Инструкция по делопроизводству в сельских Советах депутатов трудящихся РСФСР» çинче тĕплĕн каласа панă. Ĕç хучĕсемпе ĕçлессине ял Совет исполкомĕ çав брошюрăра кăтартнă пек йĕркелесе пырать. Ял Советне пыракан мĕнпур хутсене ял Совечĕн секретарĕ тӳрех регистрацилет те ял Совет председательне пăхса тухма парать. Ял Совет председателĕ çав хутсем çине пĕр-пĕр ĕçе камăн тата хăш вăхăтра пурнăçламаллине паллă тăвать. Çакăн хыççăн вĕсене пурнăçлама уйрăм çынсем патне çитеретпĕр е исполком ларăвĕнче пăхса тухатпăр. Ял Советне пынă пĕр хут та пăхса тухса пурнăçланмасăр е ответ памасăр юлмасть.

Ял Совечĕсен нумай тĕрлĕ ĕç хучĕсем хатĕрлесе çырмалла пулать: решенисемпе распоряженисем, сводкăсемпе докладной хутсем, тĕрлĕрен удостоверенисемпе справкăсем т. ыт. те. Вĕсем урлă ял Совечĕ учрежденисемпе, организацисемпе, ĕççыннисемпе çыхăнать. Вĕсене яланах

тĕрĕс те йĕркеллĕ, тирпейлĕ çырса хатĕрлетпĕр. Ял Советĕнчен тухса каякан кашни хута регистрацилетпĕр.

Пурнăçа кĕртнĕ ĕç хучĕсене, документсене хронологиллĕ йĕркепе çĕлесе хуратпăр. Çак кирлĕ документа хăвăрт шыраса тупма май парать. Ял Советĕнче темиçе çулхи ĕç хучĕсене тупма пулать.

Колхозниксемпе единоличниксен, рабочисемпе служащисен хуçалăхĕн тĕп производствăллă показателĕсене шута илме ял Совет исполкомĕсем хуçалăх кĕнекине йĕркелеççĕ. Хуçалăх кĕнекине вăхăтра та тĕрĕс çырни кирлĕ. Мĕншĕн тесен вăл кĕнекесем тăрăх хатĕрлев тата финанс органĕсем колхозниксемпе единоличниксем, рабочисемпе служащисем тата ытти граждансен хуçалăхĕсем çине выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем мĕн чухлĕ тумаллине, налогсем мĕн чухлĕ тӳлеме тивĕçлине палăртаççĕ. Хуçалăх кĕнеки çинче пĕр-пĕр хуçалăхăн производствăллă показательне тĕрĕс мар кăтартса парсан, вăл хуçалăхсене хатĕрлев тата финанс органĕсем тĕрĕс мар обязательствăсем пама пултараççĕ.

Колхозниксемпе единоличниксен, рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсен тĕп производствăллă показателĕсене çулталăкра икĕ хутчен шута илсе тухатпăр: январĕн тата июлĕн пĕрремĕшĕсем тĕлне. Çак ĕçе ял Совет исполкомĕн членĕсемпе депутачĕсем туса ирттереççĕ, çавăн пекех ку ĕçе тума хатĕрлев тата финанс органĕсен работникĕсене хутшăнтаратпăр. Ытти вăхăтсенче пĕр-пĕр хуçалăхра çĕнĕ çын хутшăннă е катăлнă, урăх çĕре тухса кайнă е тата ытти улшăнусем пулнă пулсан—çаксене ял Совечĕн секретарĕ çийĕнчех хуçалăх кĕнеки çине паллă тăвать.

Ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерни, вĕсен жалобисемпе çырăвĕсем çине тимлĕн пăхни, ĕçпе пыракан çынсене кăмăллăн йышăнса вĕсен ыйтăвĕсене çийĕнчех татса пани — ял Совет исполкомĕн авторитетне ӳстерет. Ĕççыннисен çырăвĕсене тата жалобисене шута илме ял Совет исполкомĕ уйрăм кĕнеке тунă. Унта ĕççыннисем сăмахпа каланă жалобисене те, хутпа çырса панисене те шута илетпĕр. Çак журналта жалоба параканăн хушамачĕпе ятне, ăçта пурăннине, жалобăна хăçан панине, ăна тĕрĕслеме кама тата хăçан хушнине, хăш вăхăтра тĕрĕслемеллине, жалоба тăрăх тивĕçлĕ ĕçсем тунине, жалоба паракана мĕнле тата хăçан ответ панине паллă тумалли графасем пур. Пĕр-пĕр çын ял Советне жалобăпа пырсанах, ăна çав журнал çине çырса хурат-

пăр, жалоба тăрăх тивĕçлĕ ĕçсем тăватпăр. Пĕр-икĕ тĕслĕх илсе кăтартар-ха. Е. Степанова суйлавçă ял Советне пырса колхозри пулăшу касси хăйĕн çемйине пулăшманни çинчен каласа пачĕ. Жалобăна тĕрĕслеме ял Совет исполкомĕн членне Ф. Игнатьев юлташа хушрăмăр, жалобăна хăш вăхăт тĕлне тĕрĕслемеллине кăтартса патăмăр. Ф. Игнатьев юлташ çак ĕçе тĕрĕслесе тухрĕ. Чăн та Е. Степанова çемйи икĕ уйăх хушши пулăшу кассинчен нимĕнле пулăшу та илмен. Пулăшу кассин председательне вара эпир Е. Степановăна тата ытти çемьесене те вăхăтра тивĕçлĕ пулăшу парасси çинчен кăтартса патăмăр. Çакăн хыççăн пулăшу касси хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ, çар çыннисен çемйисене, вăрçăра вилнисен çемйисене, тăлăхсене пулăшу парса тăрассине кирлĕ пек туса пыма тытăнчĕ.

Илларий Николаев çураласса чĕлхесĕр çуралнă. Виçĕ çулхи ача тăлăха тăрса юлнă. Амăшĕ килте чирлесе вилнĕ, ашшĕ Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче вилнĕ. Вăл кукамăшĕ патĕнче ӳснĕ. Ача 10 çула çитсен, кукамăшĕ ăна чĕлхесĕрсен шкулне яма май çук-ши тесе ял Советне пычĕ. Ял Совет исполкомĕ ачана чĕлхесĕрсен шкулне вырнаçтарма пулăшрĕ. Халĕ ачан кукамăшĕ вăл вĕренекен шкултан ача лайăх вĕренни çинчен çырусем илсе тăрать.

С. Тимофеев суйлавçă «Большевик» колхозри ревкомисси колхозри хăшпĕр уйрăм ĕçсемпе интересленменнине, колхоз пурлăхне çаратма пăхакансемпе начар кĕрешнине кăтартса пачĕ. Çак ĕçе тĕрĕсленĕ хыççăн колхозсенчи ревизи комиссийĕсем мĕнле ĕçленине ял Совет исполкомĕнче сӳтсе яврăмăр. Кун пек тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Иртнĕ çул ĕççыннисенчен 64, кăçалхи икĕ квартал хушшинче 29 жалобăпа çыру пынă. Вĕсене пурне те вăхăтра пăхса тухса ответсем панă, вĕсем тăрăх тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттернĕ.

Чылай чухне ĕççыннисен çырăвĕсемпе жалобисене, заявленийĕсене ял Совет исполкомĕн ларăвĕсенче пăхса тухмалла пулать. Кун пек чухне ĕççыннисен жалобисемпе заявленийĕсене тĕрĕслесе тухма исполком членĕсемпе депутачĕсене хушатпăр. Ĕççыннисене вĕсен жалобисемпе заявленийĕсене исполкомра пăхса тухасси çинчен 3—4 кун малтан çырса пĕлтеретпĕр.

Ĕççыннисем ял Советĕнчи колхоз правленийĕсемпе учрежденисене те жалобăсемпе заявленисем параççĕ. Вĕ-

сем ĕççыннисен жалобисемпе тата çырăвĕсемпе мĕнле ĕçленине куллен тĕрĕслесе тăратпăр. Çак ыйтăва ял Совет исполкомĕн ларăвĕсенче сӳтсе яватпăр.

Ял Совет исполкомне ялсенче социализмла законлăха пурнăçланă çĕрте ялти исполнительсем нумай пулăшаççĕ. Çавăнпа вĕсемпе ĕçлессине те тĕрĕс йĕркелени кирлĕ. Ялти исполнительсене виçĕ уйăхлăха уйăрса лартатпăр. Исполнительсене вĕсем ĕçлемелли вăхăт çитиччен чылай малтан уйăрса вĕсене ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче çирĕплететпĕр. Ĕçлеме тытăниччен вĕсемпе канашлусем туса ирттеретпĕр. Унта вĕсене ялти исполнительсен прависемпе тата обязанноçĕсемпе паллаштаратпăр. Исполнительсем пухусене ирттернĕ чухне ĕççыннисене пуху пуласси çинчен пĕлтереççĕ, ял Совечĕпе унăн исполкомĕ йышăннă решенисене ĕççыннисем патне çитереççĕ, вăл решенисене ĕççыннисем мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеççĕ. Тĕслĕхрен, пушартан сыхланас майпа кашни хуçалăхрах шыв лартасси çинчен йышăннă решение ĕççыннисем патне ялти исполнительсем урлă çитертĕмĕр. Вĕсемех ĕççыннисем çак решение мĕнле пурнăçланине, каçхи ял хуралне мĕнле йĕркеленине тĕрĕслеççĕ. Çуркунне кашни колхозник, рабочипе служащи хуçалăхĕн анкартине пахча çимĕçсемпе кантăр мĕн чухлĕ лартса акмалли плана турăмăр. Çак плана каллех исполнительсем урлă çав хуçалăхсем патне çитернĕ т. ыт. те. Ялти исполнительсем укçа-тенкĕ пухас, государство умĕнчи тĕрлĕ заданисене пурнăçлас ĕçре те ял Совет исполкомне пулăшаççĕ. Ялти исполнительсем эрнере пĕрре ял Совет канцелярийĕнче дежурнăй пулса унта тасалăхпа йĕркелĕхе тытаççĕ, ял Совечĕ учрежденисемпе уйрăм çынсем патне çитермелли хутсене леçсе параççĕ.

Çакăн пек йĕркелетпĕр ял Совет исполкомĕн ĕçĕсене.

## ЯЛ СОВЕЧĔН СЕССИЙĔСЕМ

Советсем — чи демократиллĕ власть органĕсем. Советсен ĕçĕн формисем демократиллĕ принципсенчен тухса тăраççĕ. Ĕççынни депутачĕсен пур Совечĕсем те хăйсен ĕçĕсене сессисем урлă туса пыраççĕ. Ял Совечĕн сессийĕ — депутатсен малтан палăртса хунă вăхăтсенче иртекен пухăвĕ, вырăнти Советсен организациллĕ ĕçĕн тĕп форми пулса тăрать. Ял Советсем хăйсен сессийĕсенче хуçалăхпа культура строительствин паллă, чи кирлĕ

ыйтăвĕсене пăхса тухаççĕ. Совет исполкомĕсем валли чылай вăхăт хушши ĕçлеме тивĕçлĕ решенисем йышăнса хăвараççĕ. Сессисенче халăх тарçисем — депутатсем суйлавçăсен шухăш-кăмăлĕсене, вĕсен сĕнĕвĕсене палăртаççĕ, çавна май вĕсем хăйсен государственнăй обязанноçĕсене тулли те активлăн пурнăçлама пултараççĕ. Эпир ял Совечĕн сессийĕсене Конституцире кăтартнă сроксенче, уйăхра пĕрререн кая мар ирттеретпĕр. Сессисене ăнăçлă ирттересси — ял Совечĕн исполкомĕ, яланхи комиссисемпе депутатсем вĕсене ирттерме мĕнле хатĕрленнинчен килет. Çавăнпа сессисене ирттерме хатĕрленес ĕç çине уйрăммăнах тимлĕн пăхатпăр.

Ял Совечĕн ĕç планне туса сессире çирĕплетнĕ хыççăнах ăна кашни депутат валли çырса паратпăр. Сессисем хăçан пуласссине, вĕсенче мĕнле ыйтусем сӳтсе явассине, сӳтсе явма палăртнă ыйтусене камсем хатĕрленине кашни депутат чылай малтан пĕлсе тăрать. Апла пулин те, сесси пуханиччен пĕр эрне малтан кашни депутата тата сессине чĕннĕ çынсене татах тепĕр хут çырса пĕлтеретпĕр, уйрăм ĕçсем тума хушатпăр. Июнĕн 29-мĕшĕнче пулнă сессире уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленесси çинчен пăхса тухрăмăр. Сесси пуханиччен 10 кун малтан ялхуçалăх комиссийĕн членĕсене тата активистсене колхозсенче уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслеме, ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ И. Дмитриев юлташа содоклад хатĕрлеме порученисем панă. Ялхуçалăх комиссине сесси решени проектне туса хатĕрлесе сессиччен тăватă кун малтан ял Совет исполкомне тăратма сĕннĕ. Культурăпа çутĕç комиссийĕн председателĕ М. Митрофанова юлташпа комисси членĕсене культурăпа çутĕç учрежденийĕсем колхозсене уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре мĕнле пулăшнине тĕрĕслеме, вĕсен ĕçне лайăхлатмалли мероприятисене туса хатĕрлеме поручени панă. Тĕрĕслӳ итогĕсене тата туса хатĕрленĕ мероприятисене сесси пуханиччен тăватă кун малтан ял Совет исполкомне тăратмалла. Ф. Игнатьев тата М. Иванов депутатсене ялти магазинсем, медицина пункчĕ уйри тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме порученисем панă т. ыт. те. Депутатсем государствăн мĕнпур ответлăхне туйса сессие хатĕрленес ĕçсене тума тытăнчĕç. Ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ И. Дмитриев юлташ ял Советĕнчен сесси пуласси тата сессиччен тумалли ĕçсем çинчен çырнă хута илсенех, тума хушнă

ĕçсене пурнăçлама план турĕ. Комисси членĕсене тата активистсене пухса калаçрĕ. Тепĕр кунне ялхуçалăх комиссийĕ Мичурин ячĕпе тăракан колхозра, иккĕмĕш кунне пĕрлешнĕ «Большевик» колхозра уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçсем мĕнле пынине, ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене, витнĕ йĕтемсене юсас, тырă хывмалли амбарсемпе сушилкăсене хатĕрлес ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухрĕ. Уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçе тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă хыççăн, ялхуçалăх комиссийĕ ĕçре чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ, сессин решени проектне çырса хатĕрлесе сессиччен тăватă кун малтан ял Совет исполкомне тăратрĕ. Ялхуçалăх комиссийĕ хăйĕн ĕçне колхозсем уйри тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухнипех вĕçлемест, палăртнă çитменлĕхсене пĕтермелли майсене те тупса парать. Акă, «Большевик» колхозра тĕрĕслӳ итогĕсене сӳтсе явма актив канашлăвне туса ирттернĕ. Канашлура уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене палăртса, вăл çитменлĕхсене пĕтермелли майсене те туса панă. Колхозра ялхуçалăх машинисене юсас ĕç начар тăрать. Тимĕрçĕ лаççинче икĕ тимĕрçĕ кăна ĕçлет. Колхозра тимĕрçĕсем татах пур. Актив канашлăвĕ колхоз правленине колхозри ытти тимĕрçĕсене те ялхуçалăх машинисене юсама явăçтарма кирлине кăтартса пачĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра тĕрĕслӳ итогĕсене малтан колхоз правленин ларăвĕнче, унтан бригадăсенчи колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе явнă. Çапла ялхуçалăх комиссийĕ, сессие хатĕрленнĕ май, колхозсенче уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçе лайăхлатма пулăшрĕ.

Культурăпа çутĕç комиссин председателĕ М. Митрофанова юлташ поручение пурнăçлас шутпа малтан комисси членĕсене пухса калаçрĕ. Унтан комисси ялти тата колхозсенчи клубсен, ялти библиотека, лекторсен группи уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре колхозсене мĕнле пулăшса пынине тĕрĕслесе тухрĕ. Тĕрĕслӳ культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсенче те çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Лекторсен группи те, ялти тата колхоз клубĕсем те колхозниксем валли докладсемпе калаçусем сахал ирттереççĕ, малта пыракансен опытне сарса пымаççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозри клуб стена хаçачĕсемпе боевой листоксем сайра хутра кăларать. Çакăн хыççăн комисси председателĕ ял Совет ис-

полкомне хăйĕн шухăшĕсене каласа пачĕ, культурăпа çутĕç учрежденисен уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнĕ тапхăрти ĕçĕсене лайăхлатмалли мероприятисене туса хатĕрлерĕ.

Ял Совечĕн депутачĕсем те, унăн активĕ те хăйсене тума панă, сесси умĕнхи ĕçсене чыслăн пурнăçларĕç. Вĕсем ялсенчи магазинсем, медицина пункчĕ уйри тырпулсене пухса кĕме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслерĕç. А. Андреева депутат колхозсенче ача яслисем тума, уйра пĕрлешўллĕ апатланассине организацилеме хатĕрленес ĕçсем мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухрĕ. Тĕрĕслў материалĕсене вĕсем ял Совет исполкомне тăратрĕç.

Сесси пуханиччен икĕ кун малтан ял Совет исполкомĕн членĕсене пухса калаçрăмăр. Ялхуçалăх комиссийĕ туса хатĕрленĕ решени проектне, культурăпа çутĕç комиссийĕ туса хатĕрленĕ мероприятисене, депутатсемпе активистсем панă сĕнўсене пăхса тухрăмăр. Çакна эпир сессие тĕплĕнрех хатĕрленес шутпа тунă. Пĕтĕм материалсене пăхса тухса, ялхуçалăх комиссийĕ туса хатĕрленĕ решени проектне анлăлатрăмăр, конкретлăрах, культурăпа çутĕç комиссийĕ хатĕрленĕ мероприятисемпе депутатсен сĕнĕвĕсене пĕрлештерсе çыртăмăр. Туса хатĕрленĕ проекта ял Совечĕн секретарĕ кашни депутат валли çырса хатĕрлерĕ. Ăна сесси пулнă кун кашни депутат аллине панă. Ял Совечĕн кашни сессине иртгерме çакăн пек йĕркепе хатĕрленетпĕр. Çакă ял Совечĕн исполкомне те, депутатсене те колхозсенче, бригадăсенче, фермăсенче, шкулсенче, культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче, медицина пунктĕнче тата ытти çĕрте те ĕçсем мĕнле тăнине лайăх пĕлме май парать. Çавăнпа депутатсем пăхса тухма палăртнă ыйтусене сўтсе явнă чухне яланах активлă хутшăнаççĕ, ĕç çинчен лайăх пĕлсе тухса калаççĕ, практикăллă сĕнўсем параççĕ, çитменлĕхсене хытă критиклеççĕ.

Сессисене пур чухне те планра палăртнă кунсенче иртеретпĕр. Сессин кун йĕркине тата регламента çирĕплетнĕ хыççăн, доклад тума сăмах докладчика, унтан содокладчика паратпăр. Çак сессире докладчик уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçри задачăсем, колхозсемпе бригадăсенче уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕç мĕнле тăни çинчен тĕплĕн каларĕ. Ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ И. Дмитриев юлташ содоклад турĕ. Вăл сессире колхозсенче уйри тырпулсене пухса

кĕртме хатĕрленес ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене уçса пачĕ. Пĕрлешнĕ «Большевик» колхозра уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленмелли тата ирттермелли плана туман, колхозниксем уй-хирте кам тата мĕн ĕçлемеллине пĕлмеççĕ. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене, витнĕ йĕтемсене, авăнсене, сушилкăна юсаса çитермен. Вăл «Большевик» колхоз председателĕ Н. Иванов юлташ уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçсемпе çителĕксĕр ертсе пынине хытă критиклерĕ.

Сессире 14 депутатран 8 депутат тата сессие чĕннисем 5 çын тухса каларĕç. Ф. Игнатьев депутат уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленессине тата ăна ирттерессине çирĕп план тăрăх туса пымаллине, кашни колхозник уй-хирти ĕçсем вăхăтĕнче ăçта ĕçлемеллине халех палăртма кирлине кăтартса пачĕ. Уйрăм бригадăсенче уйри тырпулсене пухса кĕртме начар хатĕрленнине хытă критиклерĕ. А. Романов депутат колхозсен ялхуçалăх машинисене, витнĕ йĕтемсене, сушилкăсене халех хатĕрлесе çитерме кирлине кăтартса пачĕ, çак ĕçсем юлса пынине критиклерĕ. А. Андреева депутат колхозсенче ача яслисем организацилес ĕç питех те япăх тăнине, çак ĕçе колхозсен халех тытăнмаллине паллă турĕ. М. Иванов, Я. Захаров депутатсем колхозсенче ĕç лашисене, уйрăммăнах жнейкăпа ĕçлемелли лашасене япăх хатĕрленине, государство склачĕсене тырă турттарма транспорт бригадисем организацилеменнине критиклерĕç. М. Митрофанова депутат уйри тырпулсене пухса кĕртме, государствăна тырă пама хатĕрленнĕ тапхăрта культурăпа çутĕç учреждениййĕсен ĕçне лайăхлатмаллине, ялти библиотекăра ялхуçалăх кĕнекисем тăрăх вулакансен конференцине ирттерме, уйри тырпулсене пухса кĕртесси çинчен калакан кĕнекесен выставкине, витринисене тума кирлине кăтартса пачĕ. Чылай депутатсемпе сессине чĕннĕ юлташсем уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнĕ тата пухса кĕртнĕ тапхăрта ирĕклĕ пушар дружинисен ĕçне лайăхлатма кирлине паллă турĕç, уй-хирти ĕçсем пуçланиччен колхозсенче туса çитермелли ĕçсене хăвăртлатасси çинче чарăнса тăчĕç.

Депутатсем сессире пăхса тухма лартнă ыйтăва ĕçлĕ те пур енлĕ сӳтсе яврĕç, лайăх сĕнӳсем пачĕç. Сесси сӳтсе явнă ыйту тăрăх конкретлă решени йышăнчĕ. Сесси хыççăнах депутатсем сесси решенине колхозниксем хушшинче ăнлантарассине, вăл решени мĕнле пурнăçланса

пынине тĕрĕслесе тăрассине организацилерĕç. Сесси решенине пурнăçлас майпа çак ыйтăва колхоз правленисен ларăвĕнче сӳтсе-явнă, ăна ăнлантарса пама бригадăсенче колхозниксен пухăвĕсене туса ирттернĕ.

Ял Совечĕн сессийĕ хыççăн колхозсемпе бригадăсенче уйри тырпулсене пухса кĕртме, государствăна тырă пама хатĕрленес ĕçсем чылай лайăхланчĕç. Кашни колхозрах уйри тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленмелли тата ăна ирттермелли плансене туса ăна колхозниксен пĕрлехи тата бригадăсенчи пухусенче сӳтсе явнă. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене, тырă хывмалли амбарсене, витнĕ йĕтемсемпе авăнсене, сушилкăсене юсас ĕçсем калкаллăн пулса пычĕç. Государствăна тырă пама кашни колхозрах транспорт бригадисем тунă. Ĕç лашисене, уйрăммăнах жнейкăсемпе ĕçлемелли лашасене тăрантарса пăхассине лайăхлатнă. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем те хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Ялти библиотекăра кĕнекесен выставкине — витринине тунă, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларассине лайăхлатнă. Колхозниксем хушшинче докладсемпе калаçусем ытларах ирттернĕ. Çапла колхозсем уйри тырпулсене пухса кĕртме пуренчен те тĕплĕн те кăтартуллăн хатĕрленсе çитнипе тухрĕç.

Кăçалхи икĕ квартал хушшинче ял Совечĕн сессийĕсене 7 хут туса ирттернĕ. Вĕсенче пурĕ 12 ыйту: çуракине хатĕрленесси, шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçĕ, социализмла ăмăрту, çураки итогĕсемпе уйри тырпулсене пăхса çитĕнтересси, яланхи комиссисен, ял бюджетне, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлани, исполком ĕçĕсем çинчен тата ыттисене те сӳтсе явнă. Вĕсене кашнинех çак малтан кăтартса панă тĕслĕхри пек хатĕрленсе ирттернĕ.

## ЯЛАНХИ КОМИССИСЕМ

Ял Совечĕсен ялти хуçалăхпа культура строительствине ертсе пымалла. Çак пысăк та ответлă задачăна ял Совечĕсем ĕççыннисен анлă массипе таччăн çыхăнса ĕçлесен çеç вăхăтра та ăнăçуллăн, кирлĕ пек пурнăçлама пултараççĕ.

Сталин юлташ ВКП(б) XV-мĕш съездĕнче тунă отчетлă докладра государство аппарачĕн пĕлтерĕшĕ çинчен çапла калать: «Пирĕн государство аппарачĕн вăйĕ мĕнре-ха? Унăн вăйĕ çакăнта: вăл влаçа Советсем урлă

рабочисемпе хресченсен миллионшар массине çыхăнтарать. Советсем вĕсем вуншар, çĕршер пин рабочисемпе хресченсемшĕн управлени ĕçне вĕренмелли шкулсем пулса тăраççĕ. Государство аппарачĕ халăхăн миллионлă массисенчен уйрăлса тăмасть, вăл советсем тавра пĕтĕçнĕ тата çавна май власть органĕсене тĕрек паракан нумай йышши массăллă организацисем, тĕрлĕрен комиссисен, секцисен, канашлусен, делегатсен пухăвĕсем урлă массăпа пĕтĕçсе тăрать».

Депутатсене, актива, массăсене ял Совечĕсен ĕçне хутшăнтарма тĕрлĕ майсем пур. Çав лайăх майсенчен пĕрийĕ вăл — Сталин юлташ каланă пек — ял Совечĕн яланхи комиссийĕсем пулса тăраççĕ. Яланхи комиссисем ял Советне тата унăн исполнительнăй комитетне халăхпа çыхăнтарса тăраççĕ, хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи чи паха задачăсене пурнăçлама вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк майсем туса параççĕ. Кĕскен каласан яланхи комиссисем ял Совечĕн халхипе куçĕ пулса тăраççĕ.

Ял Совечĕн яланхи комиссийĕсем виççĕ: ялхуçалăх, культурăпа çутĕç, финанспа бюджет комиссийĕсем. Яланхи комиссисен пĕр кăçалхи ĕçĕсене кăна пăхса тухсан, вĕсем ял Советне ĕçре питех те пысăк пулăшу панине курма пулать. Ялхуçалăх комиссийĕн ĕçĕсене илсе кăтартар-ха. Çак комисси колхозсене пĕтĕм ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пыма, тухăçлă тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх йышне, вĕсен продуктивлăхне ӳстерсе пыма пулăшать. Çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра комисси членĕсемпе активистсем колхозсенче ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене юсас, вăрлăхсене сортласа сыхласа усрас, ака-суха ĕçĕсене тума лашасем хатĕрлес ĕçсем мĕнле тăнине икĕ хутчен тĕрĕслесе тухрĕç. Пĕр хутчен сăнавлă туху туса ирттернĕ. Тĕрĕслӳ тата сăнавлă туху итогĕсене кашни хутĕнчех колхозсенчи актив канашлăвĕсенче сӳтсе явнă. Çуракине тухиччен пĕр эрне малтан ялхуçалăх комиссийĕ ял Совет исполкомĕпе пĕрле çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен бригадăра, çав бригадăн çуракине хатĕрленес ĕçри опычĕпе паллаштарас майпа, колхоз председателĕсемпе бригадирсен канашлăвне туса ирттерчĕ. Çавнашкал канашлăвах, унăн ĕçри çитменлĕхĕсене пĕтерме пулăшас майпа, юлса пыракан бригадăра та туса ирттернĕ. Çак ĕçсем колхозсемпе бригадăсенче çуракине хатĕрленес ĕçе лайăхлатма пулăшрĕç.

Çураки вăхăтĕнче комисси членĕсемпе активистсем колхозсем çуракине мĕнле ирттернине тăтăшах тĕрĕслесе тăчĕç, колхоз правленийĕсемпе бригадирсене ĕçре пулакан çитменлĕхсене пĕтерме, ака ĕçĕсене тĕрĕс организацилеме пулăшса пычĕç.

Ялхуçалăх комиссийĕ колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вĕсен продуктивлăхне хăпартас тĕлĕшпе те сахал мар ĕçсем турĕ. Колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плансене мĕнле пурнăçласа пынине, фермăсенче учет ĕçне мĕнле туса пынине кăçал икĕ хутчен тĕрĕслесе тухрĕ. Тĕрĕслӳ итогĕсене ял Совет исполкомĕн ларăвĕсенче сӳтсе явнă. Калас пулать, çак ĕçе куллен тĕрĕслесе тăни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, фермăсенчи учет ĕçне чылай лайăхлатма пулăшрĕ. Ял Советне кĕрекен колхозсем юлашки виçĕ çул хушшинче пур выльăхсем енĕпе те плана ирттерсе тултарнă.

Çĕрĕç культурине малалла ӳстерсе пыни — пысăк тухăçлă тырпул туса илме, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатнăçемĕн вăйлатма лайăх майсем туса парать. Çĕрĕç культурине лайăхлатса пымалли майсенчен пĕри вăл — кĕрхи çĕртмепе хура çĕртме тумалли плансене вăхăтра тултарни пулать. Наука та, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕ те агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх вăхăтра туса хăварнă кĕрхи çĕртме тырпул тухăçлăхне нумай ӳстерме, çуракине хăвăрт та пысăк пахалăхпа ирттерме пулăшнине çирĕплетсе парăççĕ. Ял Совечĕн ялхуçалăх комиссийĕ çĕрĕç культурине малалла ӳстерсе пырассишĕн те çине тăрса кĕрешет. 1948—1949 çулсенче колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плансене тултарман. Çакă çуракине вăраха тăсасси, çапла вара тырпул тухăçлăхне чакарасси патне илсе пынă. Ялхуçалăх комиссийĕ çак ыйтăва 1950 çулти хĕллех хускатрĕ. Комисси членĕсемпе активистсем колхозниксем хушшинче кĕрхи çĕртме тырпул тухăçлăхне хăпартмалли май пулса тăни çинчен докладсемпе калаçусем ирттерчĕç. Кĕрхи çĕртме туса хăварнă лаптăксем çинчен тухăçлă тырпул туса илнине вырăнти фактсемпе кăтартса пачĕç. Колхозсенче çуртрисене йăлтах кĕрхи çĕртме туса хăварнă участоксем çине акмалла тăвасси пирки сӳтсе явма комисси ял Совет исполкомне сĕнӳ пачĕ. Çак ыйтăва исполком ларăвĕнче сӳтсе яврăмăр. Ялхуçалăх комисси членĕсем колхозсенче кĕрхи çĕртме сухи тăвас

ĕç мĕнле тăнине, унăн пахалăхне куллен тĕрĕслесе тăчĕç. Комисси членĕсемпе активистсем колхоз правленийĕсемпе бригадирсене ĕçре пулакан çитменлĕхсене пĕтерсе пыма, кĕрхи çĕртме сухи тăвакан колхозниксемпе трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшса пычĕç. Колхозсем 1950 çулхи кĕркунне 1951 çулхи çуркунне çуртрисем акмалли пĕтĕм лаптăк çинче кĕрхи çĕртме туса хăварчĕç. Кăçал колхозсем çурхи тырăсене иртнĕ çулхинчен чылай тухăçлăрах пухса илчĕç. Иртнĕ çулхи ĕç опычĕ нумая вĕрентрĕ. Кăçал тырпул пухса кĕртес ĕç пынă вăхăтрах, ялхуçалăх комиссийĕн членĕсем колхоз правленисене кĕрхи çĕртме тумалли плана вăхăтра тултарма çителĕклĕ майсем пуррине кăтартса пачĕç. Акă «Большевик» колхозра туртăм вăйĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçсене тунипе пĕрлех, кĕрхи çĕртме сухине тума та çитет. Апла пулсан кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра тума май пур. Çакăн çинчен ялхуçалăх комиссийĕ колхоз правленине каласа пачĕ. Çакăн хыççăн колхоз правленийĕ уйри тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтрах, кĕрхи çĕртме сухине тăвассине йĕркелерĕ. Комисси колхозсенче кĕрхи çĕртме сухи тăвас ĕç мĕнле пулса пынине куллен тĕрĕслесе тăчĕ. Кĕрхи çĕртме тума тытăннă малтанхи кунсенче агротехникăна пăсни — ăшăх тата тракторсем предплужниклă плугсăр сухалани пулнă. Çакăн çинчен ялхуçалăх комиссийĕ ял Совет исполкомне каласа пачĕ. Исполком çак çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнчĕ.

Партипе правительство, Сталин юлташ тăрăшнипе пирĕн çĕршывра ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсем валли ăста кадрсем хатĕрлеме лайăх майсем туса панă. Иртнĕ çул колхозсенче агротехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем организацилеме йышăнни калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Ăна пурнăçлани çĕрĕç культурине малалла хăвăрт ӳстерсе пыма, ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене хăвăрт аталантарса пыма кирлĕ. Ялхуçалăх комиссийĕпе активистсем колхоз правленисене агротехника курсĕсене организацилеме, курссен составне суйласа илме, вĕренӳ ĕçне лайăхлатма, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшрĕç. Пĕррехинче ялхуçалăх комиссийĕн членĕсем виçĕ çуллăх агротехника курсĕнче вĕренекенсене ялти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем, лекторсен группи сахал пулăшни çинчен каласа пачĕç. Вĕ-

сем çĕрĕç культурине ÿстересси çинчен, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕ çинчен лекцисемпе докладсем сайра хутра çеç ирттереççĕ. Агротехника курсĕсем теорие выранти практикăллă ĕçсемпе çителĕксĕр çыхăнтараççĕ. Ялти библиотека та, ялти клуб та агротехника курсĕнче вĕренекенсене пулăшма выранти çитĕнÿсене кăтартакан экспонатсемпе диаграммăсем хатĕрлеме пултарать. Комисси хускатнă ыйтăва ялхуçалăх тата культурăпа çутĕç комиссийĕсен членĕсен пĕрлехи канашлăвĕнче пăхса тухрăмăр. Канашлăва культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсене, лекторсен группин руководительне, ялхуçалăх специалисчĕсене чĕнтĕмĕр. Ялхуçалăх комиссийĕ палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине кăтартса патăмăр. Канашлу хыççăн çак çитменлĕхсем пĕтсе пычĕç. Лекторсен группи агротехника курсĕнче вĕренекенсене пулăшас майпа мĕнле лекцисем ирттермелли плана турĕ, лекцисен пахалăхне лайăхлатрĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем агротехника курсĕсене вĕренÿре кирлĕ пулакан тĕрлĕ пособисем, выранти çитĕнÿсене кăтартакан экспонатсемпе диаграммăсем хатĕрлесе пачĕç. Колхозсенче агротехника курсĕсем мĕнле ĕçлени çинчен ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче пăхса тухнă. Кунта çав курссен руководителĕсене занятисенче вĕренÿ пахалăхне пĕрмаях лайăхлатса пыма, теорие выранти практикăллă ĕçсемпе çыхăнтарма, малта пыракансен опытне пĕтĕçтерме кирлине кăтартса панă.

Финанспа бюджет комиссийĕ те хăйĕн ĕçне пĕлсе йĕрклерĕ. Вăл ял Советне укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас, ял бюджетне пурнăçлас ĕçсенче пысăк пулăшу парать. Комисси хăйĕн членĕсене тата активистсене уйрăм участоксем тăрăх çирĕплетсе тухнă. Вĕсем хăйсен участокĕсенче колхозниксем, рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăраççĕ, коммунизмăн аслă стройкисене тунă çĕрте укçа-тенкĕ мĕнле выран йышăнни, ял Совечĕпе унăн исполкомĕ укçа-тенкĕпе бюджет тĕлĕшпе йышăннă решенисем çинчен каласа ăнлантараççĕ. Çакăнта пулать те ĕнтĕ ял Совечĕ укçа-тенкĕ планне тултарса пыни.

Ял Совечĕн пĕр сессийĕнче ял бюджетне çирĕплетрĕмĕр. Ăна мĕнле пурнăçласа пынине пăхса тухрăмăр. Сессире депутатсем уйрăм участоксенче укçа-тенкĕ пухас ĕç юлса пынине, финанспа бюджет комиссийĕн çак

участоксенче ытларах ĕçлеме кирлине кăтартса пачĕç. Сесси хыççăн финанспа бюджет комиссийĕн членĕсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе анлăн сарса ячĕç, сесси йышăннă решенисем çинчен каласа пачĕç. Çакăн хыççăн укçа-тенкĕ пухас ĕç чылай лайăхланчĕ. Чылай колхозниксем июнь уйăхĕнчех çĕнĕ ялхуçалăх налогне аванс шучĕпе тӳлеме пуçларĕç. Налог хунă тĕле çĕнĕ ялхуçалăх налогне 33 пин тенкĕ пухнă. Финанспа бюджет комиссийĕ çĕнĕ заем сарса укçине пухас тĕлĕшпе те чылай ĕçлерĕ. Çĕнĕ заем тухнине радиопа итлесенех комисси членĕсемпе активистсем колхоз хресченĕсем хушшинче коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, социализмла çĕршывăн хуçалăхĕ ӳсни, ĕççыннисен пурнăçĕ пĕрмай лайăхланса пыни çинчен, ку тĕлĕшпе совет заемĕсем пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каласа пачĕç. Бюджетпа палăртнă тăрăх çĕнĕ заема хресченсем хушшинче 60 пин тенкĕ сармалла пулсан, икĕ кун хушшинчех 63 пин тенкĕлĕх сарнă. Çакăн пек калаçусене комисси членĕсемпе активистсем вăхăтран вăхăта мар, пур чухне те, пур çĕрте те туса пыраççĕ. Çакă вара заем укçине пухас ĕçе те лайăхлатма май пачĕ. Заем укçине май уйăхĕнчех çуррине ытла пухнă.

Çакăнпа пĕтмест-ха финанспа бюджет комиссийĕн ĕçĕ. Комисси членĕсем ĕççыннисене ялхуçалăх налогĕн тата ытти налогсен законĕсем, правительство паракан льготăсем çинчен каласа ăнлантараççĕ, ĕççыннисене финанс органĕсем тĕрлĕрен налогсене мĕнле хурса панине тĕрĕслеççĕ, финанс агентне ĕçре пулăшаççĕ, унăн ĕçне тĕрĕслеççĕ.

Комисси ял бюджечĕ мĕнле пурнăçланса пынине те тăтăшах тĕрĕслесе тăрать. Кашни уйăх вĕçĕнчех комисси членĕсем ял бюджечĕ мĕнле пурнăçланса пынине комисси ларăвĕнче пăхса тухаççĕ, хăйсен вывочĕсемпе сĕнĕвĕсене каласа параççĕ. Ял бюджетне пурнăçлас ĕç мĕнле пулса пынине куллен тĕрĕслесе тăни — укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарма, ял бюджетне пурнăçлама пулăшать. Пирĕн ял Совечĕ бюджетра тăракан учреждениисене яланах бюджетпа пăхнă чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрса парать.

Культурăпа çутĕç комиссийĕ те, ытти комиссисем пекех, хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать. Комисси хăйĕн активĕ урлă ĕççыннисене ял Совечĕн культура строительстви тĕлĕшпе пулмалли ĕçсене пурнăçлама мобилизацилет,

культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен, шкулсен, медицина пункчӗн ӗҫӗсене тӗрӗслет, ял Совечӗпе унӑн исполкомӗ шкулсем, культурӑпа ҫутӗҫ, медицина учрежденийӗсен ӗҫӗсем тӗлӗшпе йышӑннӑ решенисем мӗнле пурнӑҫланнине куллен асӑрхаса тӑрать. Пирӗн ялти клуб та, библиотека та районра малта пыракан культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсенчен пӗрийӗ пулаҫҫӗ. Ҫакна тӑвас ӗҫре, паллах, культурӑпа ҫутӗҫ комиссийӗ нумай вӑй хунӑ. Пӗр кӑҫал кӑна ҫутӗҫ комиссийӗ актив канашлӑвӗсене 7 хут, ял Совечӗн исполкомӗпе пӗрле ял Советӗнчи интеллигенцин пухӑвне 3 хутчен туса ирттернӗ. Канашлусемпе пухусенче ялсенчи культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен ӗҫҫыннисене коммунистла воспитани парас ӗҫӗсене лайӑхлатас ыйтусене сӳтсе явнӑ. Комисси ҫакӑн пек канашлусене ирттерме лайӑх хатӗрленет. Канашлу е пуху пуличчен темиҫе кун малтан унта пухӑнмалли ҫынсене пӗлтерет. Комисси председателӗ М. Митрофановӑпа комисси членӗсем ӗҫҫыннисем мӗнле докладсемпе лекцисем итлеме кӑмӑлланине ыйтса пӗлеҫҫӗ, клубсемпе библиотекӑсен ӗҫӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе ӗҫҫыннисем паракан сӗнӳсене пухаҫҫӗ. Ҫаксене пӗтӗмпех канашлусенче сӳтсе явса, ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе мӗн-мӗн тумаллине палӑртаҫҫӗ. Ҫакӑнта пулать те ӗнтӗ ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ. Кӑҫалхи 6 уйӑх хушшинче культурӑпа ҫутӗҫ комиссийӗ тата активистсем ӗҫҫыннисем валли тӗрлӗрен темӑсемпе 23 лекци, 43 доклад, нумай калаҫусем ирттернӗ.

— Пирӗн тӗллевсем паллӑ. Эпир хамӑрӑн вӑй нумаййине туятпӑр, мӗншӗн тесен пире ӗҫре халӑх пулӑшать, мӗншӗн тесен эпир халӑхшӑн ӗҫлетпӗр, — тет культурӑпа ҫутӗҫ комиссийӗн председателӗ М. Митрофанова юлташ. Чӑн калать. Комисси яланах хӑйӗн ӗҫне халӑхпа тӑвать, халӑх ыйтнӑ пек тӑвать, халӑхран ӗҫлеме вӗренет, хӑйӗн мӗнпур ӗҫне халӑхшӑн тӑвать.

Яланхи комиссисем хӑйсен ӗҫне, умра тӑракан задачӑсене тарӑнӑн шухӑшласа, ял Совечӗн ӗҫ планӗпе килӗшсе тунӑ план тӑрӑх ӗҫлесен ҫеҫ тӗрӗс те вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртме пултараҫҫӗ. Ҫакна яланхи комиссисем лайӑх ӑнланнӑ. Вӗсем кашни квартал валлиех ӗҫ планӗсем тӑваҫҫӗ. Комиссисем хӑйсен ӗҫ планӗсене ҫак йӗркепе тӑваҫҫӗ: малтанхи графара ӗҫе хӑҫан тумаллине, иккӗмӗшӗнче мӗн пулмаллине, виҫҫӗмӗшӗнче организациллӗ мероприятисене, юлашки графара ӗҫшӗн ответлӑ пулакан ҫынсене палӑртаҫҫӗ. Плансене яланах ял Совечӗн

ĕç планĕпе килĕшсе тăваççĕ. Тĕслĕхрен, ялхуçалăх комиссийĕ июнь уйăхĕнчи ĕç планне мĕнле тунине илсе кăтартар. Ял Совечĕн планĕ тăрăх июнĕн 8-мĕшĕнче ял Совет исполкомĕ колхозсенче тырпулсене çумкурăксенчен тасатас ĕç мĕнле пынине пăхса тухать. Çак ĕç колхозсенче мĕнле тăнине тĕрĕслеме тата лару решенин проектне хатĕрлеме ялхуçалăх комиссине палăртнă. Ялхуçалăх комиссийĕ çакна хăйĕн планне кĕртнĕ. Планпа вăл июнĕн 3—5-мĕшсенче колхозсенче уйри тырпулсене çумкурăксенчен тасатас ĕç мĕнле тănине тĕрĕслет. Тĕрĕслеве «Большевик» колхозра комисси членĕ Л. Савельева тата активист И. Васильев, Мичурин ячĕпе тăракан колхозра комисси председателĕ И. Дмитриев, комисси членĕ К. Иванова тата активист Ф. Кондратьев юлташсем туса ирттереççĕ. Июнĕн 6-мĕшĕнче комисси ларăвне туса ирттермелле. Унта тĕрĕслӳ итогĕсене пĕтĕçтерсе исполком ларăвĕн решени проектне çырса хатĕрлеме палăртнă т. ыт. те. Ял Совечĕн ытти комиссийĕсем те хăйсен ĕç планĕсене ял Совечĕн ĕç планĕпе килĕшсе тăваççĕ. Ĕç планĕсене туса хатĕрленĕ хыççăн комисси председателĕсем хăйсен членĕсене тата активистсене хăш вăхăт тĕлне мĕн тумаллине çырса пыраççĕ, ĕçе тунине куллен тĕрĕслесе ыйтса тăраççĕ. Çакăнта пулать те ĕнтĕ комиссисем тунă план вăхăтра пурнăçа кĕни.

Комиссисен ĕçне лайăхлатма вĕсен ларăвĕсене вăхăтра ирттермелле, комиссисем хăйсен ларăвĕсене планпа кăтартнă сроксенче тата лайăх хатĕрленсе ирттереççĕ. Кăçалхи 6 уйăх хушшинче ялхуçалăх комиссийĕ хăйĕн ларăвĕсене 11 хут, культурăпа çутĕç комиссийĕ 10 хут, финанспа бюджет комиссийĕ 7 хут туса ирттернĕ. Вĕсенче комиссисем тĕрĕслӳ итогĕсене пăхса тухаççĕ. Ял Совечĕн сессийĕ е исполкомĕ йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе мĕнле организацилесси çинчен калаçса татăлаççĕ, тĕрĕслеве мĕнле йĕркелемелли çинчен сӳтсе яваççĕ, юлса пыракан участокри ĕçе лайăхлатмалли мероприятисене, сесси тата исполком ларăвĕн решенин проекчĕсене туса хатĕрлеççĕ т. ыт. те. Культурăпа çутĕç комиссин ларăвĕсене илер-ха. Планпа лару пулмалли кун çинчен комисси председателĕ малтанах хăйĕн членĕсемпе активистсене çырса пĕлтерет. Унта лару хăш вăхăтра, ăçта пулса иртмеллине, мĕнле ыйтусем пăхса тухмаллине, вĕсене камсем хатĕрленине пĕлтерет. Çапла комисси членĕсем ларура мĕнле ыйтусем сӳтсе явассине

малтанах пӗлсе тӑраççӗ, хӑйсем хатӗрлемелли ыйтусене, хӑйсен сӗнӗвӗсене хатӗрлеççӗ.

Ял Совет исполкомӗпе таччӑн çыхӑнса ӗçлекен, хӑйсен пуçаруне пурнӑçланӑ çӗрте исполкомран пулӑшу илсе тӑракан яланхи комиссисем кӑна лайӑх ӗçлеме пултараççӗ. Пирӗн ял Совечӗн яланхи комиссийӗсем кирек мӗнле ӗç тумалла пулсан та, яланах ял Совечӗн исполкомӗпе калаçса татӑлаççӗ, килӗшеççӗ. Культурӑпа сутӗç комиссийӗ ялти учрежденисен тасалӑхӗпе культурине тӗрӗслеме шутланӑ. Çавӑн çинчен комисси председателӗ ял Совет исполкомне каласа пачӗ. Лайӑх пуçару. Çак пуçарӑва пурнӑçланӑ çӗрте комиссие пулӑшма ял Совет исполкомӗн членӗ М. Иванов юлташа хушрӑмӑр. Вӗсем çак ӗçе пӗрле турӗç, учрежденисен тасалӑх тӗлӗшӗнчи çитменлӗхӗсене палӑртрӗç. Çак комиссиех, шкулсенчи вӗренӳпе воспитани ӗçне лайӑхлатас майпа, ялсенче шкул ачисен ашшӗ-амӑшӗсен пухӑвӗсене ирттерме шутланине каласа пачӗ. Çак пуçарӑва пурнӑçланӑ çӗрте комиссие практикӑллӑ пулӑшусем пама каллех ял Совет исполкомӗн членӗсене хушнӑ. Çапла яланхи комиссисем хӑйсен пуçарулӑхӗсене пурнӑçланӑ çӗрте ял Совет исполкомӗнчен пысӑк пулӑшу илеççӗ, кирек мӗнле ыйтӑва та ял Совечӗн исполкомӗпе килӗшсе тӑваççӗ.

Яланхи комиссисен ӗçӗсене лайӑхлатма ял Совет исполкомӗн ларӑвӗсем те нумай пулӑшаççӗ. Исполком ларӑвӗсенче яланхи комисси председателӗсемпе членӗсем ларусем иртерес практикӑпа паллашаççӗ, ял Совет исполкомне хӑйсем тӑратакан ыйтусене лартма сӗнӳ параççӗ. Çавӑнпа та ял Совет исполкомӗ яланхи комиссисен председателӗсене яланах хӑйӗн ларӑвӗсене чӗнет.

Яланхи комиссисен ӗçри ӑнӑçлӑхӗ актив пулӑшнинчен, вӗсем актив çине тайӑнса ӗçленинчен нумай килет. Çавӑнпа яланхи комиссисем хӑйсен активне тӑвас тӗлӗшпе нумай ӗçлерӗç. Ялхуçалӑх комиссийӗн активне 33 çынна, финанспа бюджет комиссийӗн активне 27 çынна, культурӑпа сутӗç комиссийӗн активне 31 çынна явӑçтарнӑ. Яланхи комиссисем хӑйсен активӗпе ӗçлеççӗ. Вӗсемпе час-часах канашлусем туса ирттереççӗ. Çавӑн пек канашлусенче комиссисем хӑйсен ӗç планӗсемпе, лайӑх тӗслӗх кӑтартса ӗçлекен активистсен ӗçӗсемпе, ял Совечӗ умӗнче тӑракан задачӑсемпе тата унӑн решенийӗсемпе паллаштараççӗ.

Яланхи комиссисен пӗтӗм ӗçне тӗрӗс йӗркелеме ял

Совечӗсен хӑйсен пулӑшса, вӗрентсе пымалла. Пирӗн ял Совечӗ яланхи комиссисен ӗҫӗсене лайӑхлатас, вӗсен ӗҫне тӗрӗс организацилес майпа сессисенче пӗрмаях вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен ыйту лартса сӳтсе явать. Тӗслӗхрен, кӑҫалхи апрель уйӑхӗнче пулнӑ сессире ялхуҫалӑх комиссийӗн, май уйӑхӗнче культурӑпа ҫутӗҫ, июнь уйӑхӗнче финанспа бюджет комиссийӗсен ӗҫӗсем ҫинчен ыйту лартса сӳтсе явнӑ. Ҫапла туни ял Совечӗн пӗтӗм депутачӗсене комиссисен ӗҫне пур чухне те лайӑх пӗлсе тӑма, вӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене, туса ҫитереймен ӗҫсене вӑхӑтра кӑтартса пама май парать. Кунсӑр пуҫне комисси председателӗсемпе тата вӗсен членӗсемпе канашлусем туса ирттеретпӗр. Ҫав канашлусенче комиссисен пӗр-пӗр тапхӑрти ӗҫӗсем, малашнехи задачӑсем ҫинчен сӳтсе яватпӑр. Июлӗн 5-мӗшӗнче ял Совечӗн исполкомӗ пӗтӗм комиссисен членӗсене тата активистсене пухса канашлу туса ирттерчӗ. Канашлура яланхи комиссисен ҫур ҫул хушшинче тунӑ ӗҫӗсене тата вӗсем умӗнче тӑракан малашнехи ӗҫсене пӑхса тухрӑмӑр. Ҫак мероприятисем вӗсем яланхи комиссисен ӗҫӗсене лайӑхлатса пыма пулӑшаҫҫӗ. Чылай чухне комиссисен председателӗсемпе вӗсен членӗсене ял Советне чӗнсе уйрӑм ӗҫсем тума хушатпӑр. Ҫав ӗҫе мӗнрен тытӑнмаллине, мӗнле тумаллине каласа паратпӑр.

Яланхи комиссисемпе депутатсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫсене тӳрре кӑларас тесе государствӑн пӗтӗм ответлӑхне туйса ӗҫлеҫҫӗ. Яланхи комиссисемпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлес тӗлӗшпе ку таранччен тунӑ практикӑллӑ ӗҫсем ял Советне умра тӑракан задачӑсене чыслӑн пурнӑҫлама пулӑшрӗҫ. Ҫак ҫыхӑнӑва ҫирӗплетсе тата анлӑлатса пырса ял Совечӗн ӗҫне татах лайӑхлатма ӗмӗтленетпӗр.

## АКТИВ — ЯЛ СОВЕЧӖН ТӖРЕКӖ

Ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем государство влаҫӗн чи йышлӑ, чи массӑллӑ органӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Советсем урлӑ коммунистсен партийӗ массӑсене государствӑна тытса пырас ӗҫре тӳрремӗнех тата активлӑн хутшӑнтарать. Массӑсен опычӗпе пуҫаруллӑхӗ ҫине таянса ӗҫлесе, Советсем вырӑнти резервсене тупса палӑртаҫҫӗ, вӗсене хуҫалӑхпа культура строительствине яраҫҫӗ. Сталин юлташ ҫапла вӗрентет: «Советсем вӗсем массӑсен **тӳрремӗнех** хӑйсем тунӑ организацийӗсем, урӑхла ка-

ласан, чи демократиллӗ тата, ҫапла вара, массӑсен чи авторитетлӑ организацийӗсем пулса тӑраҫҫӗ; ҫав организацисем массӑсене ҫӗнӗ государство туса йӗркелесе тата ӑна тытса пырас ӗҫе хутшӑнма питех те хытӑ ҫӑмӑллатаҫҫӗ... массӑсен революциллӗ хастарлӑхне, творчествӑллӑ пултарулӑхне питех те анлӑн сарса яраҫҫӗ»[1]. Актив — ял Совечӗн ӗҫне вӑйлатма пулӑшакан пысӑк вӑй пулса тӑрать. Ҫак вӑй ял Совечӗпе унӑн исполнительнӑй комитетне массӑсем хушшинчи организациллӗ ӗҫе, Советпа халӑх хушшинчи ҫыхӑнӑва лайӑхлатма пулӑшать, хуҫалӑхпа политика тӗлӗшӗнчи задачӑсене пурнӑҫлама пысӑк майсем туса парать. Ял Совечӗн кӑҫалхи тата иртнӗ ҫулсенчи ӗҫӗсене тишкерсе пӑхнӑ хыҫҫӑн, ҫакна курма пулать: ӗҫӗн мӗнле участокне актива анлӑн тата пӗлсе хутшӑнтарнӑ — унта ӗҫсем кал-каллӑн та пӗр тикӗс, вӑхӑтра пулса пыраҫҫӗ. Актива манса хӑварнӑ ӗҫ участокӗсенче ӗҫре яланах ҫитменлӗхсемпе кӑлтӑксем пулаҫҫӗ, ӗҫ кая юлса пырать. Ҫавӑнпа активпа ӗҫлессине пӗрмаях лайӑхлатса пыма тӑрӑшатпӑр. Активпа таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлесе, халӑха ял Совечӗн нумай енлӗ ӗҫӗсене пурнӑҫлама мобилизацилетпӗр.

Ял Совечӗн кулленхи ӗҫне 100 яхӑн активиста хутшӑнтарнӑ. Вӗсем — рядовой колхозниксем, уй-хирти стахановецсем, бригадирсем, ялхуҫалӑх специалисчӗсем, колхоз правленипе ревкомисси членӗсем, учительсем, медицинӑ работникӗсем, коммунистсемпе комсомолецсем. Ҫак анлӑ та нумай тӗрлӗ ҫӗрте ӗҫлекен актив яланах халӑхпа пӗрле пулса ял Совечӗн решенийӗсене тӗрӗс те вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртме, колхозсен, шкулсен, культурӑпа ҫутӗҫ, медицина учрежденийӗсен ӗҫӗсене лайӑхлатма пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем ӗҫҫыннисен шухӑш-кӑмӑлӗсене палӑртаҫҫӗ. Вара ыйтӑва ял Советӗнче е унӑн исполкомӗнче сӳтсе явма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫак кирек мӗнле ӗҫе те вӑхӑтра, тӗрӗс тума, ӗҫре пулакан ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерме, халӑха мӗн кирлине, вӑл мӗн ыйтнине тимлӗн итлеме май парать.

Иртнӗ ҫул, унтан малтанхи ҫулсенче те ял Советне кӗрекен колхозсем пӗтӗм ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра та пысӑк пахалӑхпа туса иртерчӗҫ. Государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тата чылай иртерсе тултарнӑшӑн темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ ял Советӗнчи колхозсем республикӑри

[1] И. В. Сталин, «Ленинизм ыйтӑвӗсем», 11 изд., 33 стр.

Хисеп хӑми ҫинче пулма тивӗҫ илчӗҫ. Кашни ҫулленех ял Совечӗ ҫул-йӗрсем тумалли плана ирттерсе тултарать. 1950 ҫулта ҫул-йӗр строительстви планне 114 процент тултарнӑ. Кашни ҫулах шкул ҫулне ҫитнӗ пур ачасене те шкула явӑҫтарнӑ. Ялсене лайӑхлатса илемлетес тӗлӗшпе те чылай ӗҫсем тунӑ. Ҫак ҫитӗнӳсене ял Совечӗ халӑх хушшинче организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе кирлӗ пек туса пынипе, Совет ӗҫне ялти актива анлӑн хутшӑнтарнипе кӑна тума пултарнӑ.

Вайлӑ тырпулшӑн кӗрешесси — ял Совечӗсем умӗнче тӑракан чи ответлӑ задачӑсенчен пӗррийӗ пулса тӑрать. Ҫак чыслӑ та ответлӑ задачӑна пурнӑҫлама ял Совечӗ депутатсемпе анлӑ актив урлӑ колхозниксен пӗтӗм вӑйне мобилизацилерӗ. Ҫураки — вӑйлӑ тырпулӑн никӗсӗ. Депутатсемпе активистсем колхозсене ҫуракине пур енчен те кӑтартуллӑн хатӗрленсе ирттерме пулӑшса пычӗҫ. Ӗҫӗн ответлӑ участокӗсемпе: ялхуҫалӑх машинисемпе инвентарӗсене юсас, вӑрлӑхсем сортласа вӗсен шӑтса тухас пахалӑхне тӗрӗслес, вырӑнти удобренисене пухас ӗҫсене ертсе пыма активистсене лартса тухрӑмӑр. Тӗслӗхрен, Мичурин ячӗпе тӑракан колхозра вӑрлӑхсем сортлас тата вӗсен шӑтса тухас пахалӑхне тӗрӗслес ӗҫсене И. Дмитриевпа Г. Семенов, ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫе коммунист Ф. Кондратьев активистсем пуҫарса ертсе пычӗҫ. Ф. Кондратьев юлташах бригадӑсенче ялхуҫалӑх инвентарӗсемпе лаша таврашӗсене юсассине организацилерӗ. Ӗҫ лашисене пӑхассине Ф. Смирнов активист тӗрӗслесе тӑчӗ. «Большевик» колхозра та активистсене ӗҫӗн уйрӑм участокӗсем тӑрӑх вырнаҫтарса тухрӑмӑр. Вӗсем ял Совечӗ хушнӑ ӗҫсене мӗнпур ответлӑха туйса исполком решенине вӗҫне ҫитиех пурнӑҫлассишӗн кӗрешсе ӗҫлерӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн колхозсенче ҫуракине хатӗрленес ӗҫ лайӑхланчӗ, колхозниксем ҫураки ӗҫӗсене кӑтартуллӑн хатӗрленсе ҫитнипе тытӑнчӗҫ.

Ял Совечӗн депутачӗсемпе активистсем колхозсенче ҫураки ӗҫӗсем мӗнле пынине те пӗрмаях тӗрӗслесе тӑчӗҫ. Колхоз правленисемпе бригадирсене ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтермелли майсене вӑхӑтра тупса пачӗҫ. Активистсем ҫуракин малтанхи кунӗсенчех колхозсенче ӗҫе тӗрӗс организацилессишӗн кӗрешсе пычӗҫ. Вӗсем колхозсенче ӗҫе уйрӑм сдельщина йӗркипе тӑвассине организацилерӗҫ, бригадӑпа бригада, колхозниксем хушшинче ҫуракине кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа ирттерессишӗн, ту-

хăçлă тырпул туса илессишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Мичурин ячĕпе тăракан колхозри активист М. Бычков ертсе пыракан бригадăра çуракин малтанхи кунĕсенчех колхозниксем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса янă, пур ĕçе те уйрăм сдельщина йĕркипе туса пынă. Çапла ĕçленине пула бригада ака-суха ĕçĕсене вăхăтра та пысăк пахалăхпа ирттерчĕ. Пĕтĕм акмалли çĕр лаптăкне, сеялкăпа усă курса, пахалăхлă вăрлăхсемпе акса хăварнă. М. Некрасов, В. Филиппов, А. Железнов активистсем ертсе пыракан бригадăсем те çуракине пысăк пахалăхпа агротехника кăтартнă сроксенче ирттерчĕç. К. Иванова, Е. Соловьева, А. Егорова тата ытти чылай депутатсемпе активистсем бригадăсенче социализмла ăмăртăва пуçараканĕсем пулса, пур ĕçре те хăйсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç, колхозниксене ĕçре хавхалантарса пычĕç.

Çуракин малтанхи кунĕсенче «Большевик» колхоз юлса пычĕ. Колхозра агротехникăна пăснă тĕслĕхсем пулнă. Колхозниксем ĕçе час тухман, ĕç нормине тултарса пыман. Колхозниксен ĕçне бригадирсем, бригадирсенчен колхоз председателĕ йышăнассине организацилемен. Колхоз правленийĕ çураки ĕçĕсемпе тивĕçлĕн ертсе пыман. Çакă колхозниксене тарăхтарнă. Вĕсем çаксем çинчен ял Совечĕн активисчĕсене каласа панă. Активистсем çак çитменлĕхсем çинчен çийĕнчех ял Советне пĕлтерчĕç, ĕçсем çакăн пек пулса пыни çинчен ял Совет исполкомĕнче ыйту лартса сӳтсе явма сĕнчĕç. Çак ĕçе ялхуçалăх комиссийĕ тĕрĕслесе тухрĕ. Ĕçри çитменлĕхсен сăлтавне пĕлчĕ. Çакăн хыççăн колхозри çураки ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен ял Совет исполкомĕнче ыйту лартса сӳтсе яврăмăр, тивĕçлĕ решени йышăнтăмăр. Ял Совечĕн активисчĕсене ĕçĕн уйрăм участокĕсем тăрăх вырнаçтарса тухрăмăр. Вĕсем колхозра çураки ĕçĕсем мĕнле пынине, ĕçĕн пахалăхне куллен сăнаса тăчĕç, колхоз правленисемпе бригадирсене уй-хирти ĕçе тĕрĕс организацилеме, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшса пычĕç. Тĕслĕхрен, активист Г. Павлов колхозри пĕр бригадăра колхозниксем ĕçе час тухманнине, ĕçре ăмăртманнине, вĕсен ĕç тухăçлăхĕ начаррине палăртнă. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче вăл уйра ĕçлекен колхозниксене пĕр çĕре пухса бригада çуракинче юлса пынин сăлтавĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă. Ĕç çине тӳнтерле пăхакан колхозниксене стена хаçачĕ çинче критикленĕ. Колхозниксем

бригада юлса пынине тӳрлетме сăмах панă. Тепӗр кунне вăл каллех колхозниксем хăйсем панă сăмаха мӗнле пурнăçланине тӗрӗслерӗ. Çапла вара чăнахах та ӗçсем лайăхланчӗç. Колхозниксем хире ирех тухма пуçларӗç, пӗтӗм ӗçе уйрăм сдельщина йӗркипе туса пыма тытăнчӗç. Çуракине кӗске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерессишӗн социализмла ăмăртăва анлăн сарса ячӗç. Çапла майпа активистсем «Большевик» колхозра та çураки ӗçӗсене лайăхлатрӗç. Актив пулман пулсан ял Совечӗ колхозри çитменлӗхсене вăхăтра курса çийӗнчех пӗтерме пултарнă-и? Паллах, çук.

Вăрман хатӗрлевӗ те ял Совечӗсем умӗнче тăракан ответлă ӗçсенчен пӗрийӗ пулать. Ял Советӗнчи колхозсем вăрман хатӗрлевӗнче яланах малта пынă. 1949 çулта (ун чухне виçӗ колхоз пулнă) колхозсем февралӗн малтанхи кунӗсенчех вăрман хатӗрлесе турттармалли плана районра чи малтан тултарса республикăри Хисеп хăми çинче пулма тивӗç илчӗç. Чăваш АССР вăрман промышленность министерстви ял Совечӗпе колхоз правленийӗсене хаклă япаласем парса премилерӗ. 1950—1951 çулхи кӗркуннепе хӗллехи сезонра вăрман хатӗрлемелли плана мӗнле тултарасси çинчен ял Совечӗн иртнӗ кӗркунне пулнă сессийӗнче (1950 çулхи ноябрь) сӳтсе яврăмăр. Сесси йышăннă решени çинчен халăха ăнлантарса пама тата çав решение пурнăçлама мӗнпур депутатсемпе актива хутшăнтартăмăр. Вӗсем колхозниксен пухăвӗсене туса ирттерчӗç. Коммунизмăн аслă стройкисене тунă çӗрте вăрман мӗнле вырăн йышăнни çинчен каласа ăнлантарчӗç. Акитивистсем хăйсем те вăрмана ӗçлеме кайрӗç. Ял Совет ӗçне яланах активлă хутшăнакан Г. Афанасьев, И. Орлов, В. Федоров, И. Кириллов, А. Афанасьев юлташсем вăрман касса хатӗрлес ӗçре пысăк хастарлăх кăтартрӗç, вăрман касакансем хушшинче социализмла ăмăрту пуçарса ячӗç. Активистсем кулленхи нормăна 180—200 процент тултарса ӗçлерӗç, хăйсен ӗçри паха тӗслӗхӗсемпе ытти колхозниксене хавхалантарса пычӗç. Вăрман турттарас ӗçе те ял Совечӗн активисчӗсене анлăн хутшăнтартăмăр. «Большевик» колхозран вăрман турттарнă çӗрте 7 активист ӗçлерӗç. Активистсем вăрман турттаракан бригадăсенче ӗçе тӗрӗс организацилерӗç, бригадăсемпе уйрăм лавçăсем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса ярса, ӗç тухăçлăхне пӗрмаях ӳстерсе пыма пулăшрӗç. Çапла ӗçлесе колхозран вăрман

турттарма кайнă бригадăсем февралĕн 18-мĕшĕ тĕлнех 1120 фестметр вырăнне 1200 фестметр вăрман турттарса плана иртттерсе тултарчĕç.

Вăрман хатĕрлесе турттармалли сезон пуçлансанах Мичурин ячĕпе тăракан колхоз ĕçре кая юлса пычĕ. Çак вăл колхоз правленийĕ колхозниксене вăрманта ĕçлеме кирлĕ условисем туса паманнинчен килнĕ. Ял Совечĕн депутачĕ К. Иванова тата Ф. Кондратьев активист çак ыйтăва ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче сÿтсе явма сĕнчĕç, колхоз вăрман хатĕрлевĕнче юлса пынин сăлтавĕсем çинчен каласа пачĕç. Ял Совет исполкомĕ çак ыйту тăрăх йышăннă решени çинчен ăнлантарса пама депутатсемпе активистсем бригадăсенче пухусем туса иртттерчĕç. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинчи ĕçе тĕрĕс организацилеме, социализмла ăмăртăва анлăн сарса яма вăрмана депутатсемпе активистсене 12 çын ятăмăр. Ĕç часах лайăхланчĕ. Тепĕр куннех колхозран вăрманта ĕçлеме çуран 27 çын, лашапа 14 çын тухса кайрĕç. Ял Совет депутачĕ К. Иванова юлташ вутă турттаракансен бригадине ертсе пычĕ. Бригадăра социализмла ăмăртăва сарса ячĕç. Активистсем хăйсен кулленхи нормине 150—180 процент тултарса ĕçлерĕç, ытти колхозниксене те хăйсем пек тăрăшса ĕçлеме вĕрентсе пычĕç. Çапла активистсем колхоз вăрман хатĕрлевĕнче юлса пынине пĕтерме пулăшрĕç. Паллах ĕнтĕ, çак ĕçе ял Совечĕн анлă активне хутшăнтарман пулсан, кун пек çитĕнÿ тума пултарайман пулăттăмăр.

Государство валли тырă хатĕрлесси — ял Совечĕн тивĕçĕ. Депутатсемпе активистсем, çакна лайăх ăнланнăскерсем, колхозсен пĕтĕм вăйне государствăна срокчен тырă парса татас ĕçе мобилизацилеççĕ. Юлашки 5 çул хушшинче ял Советĕнчи колхозсем государствăна срокчен тата планран иртттерсе тырă панăшăн республикăри Хисеп хăми çинче пулма тивĕç илчĕç. Çакна, паллах, ял Совечĕн депутачĕсемпе активистсем тăрăшса ĕçленипе, вĕсене ĕçĕн уйрăм участокĕсем тăрăх вырнаçтарса тухса тĕрĕс усă курнипе, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илсе вăхăтра пурнăçланипе тума пултарнă. Ял Советĕнчи колхозсен çĕрĕсем вăрман çывăхĕсене тата вăрмансем хĕррипе вырнаçнă. Çакна пула çулсеренех кĕрхи тырăсем те, çуртри те районри ытти колхозсенчен пĕр эрне кайран пулса çитеççĕ. Иртнĕ 1950 çулта та çапла пулчĕ. Пирĕн ял Советĕнчи колхозсем кĕрхи тырăсене вырма

тытăннă тĕле районри хăшпĕр колхозсем çĕнĕ тырă çапса государствăна пама тытăнчĕç. Çакă ял Советне уйхирти тата государствăна тырă парас ĕçсене туса ирттерме тĕплĕн хатĕрленме, ĕçе пĕлсерех те тарăнрах шухăшласа тума, ăна хăвăртлатма хушрĕ.

Тырă вырма тухиччен чылай малтан 3—4-шар авăн, витнĕ йĕтемсемпе сушилкăсем хатĕрлени колхозсене кирек мĕнле çанталăкра та авăн çапма май пачĕ. Тырă вырма тухсан иккĕмĕш кунĕнчех авăн çапса государствăна тырă пама тытăнчĕç. Малтанхи кунсенче авăна кăнтăрла кăна çапнине пула, колхозсен тырă парас ĕç юлса пычĕ, графика тултараймарĕç. Авăн çапса государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатасси çинчен ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче сӳтсе явса колхозсенче талăкĕпех авăн çапассине организацилемелле турăмăр. «Большевик» колхозра талăкĕпех авăн çапассине организацилеме С. Федоров, тырă типĕтессине йĕркелеме Д. Федоров активистсене поручени патăмăр. Вĕсем ял Совечĕ панă поручение пĕтĕм ответлăха туйса пурнăçларĕç, колхозра кунĕн-çĕрĕн авăн çапса тырă типĕтессине организацилерĕç. Часах колхоз графика кĕрсе графикран ирттерсе тырă пама пуçларĕ.

Государствăна тырă пама тытăннă малтанхи кунсенче Мичурин ячĕпе тăракан колхоз та графика тултарайман. Авăн çапса тырă типĕтес, государствăна тырă парас ĕçсем юлса пынине пĕтерме ял Совечĕ колхозра хăйĕн депутачĕсемпе активисчĕсене ĕçĕн уйрăм участокĕсене вырнаçтарса тухрĕ. Вĕсем колхозра талăкĕпех авăн çапассине, çапнă тырра хĕвелпе тата сушилкăсенче типĕтессине организацилерĕç. Тырă çапма пуçланă малтанхи кунсенче колхозăн витнĕ йĕтемсем иккĕ пулнă. Колхозăн пĕр пусси витнĕ йĕтемсенчен 5 километр инçетре. Кĕлтесене çак витнĕ йĕтемсем çине турттарас пулсан, вăрмансем тата темиçе çырма урлă турттармалла пулать. Çапла тума туртăм вăйĕ нумай кирлĕ. Ял Совет исполкомĕ колхоза çак уйра витнĕ йĕтем тума хушрĕ. Йĕтем тăвас ĕçе ертсе пыма Ф. Кондратьев активиста поручени панă. Вăл ертсе пынипе тата активлă хутшăнса ĕçленипе колхоз çак уйра часах çĕнĕ витнĕ йĕтем туса лартрĕ. Çапла туни кĕлтене капана хывса авăн çапас ĕçсене хăвăртлатма, хатĕрлев пунктне тырă турттарма туртăм вăйĕ ытларах уйăрма май пачĕ. Çапла колхозсем сентябрĕн малтанхи кунĕсенчех государствăна тырă парса татрĕç.

Ял Совечĕн активисчĕсем государство умĕнчи парăмсене тултарас ĕçре те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта ял Совечĕ государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта т. ыт. выльăх-чĕрлĕхпе ялхуçалăх продуктисем памалли плансене колхозсем енĕпе те, уйрăм сдатчиксем енĕпе те irttерсе тултарчĕ. Çакна тума депутатсемпе активистсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетни нумай пулăшрĕ. Вĕсем колхозсемпе уйрăм сдатчиксем государствăна выльăх-чĕрлĕх тата ялхуçалăх продуктисем панине тăтăшах тĕрĕслесе тăчĕç, ĕççыннисем хушшинче массăллă ăнлантаруллă ĕçе анлăн сарса ячĕç, уполминзаг агентне ĕçре практикăллă пулăшу парса тăчĕç. Кăçал та активистсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене парса татас ĕçре те активистсем хăйсем пример кăтартаççĕ. С. Пугачев, Г. Федоров, А. Михайлов, П. Степанов, А. Константинов тата ытти чылай активистсем кашни çулленех, ялхуçалăх налогĕ тӳлемелли çинчен обязательство париччenех, укçисене тӳлесе татаççĕ.

Çавăн пекех ĕçĕн ытти участокĕсенче те ялти активпа анлăн усă куратпăр. Çакăнта пулать те ĕнтĕ ĕçре тунă ӳсĕмсем.

Ял Совечĕн практикăллă ĕçĕсене туса пыма анлă актива хутшăнтарасси активпа ĕçлеме, вĕсене воспитани пама пĕлнинчен нумай килет.

Активпа ĕçлессине юлашки çулсенче чылай лайăхлатрăмăр. Вĕсене час-часах канашлусене пухса ял Совечĕпе яланхи комиссисен ĕç планĕсемпе, ял Совечĕ умĕнче тăракан задачăсемпе, ял Совечĕпе унăн исполкомĕ йышăннă решенисемпе, лайăх тĕслĕх кăтартса ĕçлекен активистсен ĕçĕсемпе паллаштаратпăр. Канашлусем умĕн активистсем валли лекцисемпе докладсемirttеретпĕр. Канашлусем хыççăн активистсем ял Совечĕ йышăннă решенисем, умра тăракан задачăсем çинчен халăха ăнлантарса параççĕ, вĕсене çав ĕçсене тума мобилизацилеççĕ. Активистсемпе канашлусем туса irttерни ял Совечĕпе халăх хушшинчи çыхăнăва çирĕплетет. Нумай чухне активистсене сессисене, ял Совет исполкомĕн ларăвĕсене чĕнетпĕр. Кунта вĕсем йышăнакан решенисемпе, колхозсенче, бригадăсенче, фермăсенче, шкулсенче тата ытти çĕрте ĕçсем мĕнле тăнипе тĕплĕн паллашаççĕ. Çакă вара активистсене ял Совечĕ йышăннă

решенисене хăвăртрах халăх патне çитерме, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме май парать.

Активистсем халăх ĕçĕшĕн пĕтĕм чун-чĕрепе ĕçлесшĕн тăрăшаççĕ. Анчах тепĕр чухне ĕçе мĕнрен тытăнмаллине, мĕнрен пуçламаллине пĕлмеççĕ. Депутатсемпе активистсене хăйсен ĕçне тĕрĕс йĕркелеме яланах пулăшатпăр. Нумай чухне вĕсене ял Советне юлташла калаçăва чĕнетпĕр, уйрăм ĕçсем паратпăр. Çуркунне Г. Никитин активиста ял Советне чĕнсе ялăн пĕр урамне йывăç лартассине организацилеме поручени патăмăр. Ĕçе мĕнрен тытăнмаллине, ăна мĕнле туса пымаллине каласа патăмăр. Вăл хушнă ĕçе кăмăлларĕ. Çак урамра пурăнакан çынсене пĕр çĕре пухса ял Совечĕ урам хушшисене йывăç лартасси çинчен йышăннă решенипе паллаштарчĕ. Пĕрисене вăрмана йывăç кăларма, теприсене йывăç лартмалли вырăнсене хатĕрлеме хушрĕ. Ял Совечĕн поручение вăл чыслăн пурнăçларĕ. Ăна тата пĕр çырмари пĕвене тарăнлатса пысăклатас ĕçе пуçарма поручени панăччĕ. Çавна та вăл пысăк хастарлăхпа пурнăçларĕ. Активистсем пуçарса ертсе пынипе кăçал ялсенчи урамсемпе çырмасене 3 пин ытла йывăç лартнă. Вĕсемех лартнă йывăçсене пăхса çитĕнтерессине организацилерĕç. Г. Афанасьев активиста вырăнти çулсене юсас, çĕнĕ кĕпер тăвас ĕçсене пуçарса ертсе пыма поручени патăмăр. Вăл та поручение лайăх пурнăçларĕ. Ялсене тасалăхра тытас, çăлсем туса юсас ĕçсене ертсе пыма та активистсене поручениcем панă.

Актива Советсен ĕçне хутшăнтармалли, вĕсемпе ĕçре усă курмалли формăсем нумай тĕрлĕ пулаççĕ. Советсем пур чухне те активпа таччăн çыхăнса ĕçлени кирлĕ. Çакăн чухне вырăнти Советсем хăйсен умĕнче тăракан хуçалăхпа культура строительстви ыйтăвĕсене тĕрĕс те вăхăтра татса пама пултараççĕ.

## СУЙЛАВÇĂСЕН НАКАЗĔСЕМ — СОВЕТСЕН ĔÇ ПРОГРАММИ

Вырăнти Советсене юлашки çулсенче пулса иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнче суйлавçăсем ял Совечĕн ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене палăртса хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа пачĕç, унăн малашнехи ĕçĕсене лайăхлатма нумай сĕнÿсемпе наказсем парса хăварчĕç.

Суйлавçăсем парса хăварнă наказсене пурнăçласси ял Совечĕсен тивĕçлĕ ĕçĕ пулать. 1947 çулхи вырăнти

Советсен суйлавӗ вӑхӑтӗнче ял Советне парса хӑварнӑ наказсене лайӑх пурнӑҫлас тесе эпир вӗсем ҫинчен ял Совечӗн пӗрремӗш сессийӗнче пӑхса тухрӑмӑр. Ял Совечӗн исполкомӗ суйлавҫӑсен наказӗсене пурнӑҫлас майпа учреждени руководителӗсен, колхоз председателӗсен, ял Совечӗн яланхи комисси председателӗсен канашлӑвне туса иртгерчӗ. Унта суйлавҫӑсен кашни наказне уйрӑммӑн тата тӗплӗн пӑхса тухнӑ, вӗсене пурнӑҫламалли практикӑллӑ мероприятисене туса хатӗрленӗ, мӗнле ӗҫе хӑҫан тата ӑҫта тумаллине, вӗсене вӑхӑтра пурнӑҫлассишӗн кам ответлӑ пулнине палӑртнӑ.

Суйлавҫӑсем парса хӑварнӑ наказсемпе сӗнӳсене темиҫе пая уйӑртӑмӑр: пӗрремӗшне 5—6 уйӑхра е тата кӗскерех срокра туса иртгерме май пур сӗнӳсене кӗртнӗ. Хӑшпӗр сӗнӳсене ҫулталӑк е ытларах вӑхӑтра ҫеҫ пурнӑҫлама пулать. Вӗсене 1948—1949 ҫулсенче тумалли плана кӗртнӗ. Виҫҫӗмӗш пайне 2—3 ҫулта тин туса ҫитерме май пур наказсене кӗртнӗ. Суйлавҫӑсен наказӗсенче районри тата республикӑри организацисем пулӑшнипе тумалли сӗнӳсем те пур. Вӗсем пирки ҫав организацисенчен пулӑшу ыйтрӑмӑр.

Суйлавҫӑсен наказӗсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе туса хатӗрленӗ мероприятисене ял Совечӗн сессийӗнче ҫирӗплетрӗмӗр, суйлав округӗсенчи пухусенче сӳтсе яврӑмӑр. Суйлавҫӑсем вӑл мероприятисене ырларӗҫ, вӗсене пурнӑҫлас ӗҫре активлӑ хутшӑнса ӗҫлерӗҫ. Ӗҫҫыннисен творчествӑллӑ активлӑхне ял Совечӗн депутачӗсем пуҫарса пычӗҫ, пур ӗҫсене те вӗсем организацилерӗҫ.

Унтанпа виҫӗ ҫул ытларах иртрӗ. Халӗ ӗнтӗ 1947 ҫулта пулнӑ вырӑнти Советсен суйлавӗнче суйлавҫӑсем панӑ наказсемпе сӗнӳсене ял Совечӗ мӗнле пурнӑҫласа пыни ҫинчен кӗскен ҫырса кӑтартар.

Ял Советӗнчи ялсенчен пӗринче—Кӑташра ҫырма-ҫатрасем нумай. Хӑшпӗр вырӑнсенче кӗркуннепе ҫуркуннехи, вӑйлӑ ҫумӑрсем хыҫҫӑнхи вӑхӑтсенче кӗрсе тухма та пулман. Суйлавҫӑсем ҫакӑн пек вырӑнсене чул сарма наказ пачӗҫ. Ҫак ӗҫе пуҫарса ертсе пыма ял Совечӗн депутачӗ, исполком членӗ Ф. Игнатьев юлташа хушрӑмӑр. 1948 ҫулхи хӗллех Игнатьев юлташ пуҫарса ертсе пынипе ял ҫыннисем 700 кубла метр чул, 2000 лава яхӑн хӑйӑр хатӗрлерӗҫ. Ҫуркуннех ҫулсем ҫине чул сарма тытӑнса 550 метр тӑршшӗ ҫула чул сарнӑ. Малашнехи ҫулсенче те ҫулсем ҫине чул сарассине туса пытӑмӑр. Ялти

çырмасенчи çула пĕр километра яхăн чул сарса тухнă. Халĕ кирек мĕнле вăхăтра та çырмасем урлă нимĕн чăрмавсăрах каçса çÿреме пулать.

Ял Совет территоринче кĕперсем нумай. Вĕсем начар пулнă. Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа юлашки виçĕ çул хушшинче кăна типовăй кĕперсем виççĕ тунă.

Ял Совечĕн медицина пункчĕ валли уйрăм çурт пулман. Çак ыйтăва колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе яврăмăр. Колхозниксем ял Советне колхоз усă курман çурта уйăрса пачĕç. Ял Совечĕ ăна тĕпренех юсаттарса медицина пункчĕ турĕ.

Алексеевкăри пуçламăш шкул çуртне юсаман пирки пĕр пÿлĕмре тăватă класс икĕ сменăпа вĕреннĕ. Суйлавçăсем ăна юсасси пирки çирĕп наказ пачĕç. Ял Совечĕн депутачĕ Я. Захаров юлташ ертсе пынипе тата хăй хутшăнса ĕçленипе шкул çуртне часах юсаса çитертĕмĕр. Шкул тăваттăмĕш çул ĕнтĕ пĕр сменăпа ĕçлет. Пушнарти çичĕ çул вĕренмелли шкула юсама 1950 çулта 4 пин тенкĕ уйăрса патăмăр. Кунсăр пуçне колхозсем пысăк пулăшу пачĕç. Çак шкул çуртне тĕпренех юсанă, çийĕсене сăрланă.

Суйлавçăсем ялта çамрăксен каçхи шкулне уçма сĕнÿ панăччĕ. Халĕ ялта иккĕмĕш çул ĕнтĕ çамрăксен каçхи шкулĕ ĕçлет.

Суйлавçăсем колхозсенчи пулăшу кассисен ĕçĕсене лайăхлатма та сĕнÿсем пачĕç. Вăрçă инваличĕсен, çар çыннисен çемйисем, вăрçăра вилнисен çемйисем — пурте колхозсенчи пулăшу кассисенчен тивĕçлĕ пулăшу илсе тăраççĕ. 1950 çулта кăна вĕсене пулăшу кассисем 6 тонна яхăн тырă, 3700 тенкĕ укçа, 140 кубла метр строительство материалĕ, çĕнĕ пÿртсем 6 лартса панă. Пулăшу кассисенчен шкул ачисем те пысăк пулăшу илсе тăраççĕ. Вăрçă инваличĕсене, тăлăх ачасене кĕпе-тумтирсемпе атă-пушмаксем туянма пулăшу кассисем икĕ пин тенкĕ ытла укçа уйăрса панă, 13 фуфайка, 27 мăшăр çăматă т. ыт. те илсе панă. Пулăшу кассисем мĕнле ĕçлесе тăни çинчен ял Совет исполкомĕ кашни кварталтах отчетсем итлесе тăрать.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тунă. Ялти клуб çуртне юсанă, ялта библиотека уçнă. Юлашки икĕ çул хушшинче кăна ялти библиотека валли 3 пине яхăн тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем илсе панă. Клуб валли радиоприемник,

биллиард, хуткупăс, гитара, мандолина т. ыт. музыка инструменчĕсем илсе панă.

Суйлавçăсем парса хăварнă наказсенчен колхозсенче тухăçлă тырпул туса илесси, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе вĕсен продуктивлăхне ӳстересси тĕп вырăн йышăнаççĕ. Çак наказсене пурнăçлас тĕлĕшпе ял Совечĕн депутачĕсем чылай ĕçсем турĕç. Вĕсем колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене мĕнле хатĕрленсе ирттернине тăтăшах тĕрĕслесе тăчĕç. Ĕçри çитменлĕхсене сирсе яма пулăшса пычĕç. Пур ĕçре те ĕçĕн пахалăхĕпе хăвăртлăхĕшĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарса пычĕç. Депутатсем тăрăшса ĕçлени сая каймарĕ. Колхозсем çулсеренех тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ.

Пирĕн ял Советне кĕрекен колхозсем колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх çулран çул ытларах та ытларах тĕштырă тата çĕрулми параççĕ.

Тырпул тухăçлăхне татах хăпартас майпа хальхи вăхăтра ял Совечĕпе унăн депутачĕсем колхозсенче кураксем акса тумалли пусуçаврăнăшне йĕркелессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. 1950 çулччен колхозсем курăк вăрри çителĕксĕррине пула, курăксене çуршар пусă кăна акса пынă. Депутатсем çак ыйтăва 1949 çулхи кĕркуннех хускатрĕç. Ку ыйтăва ял Советĕнче пăхса тухрăмăр. Колхозсене курăк вăррисем акса тумалли пусуçаврăнăшне йĕркелес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине кăтартса патăмăр. Депутатсем колхоз правленийĕсене çав кăтартусене пурнăçлама пулăшса пычĕç. Курăк вăррисем туса илмелли участоксене пăхса çитĕнтерес, вĕсене пухса илес ĕçсене вăхăтра туса пыма пулăшрĕç. 1949 çулхи кĕркунне ял Советне кĕрекен колхозсем вăрлăх участокĕсенчен çитес çул акма кирлĕ чухлĕ курăк вăррисем пухса илчĕç. 1950 çулта колхозсем пусуçаврăнăшне пĕрер пусă клеверпа тимофеевка акса хăварчĕç. Çапла хальхи вăхăтра колхозсен пусуçаврăнăшĕсене 2—3 уй клевер акнă. Курăк акса тумалли пусуçаврăнăшне куçса пынă май, колхозсем курăк вăрри туса илессине те çулсеренех вăйлатса пыраççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 1951 çулта 36 гектар çинчен 6 тонна яхăн (вăтам шутпа гектартан 165 килограмм) клевер вăрри туса илчĕ. Çитес çул акма вăрлăх хăварнă хыççăн, колхоз клевер вăррине государствăна пачĕ. Государство клевер вăрришĕн колхоза 30 тонна яхăн тырă, 70 пин тенкĕ ытларах укçа пачĕ.

Вăрлăх — вăйлă тырпулăн ылтăн фончĕ. Ял Сове-

чӗн депутачӗсем колхозсене тырра акса хӑварсанах вӑрлӑхсем хатӗрлеме пулӑшса пыраҫҫӗ. Ҫӑвал ҫурхи тырӑсене акса пӗтерсенех депутатсем колхозсене вӑрлӑх участокӗсем уйӑрма пулӑшрӗҫ. Вӑрлӑх участокӗсем валли чи лайӑх ҫӗрсем ҫине акса хӑварнӑ лаптӑксене уйӑрнӑ. Депутатсемех вӑрлӑхлӑх уйӑрса хӑварнӑ тырӑсене пӑхса ҫитӗнтерессине тивӗҫлипе йӗркелерӗҫ. Государствӑна тырӑ панипе пӗрлех, колхозсем вӑрлӑх участокӗсем ҫинчи тырра та ҫапса пӗтерсе ҫитес ҫул акма паха вӑрлӑх хатӗрлерӗҫ.

Пӗрлешнӗ «Большевик» колхоз инҫетри уйсене тислӗк сахал кӑларнӑ. Паллах ӗнтӗ, ҫак уйсенчен тухӑҫлӑ тырпул пухса илессине кӗтме хӗн. Ял Совечӗн депутачӗ, вӑрман пункчӗн начальникӗ П. Корольков юлташ ял Советне вӑрман пунктӗнче темиҫе ҫул хушшинче пухӑннӑ 4—5 пине яхӑн лав тислӗк пурри ҫинчен каларӗ. Ял Совечӗ «Большевик» колхоз правленине ҫак тислӗке турттарас ӗҫе организацилеме хушрӗ.

Пирӗн ялсенче пӗвесем нумай. Вӗсем, чылай ҫулсем тасатман пирки, юшкӑнпа тулнӑ, ӑшӑхланнӑ. Юшкӑн — вырӑнти удобренисен шутне кӗрет. «Большевик» колхоз правленине ҫапла тума хушрӑмӑр: кӗркунне пӗвесемпе кӳлӗсенчи шыва юхтарса ярса юшкӑна уя кӑлармалла. Уйсем те ҫемҫелеҫҫӗ, пӗвесемпе кӳлӗсем те тасалаҫҫӗ. Ҫапла депутатсемпе ял Совечӗ пӗрлешнӗ «Большевик» колхоза уйсене ҫемҫетмелли, тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерсе пымалли майсене тупса параҫҫӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе те колхозсем пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. «Большевик» колхоз выльӑх-чӗрлӗхсен йышне ҫак юлашки виҫӗ ҫул хушшинче 150—160 процент таран ӳстерчӗ. Ҫавӑн пекех Мичурин ячӗпе тӑракан колхозра та, 1948 ҫулхипе танлаштарсан, выльӑхсен хисепне 120—140 проц. чухлӗ ӳстернӗ. Хурт-хӑмӑр ӗрчетессине колхоз 200 процента ытла ӳстернӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстерсе пырасси ҫамрӑк выльӑхсене лайӑх пӑхса ҫитӗнтернипе пулса пырать. Лашасем ӗрчетес тӗлӗшпе А. Константинов, В. Никифорова, Ф. Кириллова конюхсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсем пӑхакан кӗсресене яланах чуптарса хӑвараҫҫӗ, тихасене тӗп-тӗрӗс пӑхса ҫитӗнтереҫҫӗ. Лашасен йышне ӳстерес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн кӑҫал вӗсене районри ялхуҫалӑх пайӗ пӗрремӗш тата иккӗмӗш степеньлӗ дипломсем, укҫа парса премиленӗ.

Выльăхсен йышĕ ӳснĕ май, вĕсен тухăçлăхĕ те çулсеренех ӳссе пырать.

Ял Советĕнчи икĕ колхоз хурт-хăмăр ĕрчетес, вĕсен тухăçлăхĕпе тупăшне ӳстерес тĕлĕшпе çитĕнӳсем турĕç. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра 1948 çулта 67 çемье хурт-хăмăр пулнă. Халĕ колхоз утарĕнче 164 çемье. Колхоз хурт-хăмăртан нумай тупăш илет. Колхозниксене ĕçкунĕ пуçне аванс шучĕпе чылай пыл валеçсе парать. Колхозра тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçленĕ колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх 2—3-шер пăт пыл илчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1951 çулти плана, чăхсемсĕр пуçне, пур енĕпе те колхозсем ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Иртнĕ вăрçă çулĕсенче колхозсенче садсем юхăнса пĕтнĕ. Суйлавçăсем ял Советне садсем тăвас ĕçре колхозсене пулăшу пама сĕнчĕç. Çак сĕнĕве те эпир чыслăн пурнăçларăмăр. Халĕ «Большевик» колхозăн 12 гектар çинче колхоз сачĕ ешерет. Унта 693 тĕп улмуççи, 143 тĕп слива, 654 тĕп тĕрлĕрен хурлăхан тата ытти те ӳсеççĕ. Виçĕмçул ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ И. Дмитриев колхозник пуçарса ертсе пынипе Мичурин ячĕпе тăракан колхозра, М. Митрофанова юлташ ертсе пынипе çичĕ çул вĕренмелли шкулта улмуççи сачĕсем турĕç.

1950 çулта пулса иртнĕ вырăнти Советсен суйлавĕ вăхăтĕнче суйлавçăсем парса хăварнă наказсене те ял Совечĕ пӳрнăçласа пырать. Вĕсене те темиçе пая уйăрнă, кашни ĕçшĕн кам ответлă пулнине палăртнă. Кăçал стандартлă депо туса пĕтеретпĕр. Ăна тăвас пирки суйлавçăсем 1947 çулхи суйлав вăхăтĕнчех наказ парса хăварнăччĕ. Ял Совечĕ кун пирки республикăри организацисенчен пулăшу ыйтрĕ. Иртнĕ çулхи кĕркунне пире депо тума республикăри организацисем 47 пин тенкĕ укçа уйăрса пачĕç. Хĕллехи вăхăтра колхозниксем депо тума 200 кубла метр строительство материалĕ хатĕрлесе турттарчĕç. Çуркунне ăна тума тытăнтăмăр. Кăçал пысăк çĕнĕ кĕпер тунă. Пушнар ялĕн урамĕсене чул сарма тытăннă. Ялти клуба юсама 3 пин тенкĕ укçа уйăрса патăмăр. Ăна юсаса çитерне, йĕри-тавра илемлĕ карта тытнă.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен килĕсене радио кĕртме колхозран пулăшу илме май çук-ши тесе ыйтрĕç. Ял Совечĕ çак ыйтăва район Совечĕн исполкомĕ умне лартрĕ. Район Совечĕн исполкомĕ ку ыйтăва татса пачĕ. Халĕ колхозра хатĕрленӳ ĕçĕсем пыраççĕ.

Нумаях пулмасть ял Совечĕн депутачĕсем хăйсен округĕсенче ял Совечĕпе хăйсен ĕçĕсем çинчен отчетсем туса пачĕç. Суйлавçăсем хăйсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ял Совечĕ тунă ĕçсене ырланипе пĕрлех, ĕçри çитменлĕхсене кăтартса çĕнĕ наказсем пачĕç.

Суйлавçăсем парса хăварнă наказсем—пирĕн куллен-хи ĕçĕн программи, ял Совечĕн ĕçне лайăхлатмалли сĕнÿсем. Ăна ял Совечĕ чыслăн пурнăçлама тăрăшать.

## ЯЛ СОВЕЧĔ — СОЦИАЛИЗМЛА ĂМĂРТУ ОРГАНИЗАТОРĔ

Ĕçре çитĕнÿсем тума пулăшакан тĕп меслет вăл социализмла ăмăрту пулать. Пуçламăш парти организацийĕ ертсе тата куллен пулăшса пынипе ял Совечĕ колхозлă ялта социализмла ăмăртăва пуçарса пыраканĕ тата унăн организаторĕ пулса тăчĕ.

Пирĕн ял Советĕнчи колхозсемпе бригадăсем ялхуçалăх умĕнче тăракан задачăсене пысăк пахалăхпа тата кĕске сроксенче пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Ял Совечĕн депутачĕсем вара колхоз хресченĕсен анлă массине ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тата кĕске вăхăтра ирттерме мобилизацилеççĕ, социализмла ăмăртăва анлăн сарса пырас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ял Совечĕпе унăн территоринчи колхозсем тунă хăшпĕр ÿсĕмсем çинчен маларахра çырса кăтартрăмăр. Çакна, паллах, социализмла ăмăртăва анлăн сарса янипе, унпа куллен ертсе пынипе тума пултарнă. Ял Совечĕ социализмла ăмăрту мĕнле сарăлса пынине куçран вĕçертмест. Ял Совечĕн сессийĕнче те, исполком ларăвĕсенче те çак ыйтăва час-часах сÿтсе яватпăр. Колхоз правленийĕсем, бригадăсем социализмла ăмăрту обязательствисене мĕнле пурнăçласа пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Çураки вăхăтне илер-ха. Колхозсемпе бригадăсем çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерме социализмла ăмăртăва тухрĕç. Ăмăрту мĕнле сарăлса пынине ял Совечĕн депутачĕсемпе активисчĕсем тăтăшах тĕрĕслесе тăчĕç, ăмăртăва ертсе пычĕç. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра 4 бригада. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Çураки вăхăтĕнче активист М. Бычков юлташ ертсе пыракан бригада малта пычĕ. Ăмăрту договорĕнче йышăннă обязательствăсене пурнăçлас майпа бригадăра

çуракин малтанхи кунĕсенчех пĕтĕм уй-хир ĕçĕсене уйрăм сдельщина йĕркипе туса пырассине йĕркеленĕ. Бригадир уйра ĕçлекен кашни колхозника кашни куллен мĕн чухлĕ ĕç тумаллине кăтартса панă, ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслесе тăнă. Бригадăра социализмла ăмăртăва анлăн сарса пыма пулăшма, бригадăри ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслесе тăма ял Совечĕн депутачĕ А. Романов юлташа поручени патăмăр. Вăл бригадăра кашни кун пулса колхозниксен ĕçне тĕрĕслерĕ, ĕçе татах лайăхлатас майпа мĕн-мĕн тумаллине, мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пачĕ. Ĕç хыççăн кашни кунах бригадирпа пĕрле колхозниксен производствăллă канашлăвне туса ирттернĕ. Унта колхозниксене кам мĕнле ĕçлени, мĕн чухлĕ ĕçлесе илни, Чăваш республикипе Мари АССР-ĕ хушшинчи социализмла ăмăрту мĕнле сарăлса пыни çинчен каласа панă, республикăри малта пыракан колхозсен çуракинчи ĕç опычĕ çинчен каласа ăнлантарнă. Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерес тĕлĕшпе бригада умĕнче ыран тăракан ĕçсемпе паллаштарнă. Бригадăра кашни 2—3 кунта боевой листоксем кăларнă. Вĕсем çинче колхозра тăрăшса ĕçлекен колхозниксен ĕçри опычĕсем çинчен, ĕç тухăçлăхне мĕнле ӳстерсе пыни çинчен çырнă, çуракине пахалăхлă ирттерме чĕннĕ. Тунă ĕçсен результачĕ куç умĕнче: кашни колхозник, вăл кирек мĕнле ĕç тăвать пулсан та, ĕç нормине яланах ирттерсе тултарнă. З. Суворова, Е. Иванзеева сухаçăсем, Я. Крыловпа Л. Захаров акакансем, Е. Захарова, Р. Миронова сӳреçĕсем кулленхи нормăна 120—130-шар процент тултарса ĕçленĕ.

Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерессипе туртăм вăйĕнчен нумай килет. Бригадăри конюхсем хирте ĕçлемелли лашасене тул çутăличченех тăрантарса хатĕрленĕ. Кăнтăрла, колхозниксем каннă вăхăтра, лашасене уйра тăрантарассине йĕркеленĕ. Бригадăри лашасем çуракине ирттернĕ вăхăтра нимĕн чухлĕ те начарланман. Çапла бригада çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ, ăмăртура мала тухрĕ.

Çуракин малтанхи кунĕсенчех ял Совет исполкомĕ М. Бычков бригадинче социализмла ăмăртăва мĕнле йĕркелени çинчен, унăн ĕçри опытне ытти бригадăсене сарас майпа, хăйĕн ларăвĕнче сӳтсе яврĕ. Ларăва колхозсенчи пур бригадирсене те чĕннĕ. Ларура М. Бычков бригадирпа А. Романов депутат бригадăра социализмла ăмăртăва мĕнле йĕркелени, ăна мĕнле сарса пыни çинчен

тĕплĕн каласа пачĕç. Исполком членĕсемпе ларăва чĕннĕ юлташсем колхозсенчи хăшпĕр бригадăсенче социализмла ăмăртăва начар сарса пынине хытă критиклерĕç. Çак тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине, ĕçре М. Бычков юлташ ертсе пыракан бригадăн опычĕпе анлăн усă курма кирлине кăтартса пачĕç. Исполком членĕсене, депутатсене бригадăсенче ăмăртăва пуçарса ертсе пыма уйрăм участоксем çумне çирĕплетсе хăварнă. Вĕсем хăйсене çирĕплетнĕ бригадăсенче социализмла ăмăртăва М. Бычков юлташ ертсе пыракан бригадăри пек организацилерĕç, ăмăрту мĕнле сарăлса пынине куллен тĕрĕслесе тăчĕç.

Колхозсенче социализмла ăмăртăва анлăн сарса яма депутатсемпе активистсем хăйсем пример кăтартса ĕçлени нумай пулăшать. Ял Совечĕн депутачĕсемпе активисчĕсем колхоз производствинче хăйсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Çураки вăхăтнех илер-ха. Г. Корольков, К. Иванова, А. Егорова т. ыт. депутатсемпе активистсем колхозсенче социализмла ăмăрту пуçарса пыракансем пулса, ăмăртура ыттисене пример кăтартса ĕçлерĕç. Вĕсем уй-хир ĕçĕсенче сухаçăсемпе сÿреçĕсем, акакансем пулса ĕçлесе кулленхи нормăна 130—140 процент чухлĕ тултарса ĕçлерĕç, ытти колхозниксене хăйсем пек ĕçлеме хавхалантарса пычĕç.

Социализмла ăмăртăва анлăн сарса яни колхозсене ака-суха ĕçĕсене кĕске вăхăтра туса ирттерме май пачĕ.

Ял Совечĕн депутачĕсемпе активисчĕсем уйри тырпулсене пĕр тăккаламасăр тата кĕске срокра пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă памалли плана срокченех ирттерсе тултарассишĕн, аслă Сталин патне янă çырура илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлассишĕн, выльăх-чĕрлĕхе хĕл вăхăтĕнче лайăх пăхса усрама пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн, государство умĕнчи пур парăмсене те срокчен парса татассишĕн кĕрешсе социализмла ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ.

Социализмла ăмăртăва анлăн сарса ярасси ăна куллен тĕрĕслесе тăнинчен, пĕтĕм халăх курса тăмалла тунинчен килет. Колхозсемпе бригадăсем хăйсем çине илнĕ социализмла ăмăрту обязательствисене мĕнле пурнăçласа пынине пĕр-пĕрин хушшинче тĕрĕслессине организацилетпĕр. Тĕрĕсличчен икĕ кун малтан тĕрĕслекенсем тĕрĕслÿ пуласси çинчен пĕлтереççĕ, тĕрĕслĕве камсене хутшăнтармаллине палăртаççĕ. Уйри тырпулсене пăхса çитĕнтернĕ вăхăтра ял Совечĕн ялхуçалăх комиссийĕ Мичурин ячĕпе тăракан кол-

хозра бригадăсем хăйсем çине илнĕ социализмла обязательствăсене мĕнле пурнăçланине бригадăсем пĕр-пĕрин хушшинче тĕрĕслессине организацилерĕ. Тĕрĕслӳ пуласси çинчен бригадирсене икĕ-виçĕ кун малтан пĕлтернĕ, тĕрĕслеве камсем хутшăнмаллине палăртнă. Çак ĕçе активистсемпе колхозниксене анлăн хутшăнтарнă. Уйри тырпулсене пăхса çитĕнтерес ĕçе бригадăсем мĕнле организациленине, çак ĕç мĕнле пулса пынине тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă, лайăх тĕслĕх кăтартса ĕçлекен колхозниксен ĕçри меслечĕсене сăнаса пĕлнĕ, çитменлĕхсене палăртнă. Тĕрĕслӳ итогĕсене бригадăсенчи колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе явнă. Пухусенче бригадăра социализмла ăмăрту мĕнле сарăлса пыни, ăна пĕр-пĕр бригадăра мĕнле организацилени çинчен каласа панă, ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен колхозниксен ĕç меслечĕсемпе паллаштарнă, вĕсем пек ĕçлеме вĕрентнĕ. Çавăн пек тĕрĕслӳсене çураки вăхăтĕнче те ирттернĕ, уйри тырпулсене пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçсем вăхăтĕнче те ирттерсе колхозсенчи тата бригадăсенчи пухусенче сӳтсе явнă.

Ял Советĕнче социализмла ăмăрту сарăлса пынине кăтартакан хăма пур. Унта çураки вăхăтĕнче ял Советĕнчи колхозсемпе бригадăсенче социализмла ăмăрту мĕнле сарăлса пынине, бригадăсем çуракине ирттерес ĕçре мĕнле вырăн йышăннине паллă тунă. Çак хăма çине вăрман хатĕрлевĕ, çул-йĕр строительстви, уйри тырпулсене пухса кĕртес, государствăна тырă парас тата ытти ялхуçалăх ĕçĕсем пынă вăхăтсенче социализмла ăмăрту мĕнле сарăлса пынине паллă тăватпăр. Çакăн пек хăмасем колхозсенче те пур. Ялти клуб çумĕнче тухса тăракан стена хаçачĕ те ăмăрту мĕнле сарăлса пынине пĕрмаях çутатса тăрать, ăмăртура малта пыракансен ĕçри паха опычĕсемпе паллаштарать.

Ял Совечĕ темиçе çул хушши ĕнтĕ юнашар Ядрино ял Совечĕпе ăмăртса ĕçлет. Эпир тырпул тухăçлăхне хăпартмалли плансене тултарассишĕн, государствăна ялхуçалăх тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана, вăрман хатĕрлев планне, укçа-тенкĕ пухмалли, çул-йĕрсем тумалли тата благоустройство планĕсене, пурне те обязательнăй йĕркепе çичĕ çул хушши вĕренмелли закона пурнăçлассишĕн, ялсенчи культурăпа çутĕç тата сывлăх учреждениййĕсен ĕçĕсене лайăхлатассишĕн, суту-илӳ ĕçне вăйлатас-

сишĕн, ял Совечĕн организациллĕ-массăллă ĕçне лайăхлатассишĕн ăмăртса ĕçлетпĕр. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе ял Совечĕ социализмла ăмăрту договорĕнче илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырать. Çакна ял Совечĕпе колхоз правленийĕсене, культурăпа çутĕç учрежденийĕсене районри тата республикăри организацисем панă премисемпе грамотăсем, хисеп хăми çине кĕртсе хаклани те аванах çирĕплетсе параççĕ. 1949 çулта иккĕмĕш кварталти социализмла ăмăрту итогĕсем тăрăх Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ял Советне пĕрремĕш преми пачĕ. Çак çулах ял Советне, колхоз правленийĕсене вăрман хатĕрлевĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Чăваш АССР вăрман промышленность министерстви хаклă премисем пачĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен управленийĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатнăшăн ял Советне грамота тата укçа парса премилерĕ. Ялти клуб заведующийĕ Г. Павлов юлташа культурăпа çутĕç учрежденийĕсен социализмла ăмăртăвĕнче мала тухнăшăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен управленийĕ икĕ хутчен грамота тата укçа парса премилерĕ. Иртнĕ çул Г. Павлов юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ хисеплĕ грамота парса наградăларĕ т. ыт. те.

Мĕнле тума пултарнă-ха çаксене?

Ядрино ял Совечĕпе социализмла ăмăрту договорне туса хатĕрленĕ çĕре мĕнпур депутатсемпе активистсене хутшăнтартăмăр. Вĕсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа пачĕç, ăмăрту договорне анлăлатрĕç, илнĕ обязательствăсене пурнăçламалли майсене палăртрĕç. Туса хатĕрленĕ социализмла ăмăрту договорне ял Совечĕн сессийĕнче, колхозниксен пухăвĕсенче, суйлав округĕсенче сӳтсе явнă, колхозниксемпе бригадăсенче тухса тăракан стена хаçачĕсем урлă çутатнă. Ял Совечĕн депутачĕсемпе активисчĕсем социализмла ăмăрту договорĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăçлама колхозниксен пĕтĕм массине мобилизацилерĕç, обязательствăсене пурнăçлама бригадăсемпе колхозниксем хушшинче ăмăрту организацилерĕç, вăл мĕнле сарăлса пынине тĕрĕслесе тăчĕç.

Кашни квартал вĕçленнĕ хыççăн, илнĕ обязательствăсем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тухатпăр. Çак ĕçе ял Совечĕн депутачĕсем туса ирттереççĕ. Культурăпа çутĕç тата медицина учрежденийĕсем илнĕ обязательствăна

мĕнле пурнăçланине М. Иванов, благоустройство тĕлĕшпе тумалли ĕçсем мĕнле пурнăçланса пынине Ф. Игнатьев депутатсем, колхозсемпе бригадăсем хăйсен обязательствисене пурнăçланине ялхуçалăх комиссийĕ тĕрĕслеççĕ т. ыт. те. Тĕрĕслӳ итогĕсем çинчен ялти халăх пухăвĕнче пăхса тухнă.

Кăçалхи июль уйăхĕнче социализмла ăмăртăвăн иккĕмĕш кварталĕнчи итогĕсене тата Ядрино ял Совечĕ ăмăрту договорне мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тухрăмăр. Ăмăртакан ял Совечĕ илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеме депутатсемсĕр пуçне суйлавçăсене хутшăнтартăмăр. Тĕрĕслӳ Ядрино ял Совечĕ те ăмăрту договорĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунине палăртрĕ. Анчах çитменлĕхсем те нумай. Ял Совечĕн председателĕ те, исполком членĕсем те вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕнчен вара кăна ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçлеме хăнăхса çитеймен. Вĕсем ял Совечĕн ĕç планне тума вĕренсе çитеймен-ха. Сессисемпе исполком ларăвĕсем планра кăтартнă кунсенче пулса иртмеççĕ, ялти халăхсен пухăвĕсем сайра хутра кăна пулаççĕ. Ĕç хучĕсемпе ĕçлессине те кирлĕ пек йĕркелемен. Яланхи комиссисем начар ĕçлеççĕ. Пирĕн ял Совечĕн депутачĕсем вĕсен ĕçне тĕрĕсленипе пĕрлех, ял Советне ĕç планĕ тума, сессисемпе исполком ларăвĕсене хатĕрленсе ирттерме, вĕсен протоколĕсене хатĕрлеме, йышăннă решенисене пурнăçлассине организацилеме канашсем пачĕç. Яланхи комиссисен ĕçне йĕркелеме ĕç хучĕсемпе ĕçлеме вĕрентрĕç т. ыт. те. Çапла ял Совечĕн депутачĕсем ăмăртакан ял Совечĕн çитменлĕхĕсене пĕтерме пулăшрĕç.

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулти ăмăрту итогĕсемпе ял Совет исполкомĕ пур ялсенче те ялти халăх пуххисене туса ирттерчĕ. Çак пухусенче ĕççыннисене çур çул хушшинче тунă ĕçсем çинчен каласа кăтартнипе пĕрлех, социализмла ăмăрту договорĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе малашне мĕнле ĕçсем тумаллипе те паллаштартăмăр. Депутатсемпе активистсем ĕççыннисен пĕтĕм массине çав ĕçсене тума мобилизацилеççĕ. Çакăнта— социализмла ăмăрту çинчен ĕççыннисем пурте лайăх пĕлсе тăнинче, илнĕ обязательствăсем çинчен пурне те ăнлантарса панинче, вăл чăннипех массăллă пулнинче пулать социализмла ăмăрту вăйĕ.

## ЯЛ СОВЕЧĔ ТАТА КУЛЬТУРĂПА ÇУТĔÇ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕМ

Ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсем ĕççынни-сене коммунистла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем социализмла ялхуçалăхĕн ĕçченĕсене обществăллă производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшса пыраççĕ, вĕсен культурипе агротехника пĕлĕвне хăпартма, пуçламăш парти организацийĕсене колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе сарма пулăшаççĕ.

Ял Советĕнче ялти тата колхоз клубĕсем, ялти библиотека пур. Ялсенчи пĕтĕм культурăллă-массăллă ĕç вĕсем урлă пулса пырать. Ялти клуба илер-ха. Вăл ялта культура саракан центр пулса тăчĕ.

Ирхине, Мускав радиостанцийĕн дикторĕ çĕнĕ хыпарсем вуланă чухне ялти клуб заведующийĕ Г. Павлов юлташ яланах «Родина» радиоприемник умĕнче ларать, радиопа паракан хыпарсене çырса илет. Қайран ăна акасуха тăвакансем, тырă вырса çыхакансемпе кĕлте турттаракансем патĕнче тата ытти çĕрте те курма пулать. Қолхозниксем каннă вăхăтра вăл вĕсене Совет халăхĕн паттăрла ĕçĕсем, хамăр çĕршывпа тĕнчере пулакан лару-тăрусемпе паллаштарать. Агитациллĕ-массăллă ĕçе ялти клуб заведующийĕ пĕр-пĕччен мар, анлă актив урлă туса пырать. Н. Иванов, В. Васильев, Ф. Игнатьев, С. Романов, А. Романов тата ытти активистсем те колхозниксем хушшинче тĕрлĕрен темăсемпе докладсемпе калаçусем ирттереççĕ, партипе правительствăн постановленийĕсемпе паллаштараççĕ, хаçатсем çинчи материалсене вуласа параççĕ. Çапла кашни колхозник, уй-хирте ĕçлет-и вăл, фермăра-и, итем çинче е çул юсанă çĕрте-и—яланах хамăр çĕршывпа тĕнчери лару-тăрусене пĕлсе тăрать.

Ялти клуба кĕрсен тухас килмелле мар. Унта таса та çутă, стенасем çумĕнче партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, пысăк кантăксем умĕнче занавескăсем. Хитре сăрласа лартнă дивансемпе алăксем йăлтăртаттса тăраççĕ. Ялти клуба пыракана интереслентерекенни те нумай. Вăрăм сĕтел çинче 18 тĕрлĕ хаçатсемпе журналсем йĕркипе выртаççĕ. Қунтах шашкăпа шахмăтла, доминолла выляма, радио итлеме пулать. Справка сĕтелĕ умĕнче кашниех хăйне интереслентерекен тĕрлĕ ыйтусем çине ответсем тупма пултарать. Ялти клубăн тепĕр пӳлĕмĕнче унта пыракана тĕрлĕрен музыка инструменчĕсем,

биллиард кĕтеççĕ. Кунтах тĕрлĕрен лекцисемпе докладсем, калаçусем пулаççĕ.

Кăçал кăна ялти клуб çумĕнчи лекторсен группипе клубăн активисчĕсем колхозниксем валли тĕрлĕрен темăсемпе 43 лекци, 78 доклад, нумай калаçусем туса ирттернĕ. Лекцисемпе докладсем, калаçусем ирттернĕ çĕре ялти клуб ялхуçалăх специалисчĕсене, учительсене, колхоз председателĕсемпе бригадирсене, ферма заведующийĕсене, медицина учрежденийĕсенче ĕçлекенсене анлăн хутшăнтарать. Çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра ялти клуб колхоз председателĕсемпе бригадирсене калаçусем ирттерме ытларах хутшăнтарнă. Тĕслĕхрен, колхоз председателĕ Н. Иронов юлташ «Мичуринла наука социализмла ялхуçалăхăн службинче», «Ĕç лашисене уй-хирти ĕçсене тума хатĕрлесси» т. ыт. темăсемпе те докладсемпе калаçусем ирттернĕ. Çак колхозри малта пыракан бригадăн бригадирĕ С. Пугачев юлташ «Вырăнти удобренисемпе туллин усă курмалла» темăпа калаçу ирттернĕ. Калаçăва С. Пугачев юлташ колхозниксене хĕллехи агротехника мероприятийĕсене пурнăçлама мобилизацилес шутпа, вырăнти материалсемпе анлăн усă курса ирттернĕ.

Ялти клуб санитари пропагандине те япăх мар организацилерĕ. Постановкăсемпе киносеанссем пулас умĕн ялти медицина пунктĕнче ĕçлекенсем тĕрлĕрен чир-чĕрсен сиенлĕхĕ, вĕсемпе кĕрешесси, ялсене тата кил-çуртсене, обществăллă вырăнсене тасалăхра тытасси çинчен докладсемпе калаçусем ирттереççĕ.

Ялти клубра справкăсем памалли сĕтел пур, пĕрле пухăнса радио итлессине лайăх йĕркеленĕ. Унта кашни куллен вуншар колхозниксемпе колхозницăсем тĕрлĕрен ыйтусемпе пыраççĕ. Кашниех вĕсем хăйсене интереслентерекен ыйтусем çине тивĕçлĕ ответсем илеççĕ. 1951 çулхи çур çул хушшинче 400 çын ытла справка сĕтелĕнче хăйсен заем облигацийĕсене тĕрĕсленĕ, 200 çынна яхăн тĕрлĕрен ыйтусем çине ответсем илнĕ. Çак вăхăт хушшинчех ялти клубра пĕрле пухăнса радио тăрăх ялхуçалăх темисемпе 13 калаçу, политикăллă темăсемпе 9 хут, çамрăксен передачине 6 хут итленĕ.

Ялти клубра канмалли вăхăта усăллă ирттереççĕ. Икĕ сехетрен пуçласа ултă сехетчен справка сĕтелĕ ĕçлет. Унтан икĕ сехет хушши кашни хăйне интереслентерекен ĕçсене тăвать: пĕрисем хаçат-журналсемпе илемлĕ литература кĕнекисем вулаççĕ, теприсем шашкăпа шахмат

ваййисене выляççĕ т. ыт. те. Кăçхине 8 сехетпе 11 сехет хушшинче кружоксем хăйсен ĕçĕсене тума тытăнаççĕ. Кружоксем кăçал лайăх ĕçлерĕç. Агрокружок 23 занятие туса ирттерчĕ. Драмкружокăн занятийĕсем эрнере виçĕ хут пулса иртнĕ. Кружок членĕсем колхозниксем валли 9 спектакль, 7 концерт лартса панă. Ялти клуб 3 хутчен шахмат турнирне туса ирттернĕ. Унта 30 ытла çынна хутшăнтарнă.

Ялти библиотека та хăйĕн ĕçне йĕркелет. Акă библиотекăна çĕнĕ кĕнекесем илсе килчĕç. Библиотекăн икĕ пысăк шкафне йĕркеллĕн вырнаçтарса хунă 1400 ытларах кĕнеке çумне татах политикăллă, ялхуçалăх, наукăпа техника, илемлĕ литература кĕнекисем хушăнчĕç. Илсе килнĕ кĕнекесем хушшинче Б. Полевойăн «Повесть о настоящем человеке», О. Гончарăн «Знаменосцы», Н. Шпановăн «Поджигатели», Вильямсăн «Травопольная система земледелия», Мичуринăн «Избранные сочинения» тата ыт. те пур. Библиотека заведующийĕ М. Иванов юлташ анчах илсе килнĕ кĕнекесене вырнаçтарма та ĕлкĕреймерĕ, библиотекăна вулавçăсем пырса тулчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ Н. Шпановăн «Поджигатели» кĕнекине пама ыйтрĕç. Пурте çак хулăм кĕнекене илсе вуласшăн. Ăçтан пĕлеççĕ-ха вĕсем çак кĕнеке кашниех интереслентерекен, хумханса вуламалла кĕнеке пулассине, кĕнекен содержанине? Тин кăна илсе килнĕ вĕт-ха ăна библиотекăна, никам та вуласа тухман. Вăл кĕнекене вулакансем тахçанах пĕлеççĕ, кĕнекен кĕске содержанине те пĕлеççĕ вĕсем. Çапла тумашкăн вулакансене библиотека хăй пулăшать. Пĕр-пĕр çĕнĕ кĕнеке тухсанах, библиотекăра вăл кĕнеке çинчен калаçу ирттереççĕ, çĕнĕ кĕнекесем çинчен хаçатсем çине çырнă статьясене «Çĕнĕ кĕнекесем» текен витрина çумне сыпăçтараççĕ. Мĕнле çĕнĕ кĕнекесем тухнине, вăл кĕнеке вулакана мĕнле усă панине, унта мĕн çинчен çырнине вулакансем библиотекăна илсе пыриччен чылай малтан пĕлеççĕ. «Знаменосцы», «Травопольная система земледелия» кĕнекесем çинчен те библиотекăра тахçанах калаçу ирттернĕ. Çавăнпа ĕнтĕ çĕнĕ кĕнекесем кунта пĕр сехет те выртмаççĕ. Пĕрисем вуласа тухса пырса парсанах, теприсем илсе каяççĕ. Акă Б. Полевойăн «Повесть о настоящем человеке» кĕнекинех илер-ха. Пĕр çулталăк хушшинче ăна 26 çын вуласа тухнă.

Библиотекăран кĕнеке илсе вулакансем пĕр-пĕр çĕнĕ кĕнекене вуласа тухсанах унăн содержанийĕ çинчен, кĕ-

некери геройсен—совет çыннисен хастарлă та пархатарлă ĕçĕсем çинчен хăйсемпе пĕрле ĕçлекен колхозниксене каласа параççĕ. Акă Л. Толстов, А. Вашуткин, А. Краснов 20—25-шер кĕнеке вуласа тухнă. Қашнинчех вĕсем вуласа тухнă кĕнекен кĕске содержанине хăйсемпе пĕрле ĕçлекенсене каласа панă.

Библиотекăра ларатпăр. Пĕр сĕтел çинче пĕр ушкăн çамрăксем «Молодой колхозник», «Молодой большевик» журналсене пăхса лараççĕ. Ватă мучи «Қолхозное производство» журнала уçса ларать. Қĕнеке илме пынă çамрăксенчен пĕриййĕ çĕнĕрен мĕнле кĕнекесем пуррине пĕлесшĕн пулчĕ. Ăна вăл ятарласа тунă хăма çинче тупрĕ. Унта библиотекăна илсе килнĕ çĕнĕ кĕнекесен списокне çыпăçтарнă.

Библиотекăна пыракан кашни çынна ăшшăн кĕтсе илеççĕ, кирлĕ справкăсем, лайăх канашсем, интереслĕ кĕнекесем тупса параççĕ. Пĕр-икĕ тĕслĕх илĕпĕр. З. Андреев юлташ библиотекăри кĕнекесене нихçан та илсе вуламан. Иртнĕ çул ăна пĕрлешнĕ колхозăн пахча çимĕç лартса тăвакан бригадине ертсе пыма уйăрнă. Библиотека заведующийĕ ăна пахча çимĕç туса илесси çинчен калакан кĕнекене илсе вулама сĕннĕ.

— Питех те нумая вĕрентрĕ кĕнеке. Эпĕ хамăн пахчара нихçан та 8—9 килограмм таякан турнепспа купăста туса илмен. Қĕнеке вуласа тухни колхоз пахчинче лайăх пахча çимĕç туса илме пулăшрĕ,—тет вăл. Çакăн хыççăн вăл библиотекăран тăтăшах кĕнекесем илсе тăма тытăнчĕ.

Çуракине хатĕрленнĕ тапхăрта библиотека заведующийĕ «Большевик» колхозри кладовщик Д. Федоров юлташа библиотекăна чĕнсе илнĕ.

— Акă мĕн, тусăм. Халĕ эсир çуракине вăрлăхсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлетĕр. Çак кĕнекепе—«Вăрлăхсем тата вĕсене акма мĕнле хатĕрлесси» ятлă кĕнекепе паллашсан питех те аван пулмалла-мĕн. Малтан ăна хăвăр вулăр, унтан амбарсем патĕнче ĕçлекен ытти колхозниксене те вуласа парăр.

Çак кĕнекене вуласа тухнă хыççăн кладовщик та, вăрлăхсем хатĕрлеме уйăрнă бригада членĕсем те вăрлăхсем хатĕрлес тĕлĕшпе чылай пĕлӳ илнĕ.

«Большевик» колхозри бригадир С. Пугачев юлташ «Севооборот и его значение в поднятии урожайности», «Обработка почвы и борьба с сорняками» т. ыт. чылай брошюрăсене библиотекăран илсе вуланă. Вуласа тухнă

хыççăн вĕсем çинчен вăл колхозниксен производствăллă канашлăвĕсенче каласа панă.

Библиотекăра яланах кĕнеке выставкисемпе витринисем пур. Вĕсене ялхуçалăхĕн пĕр-пĕр тапхăрне кура организацилеççĕ. Çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра витринăсем çинче çуракине хатĕрленес ыйтăва татса паракан кĕнекесемпе брошюрăсене, çураки вăхăтĕнче ăна ирттересси çинчен вĕрентекен кĕнекесемпе брошюрăсене курма пулать т. ыт. те.

Ялти клубпа библиотека колхозсенче уй-хирти ĕçсем пуçлансанах хăйсен пĕтĕм ĕçне уй-хире, итемсем çине, транспорт бригадине куçараççĕ. Уй-хиртех стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тухаççĕ, унтах калаçусем ирттереççĕ, колхозниксем каннă вăхăтра кĕнекесемпе хаçатсем вуласа парассине организацилеççĕ. Çак ĕçсене ялти клубпа библиотека хăйсен анлă активĕ урлă туса пыраççĕ. Кăçал уйри тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра ялти клубпа библиотека культурăллă-массăллă ĕçе мĕнле организациленине илсе кăтартар. Уйри тырпулсене пухса кĕртме тытăниччен чылай малтан ялти клуб заведующийĕ Г. Павлов юлташ агитаторсемпе темиçе заняти туса ирттерчĕ. Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем агитаторсене ĕçре пулăшма боевой листок редакторĕсемпе вулавçăсем уйăрса панă. Колхозсем тырă вырма тухнă малтанхи кунсенчех агитаторсем уйра, итемсем çинче, транспорт бригадисенче ĕçлекен колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса янă. Кашни бригадăрах кашни куллен калаçусем ирттереççĕ, çĕнĕ хаçатсем вуласа параççĕ, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлараççĕ. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем çинче уй-хир ĕçĕсенче малта пыракансен паха опытне анлăн çутатаççĕ, юлса пыракансене, колхозри кахалсене критиклеççĕ. Активистсем колхозсенче уйри тырпулсене пухса кĕртме тытăннă малтанхи кунсенчех пĕтĕм ĕçе уйрăм сдельщина йĕркипе тăвассине йĕркелерĕç, тырпула пĕр тăккаламасăр тата кĕске срокра пухса кĕртессишĕн, государствăна срокчен тырă парса татассишĕн колхозниксем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса янă. Клуб активисчĕсем С. Романов, Г. Алексеев, М. Митрофанова т. ыт. те бригадăсенче кашни куллен хаçатсем вуласа парассине йĕркеленипе пĕрлех, колхозниксем хушшинче тырпула тăккалассинчен сыхланасси, уй-хир ĕçĕсен срокне кĕскетесси çинчен калаçусем ирттереççĕ.

Акă С. Романов активист тырпул тăккаланассинчен сыхланасси çинчен каласа колхозниксене ӳкнĕ пучаха тураса илме ятарласа кĕрепле тума сĕннĕ. Вăл хушнă пек туса колхозниксем пĕтĕм ӳкнĕ пучахсене пуçтарса илчĕç. Активистсем колхозсемпе бригадăсенче кăтарту хăмисем тунă. Вĕсем çине кашни кунăн итогне, ĕçре малта пыракансен ячĕсене çыраççĕ.

Колхозсемпе бригадăсенче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе тарăнăн шухăшласа тата лайăх йĕркелени хăйĕн результачĕсене пачĕ. «Большевик» колхоз кĕрхи тырăсене 9 кунта вырса пĕтерме палăртнă. Колхозниксем ăна 6 кун хушшинче вырса пĕтерчĕç. Колхоз тырă вырма тухнă малтанхи кунсенчех авăн çапса тырă типĕтессине организацилесе государствăна тырă памалли графика кашни пилĕккунлăхрах ирттерсе тултарчĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз та кĕрхи тырăсене планпа пăхнинчен икĕ кун малтан пухса кĕртрĕ. 1951 çулта ял Советĕнчи икĕ колхоз та государствăна тырă памалли плана августăн 22-мĕшĕнче, иртнĕ çулхинчен 23 кун малтан тултарчĕç.

Ялти клуб массăллă-ăнлантаруллă ĕçе пĕрмаях лайăхлатса пырас шутпа час-часах калаçу ирттерекенсемпе вулавçăсен, боевой листок редакторĕсен канашлăвĕсене туса ирттерет. Çак канашлусенче лайăх ĕçлекен агитаторăн, вулавçăн, боевой листок редакторĕн ĕçĕсемпе, çитес кунсенче ирттермелли калаçусен темисемпе паллаштараççĕ.

Ялти клуб ĕçне вăйлатасси клуб заведующийĕ халăх хушшинче тăтăшах отчетсем туса тăнинчен те нумай килет. Кăçалхи май уйăхĕнче ялти клуб пур ялсенче те хăйĕн ĕçĕсем çинчен отчетсем туса пачĕ. Ялти клуб çак ĕçе мĕнле организацилерĕ-ха? Отчетлă пухусем пуласси çинчен ялти халăха 3—4 кун малтан хут çине çырса çыпăçтарнă пĕлтерӳсем урлă пĕлтернĕ. Çак кун тĕлне клуб пӳлĕмĕсене илемлетнĕ. Унта культурăллă-массăллă ĕç, ял культури ӳснине кăтартакан выставкăсем уçнă, ятарласа стена хаçачĕсем кăларнă, концертсем хатĕрленĕ. Пухусене ирттерме малтанах хатĕрленни вĕсене лайăх ирттерме май пачĕ. Ял халăхĕсем пухусенче культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсене тишкĕрчĕç, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç. Кăташра пулса иртнĕ пухура ял çыннисем ялти клуб агробиологи наукине сарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине, лекторсен группин хăшпĕр лекторĕсем лекцисене ирттерме çителĕклĕ хатĕр-

ленменнине, вĕсем ирттерекен лекцисем идейăпа теори тĕлĕшĕнчен çӳлĕ мар пусăмра тăнине, клуб оборонăллă тата физкультурăллă ĕçсене начартарах туса пынине кăтартса пачĕç, ялти библиотека вулавçăсен конференцийĕсене сахал ирттернине критиклерĕç. Çак пухусем культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне чылай лайăхлатма пулăшрĕç. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем пухусенче кăтартса панă çитменлĕхсене пĕтерсе пыраççĕ.

Пирĕн ял Советĕнчи ялти клуб та, библиотека та районра малта пыраканнисен ретĕнче шутланаççĕ. Мĕнле тума пултарнă-ха çакна? Çак ыйту çине ответлесе çапла калама пулать: пĕтĕм ĕçе кунта çынсем татса параççĕ. Ял Совечĕ ялти клуб заведующийĕ пулса ĕçлеме Г. Павлов, библиотека заведующийĕ пулса ĕçлеме М. Иванов коммунистсене, хăйсен ĕçне чун-чĕререн юратакан, массăпа çыхăнса ĕçлеме пĕлекен çынсене лартнă. Вĕсем хăйсен пĕтĕм пĕлĕвне, вăйне клубпа библиотека ĕçĕсене лайăхлатас ĕçе, массăсем ыйтнине тивĕçтерес ĕçе хураççĕ. Çавăнпа вĕсене ĕççыннисем хисеплесе мухтаççĕ. Ял Совечĕпе унăн культурăпа çутĕç комиссийĕ те, ял Совечĕн исполкомĕ те, депутатсем те культурăпа çутĕç учрежденийĕсене ĕçре куллен пулăшса пыраççĕ, вĕсен ĕçĕнче пулакан çитменлĕхсене çийĕнчех сирсе ямалли майсене тупса параççĕ, вĕсен ĕçĕнче хăйсем яланах активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Мĕнре пулать-ха çак пулăшу? Ял Совечĕн культурăпа çутĕç комиссийĕ тата активистсем ялти тата колхоз клубĕсене, библиотекăна ĕç планĕсем тума, клубсемпе библиотекăсем тума палăртнă ĕçсене пурнăçланă çĕрте куллен пулăшаççĕ, вĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ. Кашни кварталтах культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен ял Совет исполкомĕнче отчетсем итлетпĕр, вĕсен ĕç планĕсене пăхса тухса çирĕплететпĕр. Ял Совечĕн работникĕсемпе исполком членĕсем кашни кунах ялти клубра, библиотекăра пулса вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартса вĕсене пĕтерсе пымалли майсене тупса параççĕ, ĕçе лайăхлатма канашсем параççĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсем те пĕр-пĕр çĕнĕ ĕç тумалла пулсан, ĕçре çитменлĕхсем пулсан яланах ял Советне пырса калаçса татăлаççĕ, канашсем илеççĕ.

Ял Совечĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсене бюджетпа палăртнă укçа-тенкĕне вăхăтра парса тăрать, вĕсене хĕле яланах вăхăтра тата лайăх хатĕрлеме тăрăшать.

Ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсем агитаципе массăллă ĕçĕн чăн-чăн вучахĕсем пулса тăчĕç. Вырăнти партипе совет организацийĕсем ертсе тата куллен пулăшса пынипе вĕсем пысăк та кирлĕ ĕç тăваççĕ, колхозлă ялăн ĕçченĕсене большевиксен партипе совет государстви кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама мобилизацилеççĕ. Çавăнпа вĕсем колхоз хресченĕсем умĕнче пысăк авторитетпа усă кураççĕ.

Большевиксен партипе Совет государстви культурăпа çутĕç работникĕсене коммунизмшăн кĕрешес ĕçри идеологиллĕ фронтра пысăк та кирлĕ участок шанса панă. Çак шанăçа тӳрре кăларасси, ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçе активлă туса пырасси, совет культурине малалла сарса пырасси—вăл пирĕн тивĕç.

## ПУÇЛАМĂШ ПАРТОРГАНИЗАЦИ ЯЛ СОВЕТНЕ ЕРТСЕ ПЫНИ

Пирĕн пĕтĕм ĕçре, эпир коммунизм çулĕпе малалла кайса пынă çĕрте пире çул кăтартса ертсе пыракан вăй вăл Ленин—Сталин партийĕ пулса тăрать. Вăл совет çыннисене пĕтĕçтерет, хавхалантарать, организацилет, вĕсен вăйĕсене аслă тĕллеве—коммунизмлă общество тăвас задачăна пурнăçлама пĕрлештерет.

Большевиксен партийĕ «социализм стройне тĕреклетсе малалла ӳстерессишĕн пыракан ĕççыннисен кĕрешĕвĕнче вĕсен малти отрячĕ пулса тăрать, ĕççынисен мĕнпур организацийĕсене — обществăллисене те, государствăллисене те — ертсе пыракан чăмăр пулса тăрать», тесе каланă СССР Конституцийĕнче.

Ял Совечĕсем хăйсен нумай енлĕ ĕçĕсене колхозсенчи пуçламăш парторганизацисемпе таччăн çыхăнса, пĕрпĕринпе килĕшсе туса пырсан, парторганизацин кăтартăвĕсене вăхăтра пурнăçласан, унтан тивĕçлĕ пулăшу илсе тăрсан çеç вăхăтра та тикĕс, кал-каллăн туса пыма пултараççĕ. Ял Совечĕпе колхозри пуçламăш парторганизаци ялхуçалăхне малалла вăйлатса пырас ĕçĕн тĕп участокĕсенче тăраççĕ, колхоз хресченĕсен анлă масси хушшинче ĕçлеççĕ. Парти политики, ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе илсен, тырпул тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстерсе пырасси, ялхуçалăх продукчĕсем ытларах туса илесси, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстерессè, колхозсен обществăллă хуçалăхне тĕреклетес-

си пулать. Çакна эпир яланах асра тытатпăр, çав задачăна ăнăçлăн пурнăçлас тесе ял Совечĕ пуçламăш парторганизаципе пĕрле килĕшсе ĕçлет. Çакăн çинчен кĕскен çырса кăтартар.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантарасси çинчен йышăннă постановлени тата иртнĕ çул пĕчĕк ялхуçалăх артелĕсене пысăклатни парти организаципе ял Совечĕн ялхуçалăхне ертсе пырас ответлăхне ытларах ӳстерчĕç. Парти организаципе ял Совечĕн пĕрлешсе пысăкланнă колхозăн ĕçĕсемпе уйрăммăнах интересленмелле, пысăкланнă колхоза ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатмалла, нумай енлĕ обществăллă хуçалăхăн экономикине тĕплĕн тĕпчесе вĕренмелле. Çак ĕçсене ял Совечĕ колхозри пуçламăш парторганизаципе пĕрле татса парать.

Иртнĕ çулхи июнь уйăхĕнче ял Совет территоринчи «Пионер» тата «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозсем пĕрлешсе «Большевик» колхоз турĕç. Малтанласа пĕрлешнĕ колхозра ĕçсем ăнсах кайман, ĕç дисциплини çукки палăрчĕ. Хăшпĕр колхозниксем колхоз производствине хутшăнман е сахал хутшăннă, колхозниксене паракан çăмăллăхсемпе усă курса, хăйсен хуçалăхне ытларах ӳстерме пăхнă. Çак ыйтăва пуçламăш парторганизаци пухăвĕнче, ял Совет исполкомĕнче сӳтсе яврăмăр. Депутатсемпе коммунистсене колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснă фактсене тĕрĕслеме, ялхуçалăх артелĕн Уставне ăнлантарса пама уйрăм бригадăсем çумне çирĕплетрĕмĕр. Вĕсем колхозниксем хушшинче ялхуçалăх артелĕн Уставне çирĕппĕн пурнăçласа пыни колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетме кирлĕ услови пулса тăнине, ялхуçалăх артелĕн Уставĕ колхоз пурнăçĕн законĕ, ăна никам та пăсма пултарайманнине, Уставăн кашни пункчĕн тĕллевĕ колхозăн обществăллă хуçалăхне вăйлатасси, колхозниксен пурнăçне пуянлатса, культурăна ӳстересси патне илсе пыни çинчен каласа ăнлантарчĕç. Коммунистсемпе депутатсем колхозниксен интересĕсене колхозăн обществăллă интересĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарса пыма вĕрентсе пычĕç. Çапла вара колхоз правленине колхоза сиен кӳрекенсене, рвачсене, кахалсене хирĕç çирĕппĕн кĕрешме пулăшса пытăмăр. Çакăн хыççăн колхозниксем артель ĕçне тӳрĕ кăмăлпа хутшăнма пуçларĕç, колхоза вăйлатма тăрăшни хăйсен пурнăçне лайăхлатса пыма май панине ăнланчĕç. Çакна ĕçку-

нĕсен минимумне тултарса пыман колхозниксен хисепĕ чакса пыни те, ĕçкунĕсем нумай ĕçлесе илекен колхозниксен хисепĕ ӳсни те аванах çирĕплетсе параççĕ.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерме кашни колхозник çĕрĕçне лайăх пĕлни кирлĕ. Колхозниксем ку таранччен вĕренни вăл çителĕксĕр. Халĕ пур колхозниксем те хăйсен ĕçĕн чăн-чăн специалисчĕсем пулса тăни кирлĕ. 1950 çулхи кĕркунне колхозра виçĕ çул вĕренмелли агротехника курсне организациленĕ. Çак курсра 43 колхозник вĕренеççĕ. Курс мĕнле ĕçленине ял Совечĕпе пуçламăш парторганизаци куллен тĕрĕслесе тăраççĕ, коммунистсемпе депутатсем те çав курсра вĕренеççĕ.

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ ялти социализм строительствин тĕп задачисене пурнăçлассине асра тытса, колхоз производствине тĕрĕс планласа пыма хушать. «Колхоз вăл — шултра хуçалăх. Шултра хуçалăха плансăр тытса пыма çук»,—тет Сталин юлташ («Ленинизм ыйтăвĕсем», 388 стр.). План — колхозăн пĕтĕм ĕçне организацилемелли программа пулса тăрать. Илсе пăхар-ха колхозăн çулталăкри производство планне. Çав планăн тĕллевĕ — колхозăн çулталăкри пĕтĕм ĕçĕсене кăтартса парасси пулать: мĕн тата мĕн чул акмалла, мĕнле тырпул туса илмелле, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем тумалла, çĕнĕрен мĕнле çуртсем тумалла, мĕн туянмалла т. ыт. те. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕн решенийĕ ĕçе организацилесси, агротехника кăтартăвĕсене пурнăçласси, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстересси т. ыт. çинчен кăтартса панисем пĕтĕмпех планра паллă вырăн йышăнмалла. Колхозăн производствăллă планне туса хатĕрленĕ çĕрте ял Совечĕпе пуçламăш парторганизаци пулăшни кирлĕ. «Большевик» колхоз правленийĕ туса хатĕрленĕ плана малтан ял Совечĕн депутачĕсемпе коммунистсен канашлăвĕнче пăхса тухнă. Ял Совечĕ те, пуçламăш парторганизаци те колхозăн производствăллă планĕпе колхозри ватă çынсене, стахановецсене чĕнсе паллаштарчĕç. Вĕсем панă сĕнӳсене пурне те шута илсе планра тӳрлетӳсем турăмăр, хушусем кĕртрĕмĕр. Çакăн пек туса хатĕрленĕ плана парторганизацин уçă пухăвĕнче сӳтсе явнă. Пухăва коммунистсемпе депутатсемсĕр пуçне активистсене, колхозри ватă çынсене чĕннĕ. Пухура пулнисем татах та лайăхрах сĕнӳсем пачĕç. Çапла колхоз правленине пур енлĕ, пурне те шута илсе тунă производствăллă план

тума пулăшрăмăр. Çак плана колхозниксен тата бригадăсенчи пухусенче пăхса тухнă.

Çапла туни мĕнле ĕçе хăçан тумаллине, унăн пысăкăшне, пахалăх енĕпе мĕнле требованисем лартнине колхозниксемпе бригадирсене лайăх пĕлсе тăма, вĕсене государство панă плансене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнма май пачĕ. Халĕ депутатсемпе коммунистсем планра палăртнă ĕçсене пĕтĕмпех пурнăçлассишĕн колхозниксен пĕтĕм вăйне мобилизацилеççĕ.

1948 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕ «Колхозсенче ĕçе организацилессине лайăхлатмалли, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли тата ĕçшĕн тӳлессине йĕркелемелли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕ. Çак постановление пурнăçлас тĕлĕшпе те ял Совечĕпе пуçламăш парторганизаци колхоз правленине нумай пулăшрĕç. Депутатсемпе коммунистсем колхозра ĕç нормине тăвас, ĕçшĕн тӳлес тĕлĕшпе пулнă çитменлĕхсене пĕтерме, учет ĕçне лайăхлатма, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене тĕрĕс организацилеме куллен пулăшса пычĕç тата пулăшса пыраççĕ те. Пысăкланнă «Большевик» колхозра производство бригадисене çирĕплетес тĕлĕшпе нумай ĕç тунă. Çак икĕ колхоз пĕрлешиччен «Пионер» колхозра 5 бригада, «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозра 2 бригада пулнă. Халĕ колхозра уй-хир бригадисем виççĕ тата выльăх апачĕсем хатĕрлекен бригада пур. Производство бригадисем туса йĕркеленĕ чухне ял Совечĕпе пуçламăш парторганизаци производство хатĕрĕсене валеçессине, ĕç тата туртăм вăйĕсене танлаштарассине тĕрĕс тума пулăшрĕç.

Парти организацисен ялти ĕçыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе куллен туса пымалла, вĕсене Ленин—Сталин партине, колхоз стройне чунтан-чĕререн юратса ĕçлеме вĕрентмелле. Хуçалăхра çитĕнӳсем тăвасси политикăллă ĕçе лайăх та тăрăшса туса пынинчен килет. Пуçламăш парторганизацисем çумĕнче агитколлективсем пур. Вĕсенче 35 агитатор. Вĕсенчен 13 депутатсем. Вĕсем пурте массăсем хушшинче ĕçлес енĕпе пысăк опыт туяннă. Агитаторсем политика ыйтăвĕсене лайăх ăнлантараççĕ, производствăра малта пыраççĕ. Çак пысăк вăй ĕççыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса яма май парать. Кашни агитатора уйрăм участоксем тăрăх вырнаçтарса тухнă. Вĕсем хăйсен участокĕсенче кулленех пулса политикăллă-массăллă ĕçе

туса пыраççĕ. Уçăмлă примерсемпе тата цифрăсемпе вĕсем ĕççыннисене социализмла стройăн вăйĕпе пурнăçлăхне кăтартса параççĕ.

Мĕнпе паллă пулаççĕ-ха агитаторсем хăйсен ĕçĕнче? Агитаторсен ĕçри паха енĕ—итлекенсене интереслентерме, пĕтĕм кăмăлтан калаçтарма, вĕсен шухăш-кăмăлĕсене ăнланма пĕлни пулса тăрать.

Ĕççыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне туса пырас тĕлĕшпе ял Совечĕн секретарĕ коммунист В. Васильев агитатор уйрăммăнах палăрса тăрать. Инициативлă агитатор вăл ĕççыннисем хушшинче массăллă ĕçсем туса пымалли интереслĕ, хавхалантаракан формăсем тупать. Пĕррехинче вăл çамрăксемпе «Совет влаçĕ—санăн телейӳ, санăн пурнăçу» темăпа калаçу ирттернĕ. Калаçу вăхăтĕнче вăл Н. Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ», А. Фадеевăн «Çамрăк гварди» произведенийĕсенчен пирĕн аслă Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн çамрăксем мĕнле кĕрешнине кăтартакан вырăнсене вуласа панă. Колхозниксем ыйтнă тăрăх вăл Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз председателĕ Коротков юлташăн «Социалистическое земледелие» хаçатра пичетленнĕ «Эпир колхозăн обществăллă хуçалăхне мĕнле аталантаратпăр» ятлă статьине вуласа панă. Вăлах «Совет влаçĕ пирĕн яла мĕн пачĕ» темăпа калаçу ирттернĕ. Калаçăва ирттерме вăл тĕплĕн хатĕрленнĕ, ялти ватă çынсемпе калаçнă, тĕрлĕ вырăнти фактсене нумай пухнă. Калаçăва ирттернĕ чухне революциччен хресченсен пурнăçне сăнласа кăтартма вырăс писателĕ И. Тургеневăн «Записки охотника» произведенийĕпе усă курнă.

Н. Иванов, Ф. Игнатьев, М. Иванов, П. Корольков депутатсем те ĕççынисем хушшинче час-часах тĕрлĕрен темăсемпе калаçусем ирттереççĕ. Вĕсем ĕççыннисене хамăр çĕршыври тата тĕнчери лару-тăрусем çинчен, Англи, Франци, Итали тата ытти капитализмла çĕршывсенчи ĕççыннисем миршĕн кĕрешни, Совет Союзĕ—мирĕн никам хавшатайми тĕрекĕ, мĕнпур çĕршывсенчи ĕççыннисен авангарчĕ пулса тăнине, малта пыракан пĕтĕм этемлĕх Совет Союзĕ тавра пĕтĕçни çинчен каласа параççĕ, партипе правительствăн постановленийĕсемпе паллаштараççĕ.

Пуçламăш парторганизацисем политикăллă-массăллă ĕçе пĕрмаях лайăхлатса пырассишĕн тăрăшса агитаторсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăраççĕ, агитаторсен семинарĕсемпе канашлăвĕсене туса ирттереççĕ. Семинарсемпе канаш-

лусенче агитаторсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашаççĕ, çитес вăхăтсенче ирттермелли калаçу темисене илеççĕ.

Ял Совечĕн депутачĕсем пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсене яланах активлă хутшăнаççĕ. Депутатсем саккăрăшĕ коммунистсем. Вĕсен пурин те парти порученийĕсем пур. Вĕсем ăна тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыраççĕ. Депутатсенчен виççĕшĕ пуçламăш организацин партбюро членĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Пуçламăш парторганизаци ял Совечĕн ĕçĕсемпе тăтăшах интересленет: ял Совечĕ укçа-тенкĕ пухас, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана тултарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени, хуçалăхпа культура строительствин мĕнпур ыйтăвĕсене татса панă çĕрте ял Совечĕн организаторла рольне ӳстересси çинчен парти пухăвĕсенче ыйту лартса сӳтсе явать. Юлса пыракан участоксене пулăшма коммунистсене ярать. Акă, пĕр вăхăтра ял Совечĕ государствăна выльăх-чĕрлĕх продуктисем памалли плана тултарас тĕлĕшпе юлса пычĕ. Çак ыйтăва пуçламăш парторганизаци парти пухăвĕнче сӳтсе эврĕ. Коммунистсем ял Совечĕ çак тĕлĕшпе юлса пынин тĕп сăлтавĕсене кăтартса пачĕç, уйрăм работниксен ĕçри çитменлĕхĕсене хытă критиклерĕç, выльăх-чĕрлĕх продуктисем памалли плана вăхăтра тултарас тĕлĕшпе ял Совечĕн мĕн-мĕн тумаллине яр уçса пачĕç. Пуçламăш парторганизаци кăтартса панисене пурнăçлас майпа ял Совечĕ депутатсемпе активистсене уйрăм участоксем тăрăх вырнаçтарса тухрĕ. Вĕсем хăйсен участокĕсенче ĕççыннисем хушшинчи массăллă-ăнлантарулла ĕçе куллен туса пычĕç, государство заданийĕсене тултарасси кашни ĕççыннин тивĕçĕ пулса тăнине ăнлантарчĕç. Уйрăммăнах юлса пыракан участоксенче политикăллă-массăллă ĕçе туса пыма пуçламăш парторганизаци коммунистсене çирĕплетрĕ. Пухура уполминзаг агенчĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен те каларĕç. Унăн ĕçĕнче йĕркелĕх çук, мĕнле кун хăш ялта ĕçлемелли графика туман, государствăна выльăх-чĕрлĕх продуктисем памалли задание юриех пурнăçламасăр тăракан уйрăм сдатчиксем тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Çак ыйтăва кун хыççăн ял Совет исполкомĕнче сӳтсе явнă. Уполминзаг агенчĕн ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене кăтартса парса ăна çав çитменлĕхсене пĕтерме пулăшнă.

Ял Совечĕ суйлавçăсен наказĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен пуçламăш парторганизаци хăйĕн уçă пухă-

вĕнче пăхса тухрĕ. Пухăва партире тăман актива, суйлавçăсене чĕннĕ. Пуху ял Совечĕ суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунине палăртнипе пĕрлех, çитменлĕхсене, туса çитермен ĕçсене те кăтартса пачĕ.

— Яла илемлетесси вăл йывăç лартнипе, урамсене тасатнипе, кĕперсемпе çăлсене юсаттарнипе, униче картисене, пахчасене карта тытнипе кăна пĕтмест. Спорт площадкисем, хитре скверсем тăвасси, урамсене чул сарасси, хăмасенчен тротуарсем тăвасси çинчен те шухăшлама вăхăт ĕнтĕ. Ял Совечĕн ку тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле,— кăтартса пачĕ пухура И. Васильев коммунист.

Пуху ял Советне ял илемлĕхĕпе тирпейлĕхне пĕрмаях лайăхлатса пырас тĕлĕшпе, суйлавçăсем парса хăварнă наказсене пурнăçлас тĕлĕшпе татах та тимлĕрех ĕçлеме кирлине кăтартса хăварчĕ. Ял Совечĕ çак ыйтусене халăх пухăвĕсенче, суйлав округĕсенчи пухусенче ыйту лартса сӳтсе講 яврĕ.

Пуçламăш парторганизаци ĕçре большевикла йĕркелĕх тăвассишĕн тимлĕн кĕрешет. Сталин юлташ вĕрентнĕ тăрăх, пирĕн строительство ĕçĕнчи çитĕнӳ вăл, пуринчен ытларах, тĕрĕс ертсе пынинчен килет.

«Çакна ăнланса илес пулать,—тет Сталин юлташ,— пирĕн партипе совет, хуçалăх тата ытти тĕрлĕ организацисемпе вĕсен руководителĕсен вăйĕ тата авторитечĕ нихăçанхинчен те вăйлă ӳсрĕ. Шăпах ĕнтĕ вĕсен вăйĕпе авторитечĕ нихăçанхинчен те вăйлăн ӳснĕ пирки,—халĕ пурте е пурте тенĕ пекех вĕсен ĕçĕнчен килет. Объективлă условисем тенĕскерсем çине кăтартса панине халĕ тӳрре кăларма çук. Партин политикăллă линийĕ тĕрĕс пулнине темиçе çул хушшинчи опыт çирĕплетсе панă хыççăн, рабочисемпе хресченсем вăл линие пулăшма хатĕр тăни тĕлĕшпе нимĕнле иккĕленӳ те çук чухне,—объективлă условисем тенĕскерсен ролĕ питех те вăйлăн чакса ларчĕ, çав вăхăтрах пирĕн руководителĕсен ролĕ ĕçе татса паракан вăй пулса тăчĕ».

Эпир ку таранччен пулнă ӳсĕмсене пуçламăш парторганизаци ялти кадрсемпе ĕççыннисене организацйллĕ те дисциплинăллă пулма, социализмлă ăнланулла та чăтăмлă пулма вĕрентсе воспитани панипе тума пултарнă. Большевиксем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма пултараймаççĕ. Пирĕн малалла каймалла, çитĕнӳсене ӳстермелле, государство заданийĕсене вăхăтра та тĕрĕс пурнăçласа пы-

малла. Çапла тăвас пулсан, чи малтан, парти, совет тата хуçалăх организацийĕсен руководствине лайăхлатмалла, ĕçри йĕркелĕхе çирĕплетмелле. Пуçламăш парторганизаци ялти кадрсене, ял Совечĕн депутачĕсемпе активисчĕсене малалла аталанса пыма кансĕрлекен йывăрлăхсемпе чăрмавсене малтанах курса тăма, çав йывăрлăхсемпе чăрмавсене пĕтерме кирлĕ вăя вăхăтра пухма, ĕçе чарăнса лармалла мар тума, пĕр вырăнта чарăнса тăрас хăрушлăха сирсе яма, пĕрмаях малалла кайма кирлĕ условисем туса хума вĕрентсе пырать.

Большевикла организацилĕх вăл оперативно ертсе пынипе, вырăнти ĕçсене пур енчен те тĕплĕн тĕпчесе вĕреннине, решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе лайăх йĕркелесе янине пĕлтерет. Ял Совечĕпе е ялти ытти организацисемпе ертсе пырас ĕçре, кирек мĕнле ыйтупа илсен те, пуçламăш парторганизаци малтан пур енчен те тĕплĕн тĕпчесе вĕренет. Тĕслĕхрен, пуçламăш парторганизаци ял Советне укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас тĕлĕшпе ертсе пынине илсе кăтартар. Пуçламăш парторганизацин бюровĕ укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пулса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăрать. Çак тĕлĕшпе юлса пыракан участоксене, юлса пынин сăлтавне, укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекенсен опытне палăртать. Ыйтăва çакăн пек тĕпчесе вĕренни—ĕç мĕнле пынине тĕрĕс хаклама, опыта пĕтĕçтерме, ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тумаллине тĕплĕн палăртса хума май парать. Çавăнпа парторганизацин кăтартăвĕсем яланах вырăнлă пулаççĕ. Ял Совечĕ пуçламăш парторганизаци кăтартăвĕсене яланах чыслăн пурнăçласа пырать.

Еçри йĕркелĕхшĕн пыракан кĕрешӳре большевикла критикăпа самокритика пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Критикăпа самокритикăна вăйлатса пыман çĕрте ĕçе лайăх йĕркелесси çинчен, ăна вăхăтра та тĕрĕс туса пырасси çинчен, чăн-чăн дисциплина çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Акă мĕншĕн пуçламăш парторганизаци критикăпа самокритикăна куллен-кун вăйлатса пырать.

Ял Совечĕ е ялти ытти организацисем тĕлĕшпе хăй йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине пуçламăш парторганизаци тăтăшах тĕрĕслесе тăрать.

Ял Советне пăхăнса тăракан учрежденисен ĕçне лайăхлатас майпа вĕсен ĕçĕсем çинчен те парторганизаци хăйĕн пухăвĕсенче ыйту лартать. Кăçал пуçламăш парторганизаци ялти клубпа библиотека, медицина пункчĕн

ĕçĕсем çинчен, шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçĕ мĕнле пулса пыни, шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленни çинчен хăйĕн пухăвĕнче пăхса тухрĕ. Коммунистсем вĕсен ĕçĕнчи мĕнпур çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене те кăтартса пачĕç.

Ял Совет территоринче пуçламăш парторганизацисем иккĕ. Ял Совечĕн ĕç планĕсене туса хатĕрленĕ чухне яланах пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе калаçатпăр. Тума палăртнă мероприятисене хăçан тумаллисене пĕрле палăртатпăр.

Ял Совечĕн сессийĕсене, исполком ларăвĕсене яланах пуçламăш парторганизаци секретарĕсене чĕнетпĕр, сессипе ларусен решени проекчĕсемпе паллаштаратпăр. Çапла пĕрле ĕçлени, ыйтусене пĕрле шухăшласа татса пани — ял Совечĕн пĕтĕм ĕçне лайăхлатма пулăшать.

Пуçламăш парторганизацисем ял Совет депутачĕсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерессишĕн те тимлĕн тăрăшаççĕ. Ял Совет депутачĕсене пурне те парти вĕренĕвне явăçтарнă. Политшкулсенче, кружоксенче вĕренсе депутатсен политикăллă тавракурăмĕ чылай анлăланчĕ, производствăллă тата политикăллă активлăхĕ ӳсрĕ, вĕсем производствăра ответлăха туйса, пуçаруллă ĕçлеме пуçларĕç. Вĕренӳре илнĕ пĕлĕве вĕсем практикăллă ĕçпе çыхăнтарса пыраççĕ.

Ял Совечĕн секретарĕ В. Васильев юлташ малтан хăй те политшкулта вĕреннĕскер, халĕ ĕнтĕ, хăйĕн пĕлĕвне çулленех ӳстерсе пынă май «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружокăн руководителĕ пулса ĕçлет. 4 коммунист-депутат, иртнĕ çул «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружокран вĕренсе тухнисем, кăçалхи вĕренӳ çулĕнче харпăр хăй тĕллĕн СССР историне вĕренме тытăнчĕç.

Пуçламăш парторганизаци депутатсемпе активистсем валли час-часах тĕрлĕрен темăсемпе политикăллă лекцисемпе докладсем ирттерет, партипе правительство йышăннă постановленисемпе паллаштарать.

Большевиксен партийĕ тата аслă çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешекен совет халăхĕпе пĕрле, ял Совечĕ ялти хуçалăхпа культура строительствинче малашне татах та пысăк çитĕнӳсем тăвĕ.

## ТУПМАЛЛИ


Ял Совечĕн депутачĕсем . . . . . . . . . 7
Ял Совечĕн ĕç планĕ . . . . . . . . . . . 10
Ял Совет исполкомĕ . . . . . . . . . . 17
Ял Совечĕн сессийĕсем . . . . . . . . . . 30
Яланхи комиссисем . . . . . . . . . . 35
Актив — ял Совечĕн тĕрекĕ . . . . . . . . . . . 44
Суйлавçăсен наказĕсем — Советсен кĕрешӳ программи . . 52
Ял Совечĕ — социализмла ăмăрту организаторĕ . . . 58
Ял Совечĕ тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсем . . . 64
Пуçламăш парторганизаци ял Советне ертсе пыни . . 71



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР



Редактор *В. Алендеев.* Техн. ред. *И. Григорьев.*

НТ 01042. Подписано к печати 2 апреля 1952 г. Объем 4,1 п. л.
Учетно-издательских листов 4,13. Бумага 84×108/32.
Тираж 1 000 экз. Заказ № 3552.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата, г. Чебоксары.

Цена 75 коп.

Н. ЦВЕТКОВ

# ОПЫТ РАБОТЫ КУДАШСКОГО СЕЛЬСОВЕТА
(Ядринского района)

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ — 1952